58-219

Василий Ржанов



# СĔМ ВĂРМАНТАН

Василий Ржанов

# СĔМ ВĂРМАНТАН

## (ЭНТИП)

ТĂВАТĂ ПАЙЛĂ, ВУНĂ КАРТИНĂЛЛĂ,
ЭПИЛОГЛĂ ДРАМА

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1958

Чувашской Книжной Палате
7 октября 1958 г.
№ 257

*Çак драмăна Совет влаçĕ 40 çул тултарнă ятпа тăван халăха халаллатăп.*

## ВАСИЛИЙ РЖАНОВ

Василий Тимофеевич Ржанов 1915 çулта Сĕнтĕр районне кĕрекен Вăрманкас Шашкар ялĕнче вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Малтан вăл пуçламăш шкултан, унтан Каршлăхри колхоз çамрăкĕсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Каярахпа ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн «Хресчен хаçачĕ» çумĕнчи журналистсен курсĕнче, Ленинградри Островский ячĕпе хисепленекен театр институчĕ çумĕнчи пĕлĕве хăпартмалли курсра, Мускаври А. М. Горький ячĕпе хисепленекен литература институчĕн заочно пайĕнче вĕреннĕ, çарпа политика шкулне вĕренсе пĕтернĕ.

Василий Ржанов Республикăри «Союзпечать» директорĕ, Чăваш АССР халăх комиссариачĕн Совечĕ çумĕнчи искусство Управленийĕн начальникĕ пулнă. Халĕ — Республикăри халăх пултарулăх Çурчĕн директорĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче паттăрлăхпа хăюллăх кăтартнăшăн Совет правительстви ăна Хĕрлĕ Ялав, «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕсем тата медальсем парса наградăланă. 1942 çултанпа— КПСС членĕ.

Çырма Василий Ржанов çамрăклах пуçланă. Малтан вăл ытларах статьясемпе очерксем, фельетонсем çырнă, каярахпа драмăлла произведенисем çине куçнă. Унăн паллăрах пьесисем: «Куланай», «Ксение вăрлани», «Шурă кăвакарчăн», «Сĕт сăвасси Макар ĕçĕ мар вăл», «Мистер Кент шикленет».

«Сĕм вăрмантан» (Энтип) — Ржанов творчествинчи чи паллă произведени. Ку эпикăлла драмăра автор ĕлĕк вăтам пурнăçпа пурăннă хресченĕн ăс-тăнĕ социализм саманинче мĕнле улшăнса пынине кăтартса панă.

Халĕ Василий Ржанов чăваш халăхĕ Аслă Отечественнăй вăрçа мĕнле хутшăнни çинчен каласа паракан героикăлла драма çырать.

## ДРАМĂРИ ÇЫНСЕМ:

**Киркка Энтипĕ.**
**Анюк**, унăн арăмĕ.
**Сантăр**, **Володя** — вĕсен ывăлĕсем.
**Пинарин Никита Петрович**, Ахмар патĕнче тарçăра ĕçленĕскер, унтан Волисполком председателĕ, каярахпа волком парти тата райком секретарĕ.
**Ульяна.**
**Смолин Андрей Иванович**, путиловец.
**Шарашкин Василий Иванович**, ертсе пыракан работниксенчен пĕри.
**Кокшаев Георгий Михайлович**, хресчен çамрăкĕсен шкулĕн директорĕ.
**Сокол Петтокĕ** (Соколов Петр Сергеевич).
**Наçтук**, унăн арăмĕ.
**Сăпани.**
**Матви.**
**Митрухха.**
**Ахмар.**
**Кашкăр Эрхипĕ.**
(Сокол Петтокĕ — Кашкăр Эрхипĕ: пĕр ял çыннисем.)
**Чишка Павăлĕ** тата унăн ушкăнĕ (**Лариван, Петток** т. ыт. те.).
**Антоша**, Сантăрăн çывăх тусĕ.
**Тоня Петрова.**
**Красногвардеец.**
**Рабочи.**
**1-мĕш чекист.**
**2-мĕш чекист.**
**Мишавай Кирилл Романович**
**Палелев**, ял Совет председателĕ.
**Пунетти.**
**Халăх.** Куштансен ушкăнĕ. Каччăсемпе хĕрсем. Ачасем. Драмăри ĕçсем 1917—1936 çулсенче пулса иртеççĕ.

# ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

## ПĔРРЕМĔШ КАРТИНА

Виçĕ чӳречеллĕ вăтам пӳрт. Алăкран кĕрсен, сулахай енче—пысăк кăмака, чăлан. Сылтăм енче—сарлака сак, ун çине вырăн пуçтарса хунă. Мал енче—лутра сĕтел, пукан. Кĕтесре—турăшсем. Кăмакапа сылтăм стена хушшинче лутра сентре, ун çине тĕрлĕрен япаласем тултарнă.

Кăнтăрла. Вăйлă çил-тăман. Чăланта Анюк апат-çимĕç хатĕрлени курăнать. Энтип, сасартăк алăка уçса пăрахса, пӳрте васкаса кĕрет. Тулта çил шăхăрса ӳлени илтĕнет.

Энтип. Анюк! Илтетĕн-и эс?

Анюк (*чăлантан тухать. Пĕр аллинче çĕçĕ, тепринче—çĕрулми*). Мĕн пулчĕ тата? Алăкне хупсамччĕ, ахаль те пӳрчĕ пăр пек.

Энтип. Э-эх, пĕтрĕ пурнăç! (*Минтерсене тата ытти япаласене ухтарма тытăнать. Кăмака çинчен Сантăрпа Володя пăхса илеççĕ.*)

Анюк (*алăка хупса*). Йĕркеллĕн каласа парасчĕ—мĕн пулчĕ?

Энтип. Укçа! Укçа çухалнă!

Анюк. Ăçта та пулсан хутăн пуль?

Энтип. Лаçри пусма айне хунăччĕ!

Анюк. Шухăшласа та илес çук, укçана пусма айĕнче тытса усраççĕ-и... Апла пулсан минтерсене ма ухтаран?

Энтип (*тарăхса пукан çине кайса ларать*). Ах, лĕпĕртетен вара эс, арăм... Тиркеме çăмăл!

Анюк. Кăна пĕлнĕ пулсан, хăть пĕр курупка шăрпăк туяннă пулсан та усăллă пулнă пулĕччĕ.

Энтип. Шăрпăк! Тупнă кирлĕ япала... Ну, халь мĕн ĕнтĕ? Инкек çине синкек... Аслă ывăлăм вăрçăра пĕтрĕ, хама çаратрĕç... Çулталăк çĕр сывăрмасăр ĕçлерĕм, выçăллă-тутăллă пуранса, пӳрте витме пухнă укçа... (*Сиксе тăрать.*) Ух! Камăн кукăр алли çаклатрĕ-ши? (*Пукана çиллĕн тапса ярать те хăвăрт тухса каять.*)

Анюк. Аптрамалла—ним калама та пĕлместĕп.

Чăлана кĕрсе каять. Çак вăхăтра çенĕкре темскер кĕмсĕртетни, унтан чăх-чĕпсем çуйхашни илтĕнет. Кăмака çинчен Сантăрпа Володя пуçĕсене çĕклесе пăхаççĕ.

Энтип (*кĕрет. Сулахай аллинче хĕрлĕ çунатлă автан*). Мур илесшĕ! Ниепле те парăнасшăн мар—аран тытрăм.

Анюк (*чăлантан*). Кама тытрăн? Вăрри тупăнчĕ-и ара?

Энтип. Тупăнчĕ... Курмастăн-им?

Анюк (*чăлантан тухса*). Ай-уй! Мĕн тума тытрăн ку пуранас автана?

Энтип. Чарăн-ха, чарăн тиркеме! Тархасшăн, чарăн! Эс мана çакна кала: иртнĕ вырсарникун камсем пулчĕç пирĕн патăрта?

Анюк. Кам пулнине ăçтан астуса çитерĕн? Ирпе ирех Ахмар ĕçе чĕнме килнĕччĕ пулас. Унтан Сокол Петтокĕ пăчкă илсе кайрĕ. Çерçи Матвийĕ те кĕрсе тухрĕ.

Энтип. Тата?

Сантăр. Казак Митруххийĕ!

Энтип. А-а-а! Эсир унта-çке... Казак Митруххийĕ, тетĕн?

Сантăр. Анатри Ванюксен ашшĕне Казак Митруххийĕ тесе чĕнеççĕ те...

Энтип. Çапла, тĕрĕс, Сантăр! Унсăр пуçне тата кам пулчĕ?

Сантăр. Тата Кашкăр Эрхипĕ килчĕ... чылайччен ларчĕ. „Ăçта кайнă сирĕн аçу?", тет. „Хăçан таврăнать?", тет.

Энтип. Кайăр, чĕнсе килĕр хăвăртрах.

Сантăр. Кама?

Энтип. Пурне те! Сокол Петтокне, казак Митруххине, Çерçи Матвине, пурне те!

Сантăр. Кашкăр Эрхипне те-и?

Энтип. Ăна та!

Анюк. Ăсран тухмарăн пуль-çке, Энтип? Капла пĕтĕм кӳршĕсене сивĕтсе пĕтерĕн.

Энтип. Арăм, эс хăвăн ĕçне пĕл. Эс, Олатимĕр, мĕн пĕрре те шарламастăн тата?

Володя. Атте, эпĕ нимĕн те пĕлместĕп.

Энтип. Апла пулсан, эсĕ Ахмара чĕнсе килен. Кайăр!

Сантăрпа Володя, пĕрин хыççăн тепри кăмака çинчен сиксе анса, хăвăрт тухса каяççĕ.

Анюк (*чăланалла утса*). Ял кулли! Укçа çухалнă тесе, ним айăпсăр çынсене хускататăн. Шухăшласа пăхасчĕ—мĕн калĕ ялйыш?

Энтип (*Анюк хыççăн чăлана кĕрсе каять*). Ялйыш... Мĕн вăл ялйыш? Ялйыш çинчен шухăшласа, эпĕ йĕмсĕр тăрса юлма пултараймастăп.

Анюк (*чăлантан*). Ай-уй! Чăнах та, ухмаха ертĕн-и? Автанне мĕншĕн хăрăмлатăн?

Энтип (*чăлантан хыпаланса тухать. Пичĕ-куçĕ, аллисем пĕтĕмпех хăрăмпа вараланнă, автанĕ те хуп-хура*). Анюк, ăçта пукан?

Анюк (*чăлантан тухса*). Мĕнле пукан? Пĕри ак куç умĕнчех-çке.

Энтип. Ку мар, леш... Асатте Амакçар виркĕсĕнчен тупса килни...

Анюк. Çенĕкре пулас... Эс, Энтип, ан турткала-ха мана пĕрмай. Кăмака ăшши сӳрĕлсе кайиччен ман çăкăр хывмалла. (*Чăлана таврăнать.*)

Энтип (*çенĕкрен пукан илсе кĕрсе урай варрине лартать. Пуканне чаппанпа витет, унтан, чаппан аркине çĕклесе, автана пукан айне кĕртсе ярать.*) Ну, автанăм, ман пурлăха тĕкĕнекене шуйттан хăратнă пек хăрат!

Анюк (*чăлантан пушă витресем çĕклесе тухать*). Ху çине çаврăнса пăхасчĕ, Энтип... Арçури пек вĕт! (*Шыв ăсма тухса каять.*)

Энтип. Эх, çĕтĕк пурнăç! Хăçан тасалăн-ши пирĕнтен?

Чăлана кĕрсе хăйă çутса тухать, унтан, турăш умне пырса, çурта çутса ярать. Пӳрт умĕнчи ура сассине илтсен, шăппăн тăрать. Хутран-ситрен пуçне тайса сăхсăхса илет.

Матви (*кĕрет*). Ман килес! Сывă-и?

Энтип турăш умĕнче чĕнмесĕр тăни ăна ытларах та тĕлĕнтерчĕ пулас, вăл та пуçне пĕксе тăчĕ. Кăшт тăхта сан Сокол Петтокĕпе Казак Митруххи калаçса кĕчĕç.

Соколов (*вăраххăн çĕлĕкне хывса*). Мĕнле инкек пулнă капла? Кам та пулин вилмен пуль-çке?

Митрухха. Нимĕн те ăнланмастăп... (*Матви патне пырса, шăппăн.*) Эс, Матви, пĕлме кирлĕ, мĕншĕн чĕнтернĕ вăл пире?

Матви. Пĕлместĕп, Митрухха.

Энтип (*сăхсăхса*). Эй, турă!

Пурте пĕр-пĕрин çине тĕлĕнсе пăхаççĕ. Шăп. Ахмарпа Кашкăр Эрхипĕ кăшкăрса калаçса килни илтĕнет.

Ахмар. Кун пек пулма пултараймасть! Ку ирсĕр сăмах кăна. Ĕмĕрхи аттесен йĕркине никам та çĕмĕрме пултараймасть! (*Алăка яр уçса пăрахса, мал енне кайса тăрать.*) Мĕн пулнă, Энтип?

Энтип. Сире эп, Ахмар, власть енчен пулма чĕннĕччĕ...

Эрхип. Ак япала! Сантăр хăнана чĕнессĕ терĕ-çке. Кунта пиллĕх пырать-мĕн.

Анюк кĕвентепе тулли витресем çĕклесе кĕрет, тĕлĕнсе пĕр вăхăтчен чарăнса тăрать, унтан чăлана кĕрсе çухалать.

Энтип (*никам çине çаврăнса пăхмасăр*). Эй, турă, мĕн пуррине эс паракан! Эй, çӳлти аслă атте, мĕн пурне эс çĕнтерекен! Курсамччĕ эс ман инкеке, илтсемччĕ ман кĕллĕме! Чăн та чăн эс кашни кил-çурта пăхса сыхласа тăраканни пулсан, ман пурлăха çаратакана, хĕрт-сурт пулса, ним шеллемесĕр çап! Çапсассăн, тăнран кăлар!

Матви. Энтип! Ку чăтма çук мăшкăл!

Соколов. Тĕлĕнмелле...

Энтип. Тăнран кăларсан, алли-урисене типĕт! Алли-урисене типĕтсен, ĕмĕрлĕхех пăтала!

Митрухха. Хăть çакăнтах выртса вилем,—çын пурлăхне тĕкĕнессĕм çук!

Матви. Вырăнлă сăмах! Шанчăкран тухрăмăр пулсан, халех приçак илме пултаратпăр, Энтип.

Энтип. Апла пулсан, пурне те çак пукан çине çаврăнса пăхма хушатăп. Ку пукана пĕр çĕр çул ĕлĕк

асатте Амакçар виркĕсĕнчен тупса килнĕ. Ялта кам та кам шыçă чирĕпе е асат хуçнипе аптрасан, вĕсем, çак пукан çине ларса, хăйсен чирĕсене пит те хăвăрт тӳрлетнĕ, тет. Е мĕн те пулин çухатсан, е вăр-хурах çаратсан, çак пукан, автан еверлĕ пулса, пит те хăвăрт кăтартса пама пултарнă, тет... Халь кашниех, тур умĕнче приçак илсе, пукан çинчи аçам аркине уçса, автан çуначĕсене ерипен шăлма сĕнетĕп. Кам та кам ман укçана çаратнă, çавăн ирсĕр алли, автан çуначĕсене тĕкĕнсенех, автанĕ авăтса ярĕ. Авăтса ярсан, çав усал çынна турă вилмеллипех çапĕ. Çапсан, тăнран кăларĕ, тăнран кăларсан, ал-урисене типĕтĕ, ал-урисене типĕтсен, ĕмĕрлĕхех пăталĕ! Кам та кам усал вăрра çак путсĕр ĕçе тума пулăшнă, çавăн çурăмĕ шатах хытса ларĕ! Камăн чунĕ таса, çавна кура, автанĕ те авăтмĕ, турри те кăмăллă пулĕ! (*Эрхип çине шăтарас пек пăхать*).

Эрхип. Çитĕ! Çитĕ, Энтип! Ирĕк пар ĕнтĕ халь приçакне илме... Пĕлĕр, Кашкăр Эрхипĕн йăхĕ çине турă нихçан та сурман! (*Анчах та хăй темшĕн турăш умне шиклĕн пырса тăрать. Хăй тĕллĕн.*) Никам та курмарĕ терĕм-çке... Турă сыхлатăрах! (*Сăхсăхса, аллине пукан айне чиксе кăларать, унтан çĕлĕкне тăхăнса, аякка пăрăнса тăрать.*) Куртăр-и? Авăтмарĕ вĕт!

Матви. Тĕрĕслĕхшĕн пултăр! (*Эрхип пек тупа туса, ун çумне кайса тăрать.*)

Соколов. Эх, пурнăçу-масару! Ăçта автанĕ? Шăлас... (*Автан кăрăклатни илтĕнет.*) Чăнах та автан-çке!

Митрухха Соколов аллисем хăрăмпа вараланнине курчĕ те кулса илчĕ. Энтип Митрухха куçĕнчен хытă сăнаса пăхать.

Митрухха. Эп хамăн таса аллăма, Энтип, айăпсăр вараласшăн мар!

Энтип (*пăшăрханса*). Анюк! Ăçта эс? Ĕнтĕ халь сан черет.

Пурте тĕлĕнеççĕ.

Анюк (*чăлантан*). Çылăха пĕлесчĕ, Энтип. Çумри арăмна та шанми пултăн-мĕн. (*Йерет.*)

Митрухха. Каплах пулсан, эпĕ те приçак илмесĕр юлма пултараймастăп... (*Кулса аллине пукан айне*

*чиксе кăларать, унтан Кашкăр Эрхипĕ çумне кайса тăрать.)*

Энтип (*пурне те кусран шăтарас пек пăхса*). Халь ĕнтĕ, кам та кам присак панă, çавсене пурне те аллаписене кăтартма ыйтатăп.

Пурте аллисене кăтартаççĕ. Пурин те аллаписем хăрăмпа вараланнă. Митрухха алли кăна тап-таса. Энтип, ун умне пырса, чылайччен куçран шăтарас пек пăхăть. Ыттисем те Митрухха çине тĕлĕнсе пăхаççĕ.

Энтип. Эс капла мĕн, турă çапманскер! Çын пурлăхне тĕкĕннĕрен автанран хăрарăн пулас?

Митрухха. Хăранăшăн мар, хăрăмланăшăн шăлмарăм, Энтип.

Энтип. Тьфу!

Эрхип (*хăюланса*). Ак мĕнле калаçать вăл! „Хăрăмланăшăн...“ Вăрланăшăн мар-и?

Митрухха. Чим, Эрхип! Санăн пуçу çинче çĕлĕк çунмасть-и? Тем, мăкăрланнă пек...

Эрхип (*çĕлĕкĕнчен хăвăрт ярса тытса*). Чăнах-и?

Митрухха. Ав, куратăн-и, Энтип! Вăрри куç умĕнчех, темелле...

Ахмар. Эй, наян услап! Мĕн эс шӳт туса калаçатăн? Вăрламашкăн, Эрхип сан пек выçă мар.

Митрухха. Выçса вилсен те çын пурлăхне хапсăнас çук. Анчах сан пек виççĕн вуник ятпа пурăнсан, эпĕ выçă лармăттăм. Тăхăр çынна пĕр ят çĕрĕпе тăранса пурăнма çăмăлах мар...

Ахмар. Вăт, эсремет! Ман çĕре туртса илесшĕн мар-и тата эс?

Эрхип. Вăрăпа нумай калаçмаççĕ! Ăна ак çапла ăс параççĕ!.. (*Митруххана тапса ярать, унтан кăкăрĕнчен тытса силлеме пуçлать.*) Пуçна çапса салатиччен, кала хăвăртрах, ăçта кайса чикрĕн укçана?

Ахмар. Хыв сăхманна! Пушă парăр-ха мана!

Анюк (*чăлантан чупса тухса*). Ах, ялйыш! Энтип! Пĕлмесĕр айăпласа çылăха ан кĕрĕрех!

Митрухха. Кĕсъере халь виçĕ пус укçа пулсан та, ман вăрă пулас пулать!

Эрхип. Пыршу-пакартуна кăлариччен кала хăвăртрах...

Матви. Чарăн! Митрухха—тӳрĕ çын.

Э н т и п (*пукан çине тайăлать*). Пĕтерчĕç! Автанĕ те пулăшмарĕ...

С а н т ă р (*чупса кĕрет*). Анне! Пирĕн пата темле салтак килет...

**Пĕр вăхăтлăха пурте чĕнмесĕр тăраççĕ. Володьăпа Пинарин кĕреççĕ. Пинарин кивĕ формăллă салтак тумĕпе, анчах пакунсăр, кокардăсăр. Сулахай ури аманнă пулас—уксахлать, пĕр аллинче туя. Сухалĕ çитĕннĕ. Ахмар Пинарина куçайĕн пăхса илет те айккине кайса тăрать.**

П и н а р и н. Сывă-и, юлташсем! (*Чĕнмеççĕ.*) Мĕн пулнă сире?

Э н т и п. Укçана çаратнă вĕт!

П и н а р и н. Мĕнле укçана?

Э н т и п. Как-так „мĕнле укçана“? Укçа-тăк укçа... Керенкă тени укçа пулмарĕ-и? Миколаевски тата?

А н ю к. Укçа çынна кăшкăртатех ĕнтĕ.

П и н а р и н. Çук, Анюк инке, микула-шакула укçи те, керенкăсем те паянтан малалла нихçан та кăшкăртас çук.

А н ю к. Ара, ку Миккита пулмарĕ-и?

П и н а р и н. Çавă, çавă, Анюк инке... Никита Петрович Пинарин.

А н ю к. Эх, эпир хамăр та Михаляна çапла çаврăнса килессе кĕтнĕччĕ... Пулмарĕ. (*Йĕрет.*)

П и н а р и н. Лăплан, Анюк инке. (*Халăх еннелле çаврăнса.*) Эсир мĕн пуççене усса тăратăр? Хăшпĕрисем мана маннă та пулас...

А х м а р. Таркăн!

П и н а р и н. Çук, йăнăшатăр, Ахмар! Таркăн та мар, тарçă та мар. Эп камне пĕлесех килет пулсан, итле: халь ĕнтĕ эп ирĕк çын, пуринпе те пĕр пекех! Пинарин батрак текех сан куçран пăхмĕ. Хăй пурнăçне хăйне кирлĕ пек йĕркелĕ.

С о к о л о в. Мĕнле каларăн эсĕ, Микита?

М и т р у х х а. Чăн та çапла пулмалла тенине илтнĕччĕ...

Э р х и п. Вăт вăрă те ăна—куç умĕнчех пуçа çĕкле пуçларĕ!

С о к о л о в. Ытлашши калатăн, Эрхип.

П и н а р и н. Айăпсăр çынна айăплама юрамасть. Итле, Энтип, вăл укçасем халь ĕнтĕ ниме юрăхсăр хут таткисем кăна, вĕсемшĕн кулянма кирлĕ мар...

Эрхип. Мĕн? Мĕн?

Ахмар Эрхипе аяккалла сирсе ярать.

Энтип. Мĕн терĕн эс, Миккита? Эс, Миккита, малтан ĕçлесе мĕн те пулин туян, туянсан çухатса пăх, вара мĕнле калаçассине хăвах пĕлĕн.

Эрхип. Унăн халь çĕтĕк шинельсĕр пуçне нимех те çук пулас-ха...

Ахмарпа Эрхип ахăлтатса кулаççĕ.

Пинарин. Апла пулин те, эпĕ хама паян тĕнчери чи телейлĕ çынсенчен пĕри тесе шутлатăп. Ку çĕтĕк шинельпе эпĕ октябрĕн 25-мĕшĕнче Питĕрти рабочисемпе пĕрле буржуйсен Зимний дворецне илнĕ çĕрте пултăм... Керенский правительствине арестленĕ! Керенский хăй тармаллипех тарнă. Халĕ Питĕрте Совет влаçĕ туса хунă. Рабочисемпе хресченсен влаçĕ!

Ахмар. Суятăн, антихрист! Çĕр çинче ĕмĕртенпех пĕр йĕрке пулнă, ăна никам та улăштарма пултараймасть.

Пинарин. „Пулнă...“ Патша та пулнă... Тарçисем те пулнă... Сăмахран, эсĕ пĕччен хĕрĕх теçеттин çĕр акса пурăнатăн. Çав вăхăтрах кӳршӳсем çăкăрсăр лараççĕ. Халь ĕнтĕ ун пек тивĕçсĕр йĕркене Совет влаçĕ тĕппипех пĕтерĕ!

Ахмар. „Совет та совет...“ Тĕнче кулли! Ăçта ку власть? Мĕнле япала вăл? Кам шухăшласа кăларнă ăна?

Пинарин. Çук, ку—шухăшласа кăларнă япала мар, Ахмар. Совет влаçĕ саншăн аça çапнинчен те хăрушăрах-и, тен, пирĕншĕн вăл ăшă хĕвеллĕ кун.

Митрухха. Çаплах пулать-ши?!

Пинарин. Паянтан пуçласа пĕтĕм çĕр ĕçхалăх аллине куçать.

Эрхип. Митруххашăн пурнăç çитрĕ апла... Кĕтсех тăр!

Ахмар. Суять вăл! Мĕн итлесе тăмалли пур ăна?

Энтип. Чим-ха эс, Ахмар!

Анюк. Апла мана та çĕр параççĕ пуль вара?

Пинарин. Сана та, Анюк инке. Питĕрте çапла йышăннă.

Ахмар. Мĕн эс, Питĕрти пăлхавçăсене халăх тессĕн-и? Тăмсай! Раççей пĕр Питĕр кăна мар, Раççей

пысăк... Çĕр çинче ĕмĕртен пĕр влаç пулнă, урăх влаç пулман, пулма та пултараймасть!

Пинарин. Пур!

Ахмар. Пирĕн Упакассинче те-и?

Пинарин. Пирĕн Упакассинче те!

Ахмар. Ав, куратăр-и, суеçĕн суйи тухсах пырать. Мĕнле Совет влаçĕ пултăр-ха кунта? (*Ахăлтатса кулать.*)

Пинарин. Пур! Çак сехетрен пуçласа вырăнти влаçа эпир хамăр алла илетпĕр!

Ахмар. Камсем „эпир"?

Пинарин. Ак, Петр Сергеевич Соколов тата Матви пичче, Димитрий... Димитрий... Мĕнлеччĕ-ха сирĕн хушамат?

Митрухха. Панкрат.

Пинарин. Димитрий Панкратов, Энтип те...

Энтип. Çук, çук! Тархасшăн, мана ку ĕçе ан хутшăнтарăр. Эп нимĕн те пĕлместĕп... (*Чăлана кĕрсе каять.*)

Ахмар. Чим, кам ăна ирĕк панă капла халăх ячĕпе калаçма?

Пинарин. Ленин! Ленин пачĕ пире ирĕк! (*Шинель кĕсйинчен çĕтĕлнĕ листовкăна туртса кăларать.*) Кăна хресченсем патне Ленин çырнă!

Эрхип вăрттăн тухса шăвăнать.

Ахмар. Хуп çăварна! Халăха пăтратма таврăнтăн-и эс? Çыхас! Вулăса ăсатас! Эй, Энтип, пар тилхепе!

Соколов. Ан тив ăна! Ульяна пурнăçне пĕтерни çитмест-им сана? Вула, Микита!

Ахмар. Пăлхавçăсем! Кăтартăпăр-ха эпир сире! (*Çиллессĕн алăка тапса уçать те тухса каять.*)

Пинарин (*хумханса*). Тăвансем... Пĕр пытармасăр калăр, ăçта ман Ульяна? Ăçта?.. Тăвата çул хушши пĕрле Ахмар патĕнче тарçăра ĕçлерĕмĕр... Пĕчĕк те илемлĕ Ульянăна эп йăмăка юратнă пек юратрăм... Чĕре тапма пăрахиччене пулăшма сăмах патăм... Ак халь эпĕ каллех Упакассине таврăнтăм... Ăçта вăл?

Матви, Митрухха, Соколов (*пĕрле*). Кайран, Микита, кайран... Вула!

Пинарин пĕр сăмахсăр листовкине Соколова парать.

Соколов (*Пинарин аллинчен листовкăна илсе*

*таран шухаша каять. Вулать).* Ĕҫчен халăха—пĕтĕм ҫĕр... Ленин...

Энтип (*чăланран тухса*). Юрать, кăна ăнаҫлă тунă, тейĕпĕр. Вара леш тўпери улпут ҫĕрне те валеҫсе парĕҫ-ши?

Пинарин. Ĕненместĕн-им, Энтип?

Энтип (*Матви патне пырса листовкăна хăй аллине илет, чылайччен ăна ҫавăркаласа пăхать. Пĕрер саспаллипе тăсса вулать*). Л-е-н-и-н... Тĕнче капла ҫаврăнать иккен.

ЧАРШАВ

## ИККĔМĔШ КАРТИНА

Декораци ҫавах. Тул ҫутăлса килес умĕн. Шăп. Энтип килйышĕнче пурте ҫывăраҫҫĕ. Сасартăк килхушшинче йытă хаярран вĕрни илтĕнет.

Анюк (*вырăн ҫинчен шиклĕн тăрса лампа ҫутать*). Тур ҫырлахах. Мĕн аташать ку йытă? Ахальтен сасă паракан марччĕ-ҫке... (*Чўрече витĕр пăхса.)* Энтип, тăр-ха, тăр!

Пўрт алăкне шаккани илтĕнет. Йытă е пĕрре лăпланать, е тепре каллех алăк патне вĕрсе ҫывхарать.

Энтип (*ыйхăран вăранса*). Кам унта?

Алăка татах хыттăн шаккаҫҫĕ. Тин ҫеҫ вăраннă Сантăрпа Володя, кăмака ҫинчен сиксе, амăшĕ ҫумне пăчăртанаҫҫĕ.

Сасă (*тул енчен*). Откройте!

Энтип. Шуррисем мар-ши?

Анюк. Вырăс ҫынни пулас...

Энтип. Ăҫта пуртă?

Анюк. Ай, пўлĕхҫĕм! Вырăсла эс чухлаканччĕ-ҫке, ыйтса пĕлесчĕ. Тен, ҫул ҫухатнипе ăнсăртран килсе тухнăскер?

Пўрт алăкĕ татах кисренет.

Анюк. Уҫар пуль, Энтип, тем курăн тата...

Энтип. Уҫ. Кирлĕ пулсан, эп кунтан...

Сак айĕнчен пуртă илсе чăлана кĕрсе тăрать. Сантăрпа Володя сак айне пытанаҫҫĕ. Анюк алăк уҫать. Пўрте хура мăйăхлă, кивелнĕ сăран пиншак тăхăннă кĕрneклĕ, патвар ҫын кĕрет. Хашкать. Вăйран кайнă, ура ҫинче аран-аран тăрать.

Палламан çын (*йĕри-тавра шиклĕн пăхкаласа*). Йăнăшмарăм пулас... Каçарăр, чăрмантартăм сире... Тархасшăн, калăр, ăçта килсе тухрăм? Хуçисем камсем? (*Чĕнмеççĕ.*) Ăçта кил хуçи?

Хирĕç никам та чĕнмест. Ют çын кубанкине хывса йĕпеннĕ питне шăлать, вăйсăррăн сак çинелле тайăнать.

Анюк (*Энтипе*). Мĕн упа пек тăратăн унта? Тухса паллашасчĕ.. Çыннине темле инкек пулнă пулас... (*Ачисене*). Çавăнта, кăмака çинче, çăматă пулма кирлĕ, илсе парăр, тăхăнтăр. Эпĕ сĕт ăшăтам. (*Хăвăрт чăлана кĕрсе каять.*)

Сантăр, сак айĕнчен вăрттăн тухса, кăмака çинчен кивелнĕ пысăк çăматă туртса антарать, йăпшăнса ют çын ури патне пырса лартать, кайран каллех сак айне пытанать. Энтип чăлантан вăраххăн тухать. Пĕр уринче çăматă, тепри—çаруран. Палламан çын çине куçайĕн пăхса чылайччен сăнаса тăрать.

Палламан çын (*сасартăк Энтипе асăрхаса*). Кил хуçи-и?

Энтип чĕнмест.

Вырăсла чухлатăр-и, кил хуçи?

Энтип (*чĕлĕмне тарăхса туртарать*). Çавă.

Палламан çын. Юрать... Паллашар. Смолин. Питĕртен. Рабочисен продотряд начальникĕ...

Энтип чĕнмест.

Сире мĕнле чĕнеççĕ?

Энтип Мĕнле калас... Пĕрисем Киркка Энтипĕ теççĕ, теприсем Киркка тесе те чĕнеççĕ.

Смолин. Киркка? Киркка.. Хушаматăр-и ку сирĕн?

Энтип. Алмаскин.

Смолин (*вăйсăррăн ура çине тăрса*). Ак мĕн, юлташăм... Питех те васкавлă ĕç! Миçе çухрăм пулать кунтан Ильинка?

Энтип (*аяккалла пăрăнса*). Виçсе пăхман.

Смолин. Çапах та?

Энтип. Пĕрисем виççĕ теççĕ, теприсем — виççĕ ытлашшипех теççĕ...

Смолин. Кĕскерех çулпа кайсан?

Энтип. Утма çулпа иккĕрен ытла пулас çук.

Смолин. Лаша пур-и сирĕн?

Энтип. Лаша? Ак тата! Мĕн тăвасшăн ку ман лашапа?

Смолин. Ильинкăри улпутсен çуртне пĕлетĕр-и?.. (*Планшетран блокнот кăларса хăвăрт çырать.*) Çак çырăва ман юлташсене леçсе паратăр. Вĕсем халĕ унта. Лаша çине утланăр та халех вĕçтерĕр!

Энтип вырăнтан тапранасшăн та мар.

Е улпут çуртне пĕлместĕр-им?

Энтип. Пĕлессине ăна пурте пĕлеççĕ-ха... Тем тăвас... Эпĕ, мĕнле калас, пачах тĕттĕм çын... Нимĕн те пĕлместĕп.

Анюк (*чăлантан пĕр чашкă вĕретнĕ сĕт илсе тухать*). Шăнса килнĕскере ăшă сĕт усăллă пулĕ... Чĕнесчĕ, Энтип...

Энтип (*Смолина*). Кхм... Сире ман арăм вĕретнĕ сĕт ĕçтересшĕн. (*Пуçне аяккалла пăрса.*) Ĕçтерех, ĕçтерех сĕтне... Тыррине вăл çавах туртса илет... Курмастăн-им—Питĕртен килнĕ...

Смолин. Спасибо, хозяйка, сĕт ĕçсе тăма вăхăт çук-ха. (*Энтипе.*) Ме, ил, леçсе пар çак запискăна. Тухса кайма вăхăт икĕ минут паратăп. (*Энтип вырăнтан та тапранмасть.*) Ну? Е...

Энтип илтмен пек пулать. Урамран сасартăк йытă вĕрни илтĕнет. Смолин ура çине сиксе тăчĕ, револьверне туртса кăларчĕ.

Анюк. Ай, пулĕхçĕм!

Сантăрпа Володя сак айĕнчен сиксе тухса амăшĕ çумне лăпчăнаççĕ. Энтип хăнк та тумасть, хытса кайса наган çине тĕллесе пăхать. Чылай вăхăт пурте чĕнмесĕр тăраççĕ. Йытă лăпланать.

Смолин (*каллех сак çине вăйсăррăн тайăлчĕ*). Итле, кил хуçи, эсĕ тăшман маррине пăхсах куратăп. Анчах çак вăхăтрах кайса килмесен, маншăн тăшман пулатăн. Кай, вĕçтер!.. (*Пăшалне тĕллесе.*) Пиллĕкчен шутлатăп... Пĕрре... иккĕ... виççĕ...

Анюк. Эх, Энтип, çын еверлĕ пулсамччĕ! Арçури пек тăратăн. Санран вăл таçта кайса килме ыйтать пулас? Усал ан сун—хамăра йывăр пулĕ. Темшĕн ăш вăркать...

Энтип (*тарăхса чаппан тăхăнать*). Ак тамаша! Ăçтан килсе тухрĕ ку çын? Çук, ял вĕçне куçса ларнăранпа телей курни пулмарĕ. (*Смолин панă çырăва*

*çĕлĕк ăшнe хурать, чăлантан пуртине илсе хăвăрт тухса каять.)*

Смолин. Вăт çапла кирлĕ те... Ан хăрăр, хозяйка... (*Револьверне кĕсйине чикет*) Алăкне çаклатăр.

Анюк. Ан çиленсемĕрччĕ ăна, вăл ыйхăран вăранаймарĕ-ха... (*Çăматă çине кăтартса.)* Тăхăнăр, тăхăнăр... Урусем шăнчĕç пулĕ... Сĕтне те ĕçмерĕр... (*Ачисене.*) Аçуна ăсатса ярам-ха. (*Хулăн тутăрпа витĕнсе тухать.*)

Володя. Анне, эс хăвăртрах вара...

Сантăр. Ан кай, анне! Анне...

Иккĕшĕ те кăмака хыçне пытанаççĕ. Урамра лаша тапăртатса кайни илтĕнет.

Смолин. Ĕлкĕрĕ-ши? Ан ултал атăрччĕ кăна... Ухмах! Наганпах хăратмалла марччĕ...

Кăмака хыçĕнчен Сантăрпа Володя шăппăн макăрни илтĕнет.

Ăçта эсир, чĕппĕмсем? Хăрарăр пулас... Ан хăрăр, эп сирĕншĕн ют мар.

(*Сĕтел хушшине ларса хыпаланса çиет.*)

Анюк (*кĕрет*). Сĕчĕ сивĕнсех кайрĕ пуль?

Смолин. Эх, эпĕ çапла çăвар тулли çăкăрпа сĕт çисе ларнине курсан, путиловецсем мĕн калана пулĕччĕç-ши?

Анюк. Ара, ку çăкăрне хĕрхенет тесе шухăшламасть-ши тата? (*Смолин умне çăкăр чĕллисем касакаса хурать.*) Эх, çак чĕлхене пĕлменни çынна питех хуплать-çке...

Сасартăк йытă хаяррăн вĕрсе ярать. Смолин асăрханса ура çине тăрать, пĕр вăхăт ним тапранмасăр тимлĕн итлет, такам алăка систермесĕр туртни илтĕнет.

Алăк тулашĕнчи вăрттăн сасăсем:

Питĕрĕнсе ларнă...
Шакка.

Шаккаççĕ.

Уçăр!
Анюк. Камсем эсир? Мĕнле çынсем?

Смолин. Çапла иккен... Неуштă кайса пĕлтерчĕ? Ан хăрăр, хозяйка... Вĕсем мана йĕрлеççĕ... Сирĕн кăр-

шĕ ялти куштансен ушкăнĕ... Ытлашши тыррине туртса илнĕ хыççăн, вĕсем кĕçĕр ман çывăх юлташа пăр шăтăкне ярса вĕлерчĕç, халь мана вĕлересшĕн... Ан хăрăр, сире вĕсем тĕкĕнес çук...

Анюк. Турă çăлтăрах!

Алăк тулашĕнчи сасă. Мĕн пăшăлтататăр эсир унта? Халех уçнă пултăр!

2-мĕш сасă. Эй, Энтип арăмĕ! Кунта пире кирлĕ çын пытаннă. Уç!

Анюк. Ан шухăшлăр кирлĕ мара. Кунта нимĕнле ют çын та çук...

3-мĕш сасă. Ан суй, пур! Упăшку уçма хушрĕ. Уç!

Смолин. Систернĕ-мĕн, ирсĕр!

Анюк. Турăçăм! Мĕн илтетĕп эпĕ.

1-мĕш сасă. Ĕненместĕн-им? Ну, илсе килĕр-ха ăна кунта... (*Ура сассисем илтĕнеççĕ.*) Энтип! Арăму ĕненесшĕн мар... Хăв кала... Мĕн, чĕлхӳ çыхланчĕ-им? Хăвăртрах!

Энтип сасси. Анюк, уç.

Анюк. Çакăнтах мана аçа çаптăр! Кам эс?

Энтип. Эпĕ, Анюк, эпĕ... Энтип... Кала, тухтăр вăл кунта, çылăха ан кĕртĕр...

2-мĕш сасă. Ну, туйса илтĕн-и кам иккенне?

Анюк. Эх, Энтип, Энтип!..

Ураран ӳкет. Смолин револьвер тытса пĕр тапранмасăр шухăша кайса тăрать.

1-мĕш сасă. Мĕн мĕшĕлтетсе тăратăн, шуйттан хĕрарăмĕ? Уç!

2-мĕш сасă. Уçмасан—алăкне вататпăр!

Энтип сасси. Мĕн хăтланатăр ара? Ан ватăр, питĕрмеллине тин çеç илнĕччĕ...

1-мĕш сасă. Хуп çăварна!

Пăлтăрти сасăсем пĕр вăхăтлăха шăпланаççĕ. Анчах урам енчен пӳрте часах кирпĕч татăкĕ варкăнса кĕрет.

Анюк (*вăйсăррăн*). Ай!

Смолин. Сыхланăр! (*Кăмака хыçнелле кăтартса.*) Ав, унта кайса тăрăр. Эпĕ хамах...

Чӳрече янаххи çумне пырса вăрттăн сăнать. Урамра çынсем хаяррăн шавлани илтĕнет. Кантăк витĕр каллех тепĕр кирпĕч татă-

кĕ вăркăнса кĕрет. Кăмака хыçĕнче Сантăрпа Володя макăрни илтĕнет. Алăка татах силлеççĕ.

Хаяр сасă. Уç! Ӳкĕнмелле ан пултăр!

Малти чӳречерен тахăшĕ сенĕк чикет. Смолин урамалла ик хутчен револьвертен перет.

Сасăсем: А а! Пăшал перет!
— Парăнасшăн мар... Çуртне çунтарса ярас!

Пауза. Шăп.

2-мĕш сасă. Чĕрт вутне!

Сасартăк урам енчен чӳречесене хупласа тĕкĕлесе лартаççĕ. Часах кантăк хуппи хушшинчен вут çути çапать.

Энтип сасси (*чĕрене çуракан сасăпа йĕрсе*). Ачасене хĕрхенсемĕр! Эй, ялйышсем, хута кĕрсемĕрчĕ! Илтетĕр-р-и... (*Сасси пӳлĕнсе ларчĕ.*)

Смолин (*Наганĕпе тĕллесе алăк патне ыткăнчĕ, уçма тăчĕ, анчах ăна тул енчен тĕкĕлесе лартнă-мен*). Эй, çăхансем! Пĕчĕк ачасем маншăн айăплă мар. Уçăр! Эпĕ хамах тухатăп.

Анюк (*кăмака хыçĕнчен тухать*). Эй тур çырлахах! Мĕнле айăп тупрĕç-ши пирĕн çумра? Урнă йытăсем пек хăтланаççĕ... Эх, турă, мĕн туса хутăн эс, Энтип?.. (*Смолина.*) Итле, ырă çыннăм... Тархасшăн, тухса кай... Кай... Сире пула, пире те пĕтерĕç... (*Кăмака хыçнелле кăтартса.*) Хĕрхен вĕсене... Тархасшăн кайăр пирĕн патăртан... Хăвăр çулпа... (*Пӳрт алăкне уçма тăчĕ, анчах тул енчен питĕрсе лартнине туйса, вăйсăррăн тӳнсе кайрĕ.*)

Смолин (*ним тума пĕлмесĕр ăшаланать. Анюкпа ачисене вăйпа чăлана тĕртсе кĕртет, пĕрре кантăк патне, тепре алăк патне чупса пырать, чышкисемпе шаккать*). Уçăр, йĕксĕксем! Уçăр! Тухатăп эп... Парăнатăп! (*Тул енчен хирĕç пĕр сасă та илтĕнмест.*) Уçăр! Ачасен юнне ĕçесшĕн-им, тискер кайăксем!

Пукан тытса мĕнпур вăйпа алăка кĕрĕслеттерет, пуканĕ ванса каять, çавах та алăкĕ уçăлмасть. Татах тепĕр пукан илсе перет, ку та ванса сапаланать! Унтан хăй пыра-пыра тĕкет. Вăйран кайса ураран ӳкет.

Анюк. Халăх! Пулăшсамăр... çунатпăр...

Шăп. Катара пăшал пени илтĕнет.

Урам енчи сасăсем: Сыхланăр!
— Тарăр хăвăртрах! Тарăр! Юланутсем çывхараççĕ...

Çывăхрах пăшал пени илтĕнет.
Смолин майĕпен каллех ура çине тăрать.

Сасăсем: Ан тартăр вĕсене! Хупăрлăр!
— Шыв йăтăр! Вутне сарăлма ан парас мар...
— Юр пăрахăр!

Чӳрече хупписене уçаççĕ. Пӳрте кун çути çапать. Анюк, Сантăр, Володя кантăк умне чупса пыраççĕ. Урамра халăх шавлани илтĕнет. Пӳрте икĕ палламан çын васкаса кĕреççĕ: пĕри красногвардеец формипе, тепри, ватăраххи,—рабочи тумĕпе.

Красногвардеец. Сывă-и, Андрей Иваныч?
Смолин. Эх, тăвансем... (*Юлташĕсене вăйсăррăн ыталать.*)

Анюк, шупăр аркипе куççульне шăлса, урама тухса чупать, хыççăн ачисем те тухса чупаççĕ.

Вутне сӳнтерне-и?
Красногвардеец. Чĕртме çеç ĕлкĕрнĕ. Сӳнтернĕ. Пĕчченех-и? Бескозырька ăçта?
Смолин. Юратнă Бескозырькăна эпир текех курас çук...

Красногвардеецпа рабочи çĕлĕкĕсене хывса пĕр вăхăт чĕнмесĕр тăраççĕ. Урамра халăх шавлани илтĕнет.

Смолин. Мĕнле ĕлкĕртĕр? Ăçтан пĕлтĕр?
Рабочи. Кунти вулăс пуçлăхĕ пулăшрĕ. Тыра лавĕсене аркатнине пĕлсе, вăл çĕр варринчех пирĕн пата Ильинкăна персе çитрĕ, эпир вара сирĕн йĕрпе килтĕмĕр... Кунта...
Красногвардеец. Вĕсенчен виççĕшĕ халĕ пирĕн алăра. Мĕн тума хушатăр, Андрей Иванович?
Смолин. Кашкăра алăран вĕçертсен, кашкăрах пулĕ... Персе пăрахăр! Тăхта-ха, кил хуçине шыраса туп та кунта илсе кил.

Красногвардеец, чыс парса, хăвăрт тухса каять.

(*Рабочие.*) Эсĕ отрядăн пĕр ушкăнĕпе халех леш

яла вĕçтеретĕн. Мĕн тăвассине хăвах пĕлетĕн... Чим, вулăс пуçлăхĕ ăçта?

Рабочи. Кунтах, халăхпа калаçать.

Смолин. Кала, кĕтĕр.

Рабочи (*тухас умĕн Пинаринпа хире-хирĕç пулаççĕ*). Ак вăл хăех... Паллашма пултаратăр, Андрей Иванович.

Смолин (*Пинарина алă парса*). Спасибо çăлнăшăн. Смолин. Здравствуйте!

Пинарин. Пинарин. Здравствуйте.

Смолин. Ку ялта комбед пур-и?

Пинарин. Комбед пур!

Смолин. Пулсан, халех чĕнтерĕр.

Пинарин (*алăкран тухса*). Ачасем! Матви мучине, Митрухха Соколова, Сăпани инкене кĕме калăр-ха. Халех!

Урамра халăх шавлани илтĕнет. Энтипе илсе кĕреççĕ, вăл никам çине те пăхмасть. Ун хыççăн Анюк, Матви, Митрухха, Сăпани, Наçтук кĕреççĕ.

Анюк йĕрет.

Красногвардеец. Аран шыраса тупрăм! Витере ларать. Те хăй хупăнса ларнă, те хăйне хупса лартнă... Çула хупларĕç, тет...

Пинарин. Энтип?!

Смолин. (*Энтипе чылайччен куçран пăхса тăрать.*) Ярăр ăна.

Красногвардеец чыс парса тухса каять. Энтип пуçне усса чăланалла вăраххăн утать, ун хыççăн Анюк кĕрсе каять.

Смолин (*чӳрече янаххи çумне сĕвенсе*). Питĕрте, Мускавра рабочисем осьмушка çăкăрпа пурăнаççĕ. Çак вăхăтра харампырсем миллионшар пăт тырă пытарса спекуляци тăваççĕ, ку çитмест, тата пире çурăмран çĕçĕпе чикесшĕн...

Матви. Чăн сăмахăн суйи çук.

Пинарин. Ку юлташ пирĕн пата Совет правительствин председателĕ Владимир Ильич Ленин хушнипе килнĕ. Пирĕн ăна камăн тырă ытлашши пуррине кăтартса памалла. Ăçта комбед пуçлăхĕ Соколов?

Наçтук. Вăрçа тухса кайрĕ вĕт! Ачисене çаруран тăратса хăварчĕ. Çиме пĕр татăк çăкăрĕ çук.

Пинарин. Помошникне те курмастăп.

С ă п а н и. Ухмах! Ухмах пулмарĕ-и вăл! Кам хушнă ăна? Кутамккине çурăм хыçне ялт çакрĕ те Петток хыççăн нимле хутсăрах тухса утрĕ.

П и н а р и н (*Смолина*). Мĕн тăвас? Комбед пуçлăхĕпе унăн заместителĕ фронта тухса кайнă...

С м о л и н. Пит тĕрĕс тунă, унта вĕсем кирлĕрех... Комбеда эсир халь урăххисене суйлама пултаратăр.

П и н а р и н. Вăхăтлăха влаçа ертсе пыма сире хушас мар-и, Матвей Ильич.

М а т в и. Тупрĕç влаçлăх çын! Влаçпа мар, хам арăмпа, тӳррипе каласан, аран-аран управлять туса пыратăп.

Н а ç т у к. Ан калаçчĕ кирлĕ мара! Ара, эс мĕн, ман упăшкаран япăх-им?

М а т в и. Ак тата! Ирĕк пачĕç тесе, утланса ларасси кăна юлчĕ...

П и н а р и н. Матвей Ильич! Влаçа хăв аллуна илсен, вĕсем сире итлекен пулĕç. Халь пирĕн вăхăта тăсмасăр Ленин хушса янă ĕçе тăвас пулать.

М а т в и. Ленин... Халь ку ята асăнман çын çук темелле. Ленин та Ленин, теççĕ. Мĕнле çын-ши вăл? Пирĕн пек çынах-ши?

Н а ç т у к. Каларĕ! Санпа ман пек пулнă пулсан, вăл пĕтĕм Россея мар, пирĕн Упакассине те тăрантарас çукчĕ...

М а т в и. Чăнах та, ахальтен мар пуль çав вăл ытла та халăх чĕри патне пымалла сăмах калать: „Кам ĕçлемест—вăл çимест".

С ă п а н и. Ленин апла каланă пулсан, мĕншĕн вара ĕçлекенĕсен çиме те çăкăрĕ çук, кам ĕçлемест—унăн сутмалăх та, çĕртмелĕх те пур!

П и н а р и н. Çакна кура Ленин пирĕн пата Питĕртен отряд ярса пачĕ те.

М а т в и. Ман шухăшпа, камăн ытлашши тырă пуррине пĕлес тесе, пуçа çĕмĕрсе ларма та кирлĕ мар. Тапратăпăр, сăмахран, тури урамран...

Смолинпа Пинарин çырса пыраççĕ.

Кунта Сидор Хрыччăн пĕр хăйĕн кăна виçĕ кĕлетрен кая мар тырă купаланса выртать. Ахмар тавращĕсен вара пин пăчĕпех... Иртнĕ кĕçнерникун Ахмар, тырă сутса таврăнсан, укçине кĕрепенкĕпе виçсе мухтаннă теççĕ.

М и т р у х х а. У-у! Ахмарăн хăйĕн пĕр яла тăрантармалăх тупăнать.

Настук. Иртнĕ кун вăл тыррине çĕрĕпех Кашкăр Эрхипĕ патне куçарчĕ.

Сăпани. Хăйĕн пуянлăхĕпех вăл Ульянан çамрăк ĕмĕрне те татрĕ пулас...

Пинарин Смолина тем пăшăрханса калать.

Матви. Юрĕ, халь тырă çинчен калаçăпăр.

Сăпани. Тӳррипе каласан, Чăпăк Иванĕн те ытлашши пулма кирлĕ.

Матви. Калаçатăр кирлĕ мара! Чăпăк пеккисене тĕкĕнсен, Энтип те çакланчĕ вара.

Энтип (*чăланран тухса*). Эккей япала! Пар та пар... Чехсем Тĕрлемесе килсе тапăнсан, вĕсене хăвалаca яччăр тесе, пĕр сăмахсăрах икĕ лав леçсе патăм. Халь тата пар! Эсир хăвăр мана мĕн паратăр? Намăс, лашана таканлама тимĕр татăкки çук... Çук, урăх пĕр пĕрчĕ те памастăп: хам валли çитмесрен хăратăп.

Смолин (*Пинарина*). Энтип Кириллович килĕшессĕн мар пулас?

Пинарин. „Чехсене хăвалаca яма патăм", тет. „Урăх пĕр пĕрчĕ те памастăп", тет.

Смолин (*сĕтел хушшинчен тухса Энтип умне пырса тăрать. Чышка кăтартса*). Куратăр-и çакна?

Энтип пĕр-ик утăм каялла чакать.

Хăратăр-им? Хăрушă? Çапла, тăшмансемшĕн ку чăнах та хăрушă, туссемшĕн пулсан... (*Энтипе аллинчен тытса.*) Ан манăр, Энтип Кирилыч, сирĕн кашни алăрах пилĕкшер пӳрне... Пӳрнисене çакнашкал çирĕп чăмăртасан, вĕсене уйăрма çăмăлах пулмĕ, кирлĕ вăхăтра хăвăра сыхланма та шанчăклă пулĕ... Анчах пĕчченшер пӳрнесене хуçма нимех те мар... (*Чăмăрне çĕклесе.*) Ан хăрăр, кăна эпĕ Колчака кĕтсе илме... Çакăн пек пирĕн пĕрлешсе тăмалла! Унсăрăн пире пĕрерĕн-пĕрерĕн аркатма пултараççĕ. Асра тытăр, чехсем хыççăн Çĕпĕртен адмирал Колчак çĕмĕрттерсе килет... (*Энтипе алă парса, лешĕ тытасшăнах мар.*) Эсир хăвăрăн ытлашши тыррăра Совета панине эпĕ тепĕр сехетрен пĕлесшĕн...

Пинарин. Эпир халь пурте Ахмар патне каятпăр.

Халăх. Ахмартан пуçламалла та!

Анюк (*сасартăк чăлантан тухса Смолин умне*

*пырса тăрать*). Каçарăр пире... Çулу телейлĕ пултăр. Тур пулăштăрах сире, ырă çыннăм!

Смолин сăмахсăр Анюк аллине хыттăн чăмăртать. Пурте тухса каяççĕ.

Энтип (*чылай вăхăт шухăша кайса, тункатта пек, пĕр тапранмасăр тăрать*). Колчак... Ман кил-çуртах килсе кĕрет-ши вăл? Анюк! Çиппе çăкăр татăкки пар-ха...

Анюк. Мĕн тума кирлĕ пулчĕ-ши сана тата çипĕ?

Энтип. Пар, тенĕ!

Анюк çĕлен çиппе çăкăр татăкки илсе парать.

Энтип (*хытса ларнă çăкăр татăкне çĕлен çипĕн пĕр вĕçне çыхать, тепĕр вĕçĕнчен ик пӳрнипе тытса, пукан çине кайса ларать. Шăп. Хăй тĕллĕн*). Чăн та чăн çак усал тăшман ман кил-çуртах килсе кĕрет пулсан, тыррине Совета леçсе памаллах пулать, тет; памаллах пулсан, çак çип хăех вырăнтан хускалса, сулахаялла тапранса каять, тет. Чăн та чăн çак усал тăшман ман кил-çурта килсе кĕмесен, тыррине Совета памалла пулмасть, тет; памалла пулмасан, çипĕ вырăнтан та тапранмасть, тет... Тăшман килет, тет... Килет, тет... Килет, тет... Тыррине памалла пулать, тет... Памалла пулать, тет. Памалла пулать, тет. Килмест, тет... килмест, тет... Усалĕ хăех иртсе каять, тет... Тыррине памалла пулмасть, тет... Памалла пулать, тет!.. Памалла пулмасть, тет!.. Памалла пулать, тет!.. Памалла пулмасть, тет...

Анюк (*чăлантан*). Мĕнле кăтартать, памаллах пулать-ши е памалла пулмасть пек-и?

Энтип. Тьфу! Пăтранать унталла-кунталла, уççăн нимĕн те кăтартса памасть... (*Çиппипе çăкăрне турăшсем умне хурса.*) Анюк! Эпĕ лаша витине кĕрсе ларамха. Ыйтсассăн, „килте çук“, те.

Ч А Р Ш А В

# ИККĔМĔШ ПАЙĔ

## ПĔРРЕМĔШ КАРТИНА

Сарлака чӳречеллĕ çап-çутă вăтам пӳлĕм. Чӳрече умĕнче хĕрлĕ çитсăпа витнĕ лутра сĕтел тата хыçлă пукан, хирĕç—тухса кĕтмелли çӳлĕ те шап-шурă алăк. Стена çинче: „Зам. зав. оргинструкторским отделом облисполкома" текен вывеска çакăнса тăрать. Кунтах: „Не курить! Не сорить! Не плевать!" текен вывескăсем те пур. Юнашар вăрăм ещĕклĕ телефон.

Пĕр вăхăт хушши пӳлĕмре никам та çук-ха, коридорта кăна шавлăн калаçни тата уйрăмах:

— Христа ради ыйтатăп, начальник юлташ, пĕр пĕрчĕ тыră çук...

— Чим, начальник юлташ, кампа та пулин такан çинчен калаçса тулăк тупма пулать-ши кунта?—тенĕ сасăсем илтĕнеççĕ.

Кăшт тăхтасан френч тăхăннă Шарашкин мăнкăмăллăн утса кĕрет те, хут папкине сĕтел çине хурса, хавхаланса пирус чĕртсе ярать.

Шарашкин. Ха-ха-ха! Сывлама та памаççĕ... Ку пит ава-а-н... *(Телефон аврине тытса ăна нумайччен çавăрать).* Станци!.. Станци!.. Тьфу! Станци... Станци-и ку? Мĕн эсир, шăнасем пек, вилсе пĕтмен пулĕçке, унта? Выçă? Сывлăшран çăкăр пĕçерсе парас-и сире? Итле, халех Тутаркас вулăсĕпе çыхăнтарăр мана. Хырăм çинчен кайран калаçăпăр... Алло! Сĕнтĕр! Сĕнтĕр!.. Волисполком председательне Пинарина чĕнĕр телефон патне... Пинари-на, тетĕп! Шупашкартан Шарашкин калаçать... Мĕн, мĕн? Пирĕн пата? Хăçан?.. *(Кулса.)* Шупашкар шур кулачне ытараймасăр кунта тухса килчĕ-и вăл апла? Тĕлĕкре те курмастăр-и? Итле-ха, юлташ, кулач çиесех килет пулсан, халех ялсене кайса, продразверстка шӳчĕпе кĕлетсене татах тепĕр хут

шăлса тухăр... Мĕн? Пинарин хушса хăвармарĕ? Пинаринран аслăраххисем пур, вĕсене итлес пулать, юлташăм...

Алăка шаккаççĕ.

— Çапла, кĕлет пӳлминче пĕр пĕрчĕ юлмиччен...

Алăка шаккаççĕ.

— Кам унта?..

Энтип кĕрет. Çурăм хыçĕнче—пушă хутаç.

Энтип (*çăм шлепкине хывса пуç таять*). Кхм-м...

Шарашкин. Мĕн кирлĕ сире, гражданин?

Энтип. Такан пирки сирĕн пата килмелле пулчĕ, начальник юлташ.

Шарашкин. Мĕн?

Энтип (*тăрсан-тăрсан*). Такан кирлĕччĕ, тетĕп. Икĕ кун хушши хула тăрăх каллĕ-маллĕ утса ывăнтăм, ниçта та тупаймарăм. Ниушлĕ, начальник юлташ, совет влаçĕ пулнăранпа такан та тума пăрахрĕç?

Пауза.
Шарашкин, сĕтел хушшине ларса, пӳрнисемпе шаккама пуçлать, хутран-ситрен урлă-пирлĕ пăхкаласа, шăхăрса та илет.

Эккей, ăçта килсе тухрăм эп... (*Сасартăк тавçăрса илнĕ пек пулса.*) Эй-эй, ку çын такан çинчен илтмен пулас-ха... (*Шлепкине çĕре хурса, ыйтмасăрах пукан çине ларать, ура лаппине çапса кăтартать*). Ак çапла, начальник юлташ, пăрлă çул çинче лаша шуса ан ӳктĕр тесен, унăн ура лаппине таканлас пулать... Таканне тимĕр татăккинчен тăваççĕ...

Шарашкин (*сиксе тăрса*). Эсĕ мĕн?! Çынсем революцие çăлса хăварас пирки пуçа çĕмĕрсе лараççĕ, а эсĕ кунта тимĕр татăккишĕн кансĕрлесе çӳретĕн! Кам эс? Ăçтан?

Энтип шлепкине илсе виç-тăват утăм каялла чакать, ним калама аптраса тăрать.

Хăш ялсем?

Энтип. Упакассисем...

Шарашкин. „Упакассисем?..“ Пăхсах курăнать—Упакассисем! Хушамачĕ?

Энтип. Киркка Энтипĕ.

Шарашкин. Кир-к-ка Энтипĕ, значит? Так, так... Тата мĕн ыйтса пĕлмелли пур?

Энтип (*тинех тăна кĕнĕ пек пулса*). Ыйтмаллисем пур та-ха... Ларсах калаçам-ха. (*Шлепкине ура вĕçне хурса, каллех пукан çине ларать.*) Пурнăç кукри—вуник кукăр, теççĕ. Çавăнса тухма пулать-ши капла? (*Ларсан-ларсан.*) Вăрçă чухне вăрçă, теттĕмĕр. Топерича вăрçи те пĕтрĕ, юлашки тырра шăлса армана ятăм, акмалăх та юлмарĕ...

Шарашкин (*каллех пўрнисемпе сĕтеле шаккама пуçлать*). Так, так...

Энтип. Эсир, начальник юлташ, как никак, çўлте ларакан çын, пĕлме кирлĕ: хăçан ку разверстка пĕтмелле пек? Малашне те кунашкалах пулсан, пыршăпакарта та тухса кайĕ. Мĕнле шухăшлатăр эсир, начальник юлташ?

Шарашкин (*каллех сиксе тăрать*). Эсĕ мĕн, контра што ли? Саботажник? Совет влаçĕ, можно сказать, выçлăха пула, вутра çуннă пек çунать, а эсĕ хăвăн хырăмушăн продразверсткăна отменять тăвасшăн хыпаланса çўретĕн... Не позволим саботажничать тума! Итле, пĕтĕм тĕнчери революци ячĕпе хушатăп: авăртма янă тырруна халех совета леçсе панă пултăр!

Сасă (*алăкран*). Василий Иванович, сире председатель чĕнет.

Шарашкин (*Энтипе алă парса*). Асту, эпĕ шўт тума юратмастăп: памасан—явно нехорошим концом пахнет! (*Сĕтел çинчен хут папкине илсе хăвăрт тухса каять.*)

Энтип. Тур сыхлатăр-ах! (*Майĕпен алăка уçса пăхрĕ те, шлепкине илсе, тухса шăвăнчĕ.*)

Пĕр вăхăт пўлĕмре никам та çук. Кăшт тăхтасан Ахмар кĕрет. Пĕрре пăхсах ăна ниепле те палласа илес çук: çĕтĕк-çатăк кĕрĕкпе, кивĕ çăпатапа, пуçĕ çинче пăру тирĕнчен çĕленĕ, якалса пĕтнĕ çĕлĕк...

Ахмар. Кунтах терĕç-çке-ха... Ак япала! Вăлах пулсан...

Шарашкин (*кĕрет*). Эсĕ мĕн, халь те тухса кайман-и-ха?

Ахмар. Кĕнĕ-кĕменех хăваласа кăларассине кĕтменччĕ эпĕ сирĕнтен, Василий Иванович...

Шарашкин. Ку кам тата? Мĕн кирлĕ сире?

А х м а р. *У-у-у*, эсир, пуҫлăха тухса, хăвăрăннисене те паллайми пулнă-мĕн!..

Ш а р а ш к и н. Каҫарăр... Собственно, мĕне пĕлтерет „хамăрăннисене“ тени?

А х м а р. Пĕлместĕр имĕш!.. Хусанта чăвашсенчен чи малтан кама учредиловкăна тăратма сĕннĕччĕ вара?.. Василь Иванчă Шарашкина марччĕ-и?

Ш а р а ш к и н. Шăппăнтарах, тархасшăн, шăппăнтарах!..

А х м а р (*хĕрсе кайса*). Василь Иванчăшăн кам чи малтан сасăларĕ, унăн ҫемйине пĕр лав кучченеҫ кам леҫсе пачĕ?..

Ш а р а ш к и н (*аллаппипе Ахмарăн ҫăварне хупласа*). Шаппăнтарах, тенĕ сире, Ахмар... Шăппăнтарах!

А х м а р (*Шарашкина алă парса*). Ҫапла ҫав, Василь Иванчă...

Ш а р а ш к и н. Тархасшăн, ларăр. Самана ытлах та капăрлатса янă-ҫке сире... (*Кулать.*)

А х м а р. Тирне сĕвесси кăна юлчĕ ĕнтĕ.

Ш а р а ш к и н. Ах, мĕскĕн-мĕскĕн! Эсир вара, тирне сĕвессине кĕтсе, вилес чĕпĕ пек, пуҫа усса ларатăр-мĕн...

А х м а р. Упакассинче пĕр-пĕччен чĕпĕ пулăн та...

Ш а р а ш к и н. Пĕр-пĕччен апла?.. (*Ура ҫине тăрса, кĕсйинчен шăрпăк курупки туртса кăларать.*) Пĕлетĕр-и, ҫак пĕр шăрпăк мĕн тума пултарать? (*Чар-р тивертет те Ахмар умне пырса тăрать.*)

А х м а р. Апла манăн, шăрпăк чиксе, ялсем тăрăх ҫуртсем ҫунтарма тухса каймалла пуль?

Ш а р а ш к и н (*каҫса кайса кулать*). Эй, айван, айван!.. Ҫурт ҫунтарасси мĕн вăл... (*Шăл витĕр чарт! сурса.*) Ҫакă кăна!

Пауза.

Паян пирĕн ытларах ҫынсен чĕрисене вут хыптарас пулать, Ахмар! На, туртăр...

Иккĕшĕ те пирус тивертеҫҫĕ.

Ак паян сирĕн Упакассинченех Киркка Энтипĕ пушă хутаҫне ҫакса килчĕ. „Пыршă-пакартийĕ тухасси кăна юлчĕ ĕнтĕ“, тет. Пăхсах курăнать, унăн чĕринче вучĕ ялкăшсах тăрать... Ҫулăмпах ҫунтăр тесен, унăн юлашки тыррине продразверстка шучĕпе армантан тыттарса

ямалла кăна. (*Кулса.*) Кун хыççăн вăл, сирĕн пекех: „Сывă пултăр!"—тесе нихçан та кăшкăрмĕ.

Ахмар. Кăшкăрасса вăл кăшкăрмасть-ха... Хирĕçессе те хирĕçесшĕнех мар.

Шарашкин. Хирĕçтерес пулать! Ав, Помъялта иртнĕ каç вуниккĕшне... (*Шĕвĕр пӳрнипе пырне сĕрсе кăтартать.*) Пушнарта та хатĕрленеççĕ... Тен, çĕр выртмалла, Чишка Павăлĕ патне çитсе килетĕн?

Ахмар. Çавна пĕлме килнĕччĕ те эпĕ сирĕн пата...

Шарашкин. Ан манăр, çур çывхарса çитет... Вăрлăх кĕлечĕсем кĕл пулса çилпе вĕçсе сапаланччăр... Кĕлрен тырă шăтас çук.

Телефон шăнкăртатать. Трубкăна тытса.

Итлетĕп... Кăштах тăхтăр-ха... Çук, çук, телефон патĕнчен ниçта та ан кайăр... (*Трубкине çакса.*) Пинарин...

Ахмар. Пинарин?! Манăн кайтарас пулать.

Шарашкин. Сулахай енчи пусмапа анса, килхушши витĕр тухса каятăр... (*Алă парать.*) Ӳлĕмрен систермесĕр килсе çӳрес пулмасть. Чишка патне шăматкун каçпа кайса килетĕн... Кала, ĕçе мĕшĕлтетсе тăвас мар... Тата çакна ан манăр: тен, Пушнарта Пинаринпа куçа-куçăн тĕл пулма тивет—паян Пушнар вулăсне сирĕн Тутаркас вулăсĕпе пĕрлештермелле турĕç. Вулăс пуçлăхĕ пулма каллех Пинарина уйăрса лартнă... Пасар кун, тен, вăл Пушнара пырса та çитĕ... (*Куçĕсене хĕссе.*) Лайăх кĕтсе илмелле пултăр!

Ахмар. Эсир калашле пултăр. (*Тухса каять.*)

Шарашкин (*трубкăна тытса*). Тархасшăн! Кĕтетĕп сире, Пинарин юлташ.

Пĕр-ик минутран Пинарин кĕрет. Ăна хирĕç Шарашкин аллисене сарса утать.

Саламлатăп сире, саламлатăп! Паянтан пуçласа икĕ вулăс масштабĕпе руководить тума пуçлатăр ĕнтĕ... Эсир Пушнарта пулман-и-ха?

Пинарин. Халь çеç пĕлтерчĕç-ха.

Шарашкин. Пушнара сирĕн кайса килмеллех пулать... Пасар кун кайсан усăллăрах пулнă пулĕччĕ... Унта сплошное пьянство пырать, тет... Безобрази!

Пинарин. Йĕркелемелли нумай-ха... Эпĕ сирĕн пата васкавлă ĕçпе, Василий Иванович...

Шарашкин. Итлетĕп.

Пинарин. Сире Мускавран халăха пĕлтерме питех те кирлĕ хыпар ярса панă курăнать?

Шарашкин. Собственно, мĕнле хыпар çинчен калаçатăр эсир, Пинарин юлташ?

Пинарин. Хресченсемшĕн ку питех те савăнăçлă хыпар, Василий Иванович! Владимир Ильич Ленин продразверсткăна налогпа улăштарасси çинчен пĕтĕм халăха пĕлтерме хушнă, тет.

Шарашкин. „Тет"!.. Выла пасарĕнче чăхсене сăваççĕ, тет... Илтнĕ-и эсир кун çинчен?

Пинарин. Çук, ку чăхсене суни мар, Василий Иванович... Ак мана Питĕртен путиловец Александр Иванович Смолин та çырса пĕлтерчĕ. Икĕ эрне каярах вăл Ленин патĕнче пулнă... (*Кĕсйинчен çыру туртса кăларса, Шарашкина кăтартать.*)

Шарашкин (*çырăва вуламасăрах каялла тавăрать*). Ку хут татăкки вара волисполком председателĕшĕн закон пулса тăрать-и?

Пинарин. Эпĕ ăна ĕненетĕп. Ленин урăхла калама пултарайман. Малалла кун пек тытăнса тăма пултараймасть!

Шарашкин. Эсир мĕн, продразверсткăна улăштарса, пролетариата выçă тăратса хăварасшăн-и?!

Пинарин. Ан кӳрентерĕр мана, Василий Иванович! Пĕлесех килет пулсан, эпĕ хам—пролетарий. Пролетарий интересĕшĕн килнĕ те эпĕ кунта.

Шарашкин. Апла пулсан, мĕншĕн-ха эсир хăвăр вулăсра тырă пухма чарса лартнă?

Пинарин. Кĕлечĕсем шăхăра пуçларĕç, Василий Иванович.

Шарашкин. Килĕрен-киле çӳресе, пӳлме тĕпĕсене шăлса тухас пулать.

Пинарин. Çуркунне вара тырă вырăнне мăян акăпăр-и?

Шарашкин. Çу вăл хăй çынна тăрантарать.

Пинарин. Çу хыççăн кĕр килет, кĕр хыççăн—хĕл... Ун чухне кам тăрантарĕ-ши пире?

Шарашкин. Ытларах паянхи кун çинчен шухăшлас пулать, Пинарин юлташ. Ав, хулара çынсем урaран ӳке пуçларĕç..

Пинарин. Çук, Василий Иванович, ура çине тăра-

сах тетпĕр пулсан, ытларах ыранхи кун çинчен шухăшлани усăллăрах пулĕ.

Шарашкин (*пирус тивертсе*). Ну, ну, собственно, мĕн тума хушасшăн-ха эсир пире?

Пинарин (*кĕсйинчен каллех Смолин çырăвне туртса кăларса*). Эх, халех яла кайса хресчене Ленин пек уççăн каласан: „Эсĕ, хуçа, мĕн чухлĕ хăвна тырпул кирлĕ, çавăн чухлĕ туса ил, патшалăха памаллине—патшалăха пар! Сутмаллине — сут",—тесен, унăн чĕри вара çĕнĕрен савăнăçлă тапма пуçлĕччĕ.

Шарашкин. Вот-тăк коммунизм пулчĕ те!.. Ку вăл сирĕн явно мелко-буржуалла, капитализмла хăрушă тенденци, Пинарин юлташ! Тепĕр тĕслĕ каласан, эсир Упакассинчи Киркка Энтипĕпе пĕр урапа çинче чупнине пĕлтерет... Да, да, да! Вăл паян ирпе ирех хăйĕн хырăмĕшĕн продразверсткăна отменять тăвас шухăшпа килсе кĕчĕ... Çынсем выçăпа вилсе выртаççĕ!

Пинарин. Василий Иванович, каçарăр, эсир хăвăр пурнăçăрта тырпул туса курнă-и?

Шарашкин. Эсир мĕн, мана Упакассине суха тума ярасшăн мар-и тата? Суха тума манăн вăхăт çук, эпĕ ертсе пыратăп!

Пинарин. Шел! Сухапуç тытса курнă пулсан, эсир Киркка Энтипĕн ăс-хакăлĕпе шухăшĕсене ăнланнă пулăттăр... Унăн, тен, сахăрпа чей те ĕçсе курас килет, тен, ачисене çитсăран кĕпе те çĕлесе парас килет... Пĕтĕм шанчăкĕ те унăн—тырпул çинче. Çак вăхăтрах эсир унăн кĕлетĕнчен юлашки тыррине пĕр пĕрчĕ юлмиччен шăлса кăларма хушатăр... Кунашкал вăл, пирĕнтен уйрăлса, куштансем енне сулăнмĕ-ши?

Шарашкин. Сулăнать апла? Мĕн тăвăпăр-ха ĕнтĕ вăл çав сулăнка каясран?

Пинарин. Кăштах та пулин хăйĕн ытлашши тырпулне сутма ирĕк парас пулать.

Шарашкин. Мĕн, мĕн?.. Рабочий класс выçăпа халран кайнă вăхăтра Киркка Энтипне суту-илӳ тума ирĕк памалла апла?!.

Пинарин. Шăп çак вăхăтра!

Шарашкин (*сĕтеле чышкипе çапса*). Ку явно контрреволюци! Сутăнчăкла ĕç!

Пинарин. Эсир вара çак йывăр вăхăтра Мускавран вулăссене пĕлтерме ярса панă Ленин директивне

сӗтелте тытса тӑратӑр... Вӑт ку вара чӑн-чӑн контрреволюци!

Алӑка ҫиллӗн уҫса, тухса каять.

Шарашкин. Пинарин!.. Ых, шайттан!.. Неушлӗ пӗлме ӗлкӗрнӗ те вӑл?

ЧАРШАВ

## ИККӖМӖШ КАРТИНА

Пӗрремӗш пайри декораци. Киркка Энтипӗн пӳрчӗ. Володя, „Конная Буденного" ятлӑ юррӑн кӗввине шӑхӑрса, стена ҫумне утлӑ ҫар ӳкерчӗкӗсене ҫыпӑҫтарать.

Антоша (*кантӑк витӗр, урамран*). Володя!
Володя. Мӗн, Антоша?
Антоша. Сантӑр килте-и?
Володя. Учитель патне кайрӗ. Кӗр, эпӗ пӗчченех...

Антоша кӗрет. Ҫӗтӗк ҫӑпатапа. Лӳчӗркеннӗ пысӑк ҫӗлӗкӗ куҫхарши ҫинех анса ларнӑ. Пиншакӗн ӑшӗ йӑтӑнса тухнӑ, вӑрӑм ҫаннисем усӑнса тӑраҫҫӗ.

Куратӑн-и, кавалери! Эх, аттен лаши ҫине утланса вӗҫтересчӗ пӗрре ҫакнашкал!

Антоша. Пирӗн лаши те ҫук, атте те ҫук... (*Куҫ-ҫульне пиншак ҫаннипе шӑлать.*)
Володя. Мӗн пулнӑ сана? Анну чирлесе ӳкмерӗ пулӗ-ҫке?
Антоша. Эпӗ ӗнертенпе пӗртте ҫимен.
Володя. Паранкӑ пашалу ҫиетӗн-и? (*Сӗтел ҫинчен илсе.*) Ҫи, Антоша! Ҫи, ҫи!
Антоша. Кӑна эпӗ килте аннепе пӗрле... (*Пӗр ҫӑвар ҫыртса илет те ыттине кӗсйине чикет.*)

Пахча алӑк сасси илтӗнет.

Володя (*чӳрече патне чупса пырса*). Сантӑр килет! Атя, пӗрре мыскара тӑвас, Антоша! (*Сӗтел айне чӑмса*). Кил кунта! Шӑп!

Иккӗшӗ те сӗтел айне кӗрсе лараҫҫӗ. Сантӑр савӑнӑҫлӑн шӑхӑрса кӗрет. Аллинче ҫӑкӑр чӗлли.

Сантӑр. Володя! Вӑт шельмӑ, алӑка ҫаклатмасӑрах тухса шӑваннӑ!

Куччен ҫне сетел ҫине хурать те, алӑк кукрине кайса, пиншакне хывать. Ҫак вӑхӑтра Володя, сӗтел айӗнчен аллине кӑларса, ҫӑкӑра систермесӗр илет.

Сантăр. Эх, мĕнле ырă çын вăл пирĕн учитель Георгий Михайлович! Пĕр чĕлĕ çăкăр парса ячĕ. Атте Шупашкартан мĕн илсе килет-ши? (*Сасартăк сĕтел çинчен куччинеç сухалнине асăрхаса.*) Неушлĕ каллех ку хура кушак çаклатса кайма ĕлкĕрчĕ? (*Чăланалла.*) Кис, кис, кис!..

Володьăпа Антоша чăтаймасăр кулса яраççĕ.

Ак ăçта вĕсем, хура кушаксем!.. Пар!

Володя (*Антоша çине кăтартса*). Ăна? Валеç виçĕ пая, Сантăр!

Антоша чĕнмест.

Сантăр. Ма виççĕ кăна? Аттене?

Володя. Вăл Шупашкартан хăй илсе килет.

Сантăр. Аннене?

Володя. Армантан таврăнсан, хăй пĕçерет...

Сантăр. Ну, апла пулсан, çаврăнса тăр...

Володьăпа Антоша тӳртĕн çаврăнса тăраççĕ. Сантăр, çăкăр чĕллине пилĕк пая пайласа, иккĕшне вăрттăн сĕтеле хурать.

Володя. Эй, Сантăр, эс унта мĕн тăватăн? Асту!

Сантăр. Çук, çук... Халех! (*Виççĕшĕнчен пĕр татăкне алла илсе.*) Ну, Володя, кала: ку кама?

Володя. Антошăна!

Сантăр. На, тыт, Антоша!

Антоша. Ай, çăкăр!

Сантăр. Ку кама?

Володя. Мана! Юлашки – санăн.

Пурте, сак çине юнашар ларса, пĕр вăхăт ним шарламасăр çиеççĕ.

Антоша. Ай тутлă!

Сантăр. Ыран шкула пыратăн-и?

Антоша. Пыратăп.

Анюк кĕрет. Аллинче пушă михĕ. Ачасем, çăварти çăкăра хăвăрт çăтса ярса, сиксе тăраççĕ. Антоша тухса вĕçтерет.

Сантăр. Анне!..

Володя. Анне, армантан çăнăхне илсе килмерĕн-им? Икерчĕ çиес килет...

Анюк. Аçу пӳрте кĕмерĕ-им?

Сантăрпа Володя (*пĕр харăс*). Килнĕ-и вăл, анне?

Анюк. Уй хапхинчен килсе кӗнине Митрухха курнӑ... Чупӑр, вут-шанкӑ пухса кӗрӗр: аҫу килнӗ ҫӗре хӑть нимӗр пӗҫерӗпӗр. (*Пуш миххине сак айне пӑрахать.*)

Сантӑр. Ак атте ҫитрӗ те!

Вӑраххӑн Энтип кӗрет, самаях ывӑннӑ. Ҫурӑмӗ хыҫӗнче пушӑ хутаҫ. Кӑмалсӑр.

Володя (*Сантӑрпа савӑнӑҫлӑн ашшӗ ҫурӑмӗ хыҫӗнчи хутаҫа хыпашласа*). Кунта мӗн, атте?

Сантӑр. Эх, нимӗн те ҫук...

Володя. Пуш-пушах!

Энтип (*хутаҫне хывса сакайне пӑрахать*). Пушӑ ҫав, пушӑ... Шӑрпӑк та тупаймӑн!

Анюк (*ачисене*). Кайӑр, вут-шанкӑ пухса килӗр, тенӗ сире... (*Чӑлана кӗрсе каять.*)

Сантӑрпа Володя тӑхӑннӑ-тӑхӑнманах тухса чупаҫҫӗ. Энтип тумтирне хывса пукан ҫине кайса ларать. Чӗлӗм тивертет.

Анюк (*чӑлантан*). Ҫуранах таврӑнтӑн-и? (*Энтип чӗнмест.*) Ҫул хыҫҫӑн кӑштах ҫыртатӑн пуль, Энтип?

Энтип. Хырӑмӗ вӑл ниҫта та тармӗ...

Анюк. Тен, выртса канатӑн?

Энтип. Ан ҫулӑх-ха, пар сывлӑш ҫавӑрма.

Пауза.

Энтип (*чӗлӗмне ҫиллӗн шаккаса, тепӗр хут тултарать*). Пурнӑҫ-ҫ... Лаша пур—такан тӗнчипе те ҫук иккен. Юлашкинчен тарӑхнипе пуҫлӑхсен ҫуртнех кӗрсе калаҫас-ха, терӗм... „Халӗ ӗнтӗ хамӑрӑн автономи, правительстви те хамӑрӑнах“, тетӗп...

Анюк. Усси пулчӗ-и вара?

Энтип. Кӗтсех тӑр!.. Ура ярса пусрӑм ҫеҫ, пӗр шӗвӗр сӑмсаллӑскер—Шараҫкин текенскер—курак пек карӑклатрӗ... „Эсӗ, терӗ, мӗн терӗ, контра штоль? Саботажник мар-и эс?“ тесе вӗте пуҫларӗ хайхи. Ку мана тӗрменех хупса лартма хушӗ-и-ха тесе, анкӑ-минкӗ пулса тӑраттӑм. Юрать ҫак вӑхӑтра ӑна асли хӑйӗн патне чӗнсе илчӗ—вара эп тухса шӑвӑнтӑм. (*Ларсан-ларсан.*) Тьфу! Пулаҫҫӗ иккен тӗнчере ытлашши пуҫ пулса хӑйсене пысӑка хуракансем!

Анюк. Эх, ят ярса ҫӳретӗн ҫав. Ара сан ӗҫ-и вӑл?

Энтип (*сиксе тӑрса*). Хӑш енчен вӑл ман ӗҫ мар?

Разверстка шучĕпе мĕн чухлĕ тырă патăм! Мана вĕсем мĕн пачĕç? (*Сакайĕнчен пушă хутаç туртса кăларать те тавăрса, силлесе кăтартать.*) Ак, куратăн-и, мĕн тĕрлĕ тавар кăна илсе килмерĕм! Пăта... Супăнь... Тăвар... Краççын... Такан... Урапа маçĕ!

Анюк. Çук тесе, чĕррĕн çĕре кĕрсе выртас-им? Вăхăт çитсен пулĕ.

Энтип. Пулĕ... Ак, армантан юлашки тырра та çаклатса кайĕç... Шараçкин темле кукăр-макăр сăмах びкаларĕ.

Таçта кайма шухăш тытрĕ пулас: пиншак тăхăнать.
Сантăрпа Володя вут-шанкă çĕклесе кĕреççĕ.

Анюк. Энтип, лăпланса ларсамччĕ! Апат пĕçериччен мĕн те пулин çыртатăн пуль? Володя, çавăнта аçуна валли паранкă пашалăвĕ хăварнăччĕ, илсе тух-ха!

Володя. Анне... Эпĕ...

Анюк. Çисе ятăн-им?

Володя. Эпĕ хам çимен, анне, Антошăна парса ятăм...

Энтип. Тыррине халь те авăртман-и?

Анюк (*калас сăмаха пытарса*). Пулĕ-ха, Энтип... Пулĕ... Нимĕр пĕçерем-ха.

Энтип. Мĕн „пулĕ-ха"? Эс мана пĕр пытармасăр кала!

Сантăр (*ашшĕпе амăшĕ пăшăрханнине асăрхаса, сĕтелтен икĕ татăк çăкăр туртса кăларать*). Анне, ак сире, аттепе иксĕре—кучченеç... Нимĕр пиçиччен тăварпа пуçса çи, атте...

Энтип (*хускалнă кăмăлпа*). Камран ку, ывăлăм?

Сантăр. Пирĕн учительтен... Георгий Михайлович Кокшаевран! Вăл мана пĕр чĕлĕ касса парса ячĕ. Эпир ăна шăпа тăрах пилек пая пайларăмăр...

Володя (*тин çеç ăнланса илсе*). Ку сана, анне!

Анюк. Эх, пĕчĕкçĕ çеç путене, путене... Нумай пулать-и çакнашкал юрласа сана сăпкара сиктерни!

Сантăр. Атте, ку сана...

Энтип аслă ывăлне пĕр сăмахсăрах ыталарĕ, пиншакне хывса çакрĕ.
Сантăрпа Володя урама тухса чупаççĕ.

Ахмар (*кĕрет. Хура кĕрĕкпе*). Таврăннă-çке! Ну, каласа патăн-и, Анюк, мĕн хăтланаççĕ коммунистсем?

Анюк. Ахмар, тархасшăн кирлĕ мара каласа ан хуçăр ун чунне... Ахаль те унăн ăшĕ вăркать... (*Чăлана кĕрсе, вут хутса ярать.*)

Ахмар (*Энтип умне пырса тăрать*). Раз-вер-ст-ка! Ют патшалăха яма пухаççĕ тыррине... Çитет! Юлашкине пĕтĕмпех тартас пулать.

Энтип. Ман пытармалăх та, тартмалăх та çук.

Ахмар. Пинаринпа Соколовсене итлеме юрамасть, Энтип. Ав, мĕнле вĕсем...

Анюк (*сăмаха хыттăн пÿлсе*). Ах, Ахмар!.. Каларăм-çке эп сире...

Ахмар. Пĕтереççĕ вĕсем пире!

Энтип (*пăшăрханса*). Тем тумалла, тем тумалла... Влаçĕ те хамрăнах пек...

Ахмар. Эккей, влаçне... ăна никам та хурламасть-ха. Совет влаçĕ халăхшăн темиçе хут лайăх пулнă пулĕччĕ... Разверстка та тахçанах пĕтнĕ пулĕччĕ...

Энтип. Мĕнле майпа?

Ахмар. Коммунистсемсĕр!

Энтип. Чим, Ахмар, эс мĕнле каларăн çак? Ăнлансах çитерейменĕм, тепĕр хут кала-ха.

Ахмар. Мĕн унта ăнланмалла марри пур! Совет влаçĕ коммунистсемсĕр пулсан, пурнăç пĕтĕмпех урăхла пулмалла... Çакă кăна!

Энтип (*хăй ăссĕн*). Совет влаçĕ—коммунистсемсĕр... Коммунисĕсем ăçта каяççĕ вара?

Ахмар. Каймаççĕ çав, кăларас пулать вĕсене!

Энтип (*ларсан-ларсан, каллех хăй ăссĕн*). „Совет влаçĕ коммунистсемсĕр...“ Мĕнле коммунистсемсĕр?

Ахмар. Эккей, пĕлмен пек калаçатăн! Коммунистсем вĕсем Пинарин, Смолин, Соколов пек большевиксем ĕнтĕ...

Энтип (*хăй ассĕн*). Большевиксем — коммунистсем... коммунистсем—большевиксем... Ленин та коммунист, вăлах большевик та, теççĕ... Чим, капла Совет влаçĕ Ленинсăр тени пулмасть-и ку?

Ахмар (*тарăхса*). Большевиксемсĕр, терĕм-çке эп сана! Больше-вик-сем-сĕр!

Энтип (*ларсан-ларсан*). Тем, çыпăçман сăмах пек туйăнать ку. Пĕр енчен, Ленин пире çĕр те валеçсе пачĕ, Колчакран та хăтарчĕ... Сана итлесен, вăл совета юрăхсăр çын пулнă пек тухса тăрать...

Ахмар (*çиллĕн сиксе тăрса*). Шупашкартан эсĕ коммунистсен ретне кĕрсе килмерĕн пуль-çке?

Энтип. Кĕртрĕç... Шараçкин пек çын тĕлне пулсан, часах коммунист пулăн...

Ахмар (*кулса ярать*). Шараçкин мар, Шарашкин Василь Иванович вăл! Ун пек çутă пуç тĕнчере сахал халь.

Энтип. Çутă пуç тетĕн? Тем, çутти пĕртте курăнмарĕ мана.

Ахмар. Çăлтăр та кăнтăрла курăнмасть, анчах çĕрле йăлтăртатса кăна тăрать... Вăл—пирĕн çын, Энтип.

Энтип. Кам вăл? Мĕнле çын?

Ахмар. Хресчен пурнăçне çăмăллатасшăн тăрăшать вăл...

Энтип. Мĕнле майпа?

Ахмар. Коммунистсене советран хăваласа кăларса!

Энтип (*тарăхса*). Ăна хăйне хăваласа кăларччăр-ах! Ленина тĕкĕнме кирлĕ мар.

Ахмар (*алăк патнелле çиленсе утать, унтан каллех Энтип умне пырса тăрать*). Выçса вилмелле ан пултăр! Анюк санран пытарать пулас-ха... Ав, Пинарисем сан юлашки тырруна паян армантан тыттарса ячĕç...

Энтип. Ы-ы-х! (*Сак çине тайăлать.*)

Анюк. Эх, Ахмар!.. Мĕн тума кирлĕ пулчĕ сире çак вăхăтрах каласа кăтартма?

Ахмар. Шăтăка кайса чикиччен шухăшлакаласа пăх, Энтип: хăш çулпа кайсан кун-çул вăрăмрах пулĕ... (*Тухса каяс умĕн каллех çаврăнать.*) Шухăшласа пăх—каçчен вăхăт пур. (*Мăнкăмăллăн тухса каять.*)

Анюк. Çын шăтăкне алтиччен, малтан хăвăнне алтмалла пултăрах!

Энтип (*пуçне çĕклесе*). Чим-ха, Анюк... Ахмар! Тăхта...

Анюк. Мĕн тума кирлĕ вăл сана, Энтип?

Энтип. Чарăн! Ма килсенех каламарăн эс мана?

Анюк. Ах, Энтип... Хамăн та чун кӳренчĕ-çке, санне вăхăтсăр ыраттарас темерĕм... (*Пушă михĕ тĕпĕнчен хут укçасем кăларса Энтипе парать.*) Ак, уншăн укça парса хăварчĕç.

Энтип. Мĕне юрăхлă пулччăр ĕнтĕ ку капăрлатнă хутсем? (*Сапаласа çĕре ывăтать. Кайма хатĕрленет.*)

Анюк. Лăпланса ларсамччĕ, Энтип!

Энтип. Ан ӳкĕтле эс мана, Анюк! (*Кăкăрне çапса.*) Пĕлесчĕ, çунса тухать кунта... (*Тухса кайма тăрать.*)

Анюк (*Энтип умне тăрса*). Ăçта каясшăн эс? Энтип! Лăплан...

Энтип. Ан тытса тăр мана! Сирĕл! Эсĕ те...

Çиллĕн тĕксе ярать. Анюк урай варрине кайса ӳкет, питне аллаппипе хупласа шăппăн йĕрсе юлать. Энтип тухса каять.

ЧАРШАВ

## ВИÇÇĔМĔШ КАРТИНА

Пушнар ялĕнчи Чишка Павăлĕн сарлака чӳречеллĕ пӳрчĕ. Малти кĕтесре пысăк турăш, ун умĕнче лампадка çакăнса тăрать. Сулахайра—пӳрте кĕмелли алăк. Сылтăм енче — уйрăм пӳлĕме илсе пыракан тепĕр алăк.

Ульяна тĕпсакайĕнчен пысăк йывăр михĕ кăларать.

Чишка (*алăкне уçса, унăн хăлăпĕнчен тытса тăрать*). Тăхта-ха, арăм! Кала кĕрĕве, тепĕр сехетрен ман патăма килтĕр... Кай, лĕркесе ан тăр! Ирпе хамах илме пырăп... (*Алăка хупса.*) Хăçан куçарса пĕтеретĕн?.. Мĕн, эс хăлхасăр-и, Улька?

Ульяна. Ăçта пушатас? Сарайри шăтăк лăках тулчĕ.

Чишка. Тата миçе михĕ юлчĕ?

Ульяна. Тĕпсакайĕнчи—юлашки... Пахчари кĕлетре тата вунă-вунпилĕк михĕ пулать...

Чишка. Çурçĕр иртсен вĕсене картари улăм айне çĕкле. Ку миххине шăтăках вырнаçтар. Кĕлетри михĕсене йăтса пĕтерсен, кӳрше улах ларма кай. Кăвак çутăпа лашасене шăварма ан ман! Илтрĕн-и? (*Шур сăхман тăхăнса тухса каять.*)

Ульяна (*питне аллипе хупласа, михĕ çине тайăлчĕ, чылайччен шухăша кайса ларчĕ*). Эх, аттеçĕманнеçĕм! Çут тĕнчери мăшкăла тӳсме кăна çуратрăрмĕн эсир мана... Ачаранпах тарçа кăларса, мăйăм çине хурлăх чулĕ çакса хăвартăр... (*Пауза.*) Ахмар... Кунтан усал хуçа тĕнчере çук пулĕ тенĕччĕ... Йытă выранне хурса, кунĕн-çĕрĕн ĕçпе асаплантарчĕ, юлашкинчен мăшкăллама тăчĕ. Чăтса пурăнаймарăм, ылханса тухса тартăм. Ăçта та пулин тĕнчере чăнлăх пулĕ-çке, тенĕ-

ччĕ... Анчах Чишка Павăлĕ маншăн Ахмарпа пĕр пекех пулчĕ иккен. (*Пауза.*) Миккита... Миккита... эс кăна ман çамрăк чĕрене йăпататтăнччĕ... Пĕчĕклех хамăр хурлăха пĕтерме шухăшлаттăнччĕ... (*Йĕрет.*) Анчах эсĕ те, инçе кайса, ĕмĕрлĕхех çухалтăн пулас... Пурăнатăнах пулсан, аса килет-ши сана хăвăн мĕскĕн Ульяну?

Чишка (*кĕрет*). Мĕн мĕшлетсе ларатăн? Каçĕ тĕттĕмленчĕ, кайса çĕкле! Асту, улăмне çиелтен йĕркеллĕ витсе хăвар! Хăш енчен чикмеллине эп унта паллă турăм. Кайса ĕçле!

Пысăк çăраççипе уçă илсе тухса кайрĕ.

Ульяна (*чÿрече патне утса пычĕ, шăнса ларнă кĕленчене вĕрсе ирĕлтерме пуçларĕ*). Пĕлесчĕ, мĕн тăвасшăн-ши кусем? Урама тухса кĕрÿшне кĕтсе илчĕ... Арăмне кĕрĕвĕ патне ăсатрĕ... Мана, тырă куçарттарса, кÿрше хăвалать... Улах ларма нихçан та яракан марччĕ-çке... Ах, мĕнле усал шухăшпа пухăнаççĕ-ши? (*Пĕр вăхăт шухăшласа тăнă хыççăн, миххине тĕпсакайне каялла пăрахрĕ, унтан чупса пырса каллех кантăкран пăхрĕ.*) Тата кама кĕтет-ши? (*Тĕпсакай хĕррине пырса.*) Сиссессĕн? Пурпĕрех! (*Ульяна тĕпсакайне анать, хăй хыççăн алăкне хупать.*)

Кăшт тăхтасан Чишка Павăлĕпе Петток тата Лариван кĕреççĕ.

Лариван. Никам та çук-и?

Чишка. Пурне те ăсатрăм.

Петток. Тăлăхĕ ăçта?

Чишка. Тырă куçарать!

Лариван. Ĕçне пĕтерсен пÿрте кĕмĕ-ши?

Чишка. Çук, çук, ăна та кайма хушнă.

Петток. Çаклат алăкне, хуньăм.

Чишка (*алăкне çаклатса*). Лампа çутас мар-и?

Лариван. Çутмасан, Ахмар каялла çаврăнса каймĕ-ши?

Петток. Карма çăвар! Ятпа чĕнес мар теменччĕ-и?

Лариван. Мансах кайнă... Лампине çутмасан та, çуртине çутатăнах пуль, Павăл?

Чишка, çурта çутса, пур кукăра та пăхса çаврăнать. Урамра çуна сасси илтĕнет. Кантăка шаккаççĕ.

Чишка. Кам унта?

Сасă. Çывăрма кĕртместĕр-ши?
Чишка. Хăш ялсем пулатăр?
Сасă. Виръялсем..
Лариван. Ахмар! Ахмар!
Чишка. Апла пулсан кĕртес...

Алăк уçать. Ахмарпа Энтип кĕреççĕ. Ахмар хура тăлăп тăхăннă. Энтип—киве чаппан.

Ахмар. Эпĕ сан патăнта никам та çук пуль тесе...
Чишка. Хамăрăннисем, хамăрăннисем... Ку—Лариван пулать, ку ман кĕрÿ—Петток. Эсир те пĕччен мар-çке?
Ахмар. Энтип... Киркка Энтипĕ! Ăна та пирешкелех выçă тăратса хăварчĕç...
Чишка (*Ахмара тăлăп хывма пулăшса*). А-а, Энтип! Илтнĕ, илтнĕ сирĕн çинчен... Леш Питĕрти вырăс-и-ха сире вĕлерме тăнă тет? Çапла пĕрле пухăнсан кăтартатпăр-ха эпир вĕсене! Хывăнăр, хывăнăр.
Энтип. Кăштах ăшăнам-ха... (*Кукăра кайса ларать.*)
Чишка. Йĕрĕ çине ÿкмерĕç пуль те?
Ахмар. Эй, каларĕ! Халь кам кама астуса çитерĕ? Самани пирĕн еннелле çаврăна пуçларĕ! Помъял тавращĕнчи ялсенче вуниккĕшне... (*Шĕвĕр пÿрнипе пырне сĕрсе кăтартать.*)
Лариван. Тыррине пухма чарнă-и?
Петток. Шăппăнтарах калаçар...
Ахмар. Хăшпĕр çĕрте, кĕлетсене çĕмĕрсе, тыррине каялла салатнă.
Чишка. Мĕн каласа ячĕ пирĕн Василь...
Ахмар. Ятпа чĕнес мар... Коммунистсен влаçĕ çак çул пăчлантăр тесен, акма пухнă тырра пур çĕрте вут тĕртсе çунтарса ямалла, терĕ.

Энтип шарт сикет, анчах çавăнтах чĕлĕм тивертсе ярать.

Сирĕн ĕçсем мĕнле пыраççĕ?.
Лариван. Ку таранччен хирĕçкелерĕмĕр... Ыран пирĕн Пушнарта та тыррине хывма пуçлаççĕ.
Ахмар. Илтетĕн и, Энтип?
Петток. Хăшпĕр коммун майлисем паян кунĕпех кĕлетсем хатĕрлерĕç.
Чишка. Çине тăрсах тăрмашаççĕ эсреметсем.

**А х м а р.** Астăвăр, ыран кунта вулăс правленийĕн çĕнĕ пуçлăхĕ килсе çитмелле.

**Л а р и в а н** (*сиксе тăрса чышкипе сĕтеле шаплаттарать*). Ман шутпа, малтан вулăс правлени çуртне çунтарса ямалла!

Энтип татах шарт сикет.

**А х м а р** (*асăрхаса*). Мĕн эс унта, Энтип, хăравçă мулкачă пек сиккелетĕн?

**Э н т и п** (*шараварĕ çине сурса*). Тьфу! Тьфу! Эккей, ку чĕлĕме... Чутах вут хыптарса илетчĕ...

**А х м а р.** Тырă, тырă кĕлечĕсенчен пуçламалла! (*Энтип çине пăхса*.) Коммунистсем халăха выçă хăварчĕç... Выçă ларакансене пурне те хамăр майлă çавăрас пулать. Выçă йытă хытăрах çыртакан...

**Л а р и в а н.** Тырă кĕлечĕсенчен пулсан, тата çăмăлтарах. Унта халь хурал тăратма та ĕлкĕреймен пулас-ха.

**Ч и ш к а.** Юрать, ку сан шухăш, ĕçне тума санах хушăпăр!

**Л а р и в а н.** Хăть халех!

Урамра шăнкăрав сасси илтĕнет.

**П е т т о к.** Ытла хыт калаçатпăр...

**А х м а р.** Çунтарни сахал! Помъялти пек хăшпĕрисене тĕппипех пĕтерес пулать!

**Ч и ш к а.** Ăна асрах тытатпăр-ха.

**Л а р и в а н.** Коммун майлисене!

**Ч и ш к а.** Вулăс пуçлăхне! Вăл никамран малтан пирĕн ĕçе пăсма пултарать.

**А х м а р.** Коммунистсем влаç пулса ларнăран халăх асапланать... Хусанта тата ытти уездсенче вăл антихристсене пĕтерсе законлă власть туса хунă темелле...

**П е т т о к.** Чăнах та пулĕ. Килтен киле пуçтарса çӳрекен манашка каланă тăрăх, Çĕпĕрте, Украинăра, Тамбов кĕпĕрнинче те пирĕннисем пăлхавсем пуçласа янă...

**А х м а р.** Тĕрĕс.

**Ч и ш к а.** Турă пулăштăрах!

**А х м а р.** Ыран пачăшкă кĕлтунă вăхăтра турă шывне илме пухăннă халăха, курман çĕрген чиркӳ çинелле пăшалсем персе, пăлхатса ямалла.

**Л а р и в а н.** Пăшалсем пур та, патронĕсем...

**А х м а р.** Кантура çĕмĕрсе пăшалĕсене тытса илес

пулать. Пăрăнса юлаканĕсене, влаçа хамăр алла илсен, çĕр памастпăр тесе, малтанах çирĕппĕн пĕлтермелле. Астăвăр, хамăр çине тăрсан, пире леш енчен те пулăшу пама хатĕр тенĕ сасă пур.

Чишка. Турă пулăштăрах! Халăхĕ те пирĕн, коммунсем хыççăн кайса, чиркӳне те...

Ахмар. Килĕрен çӳремелле!

Лариван. Леш середняк текеннисемпе аптрамалла, калаçма тем тĕрлĕ те калаçакансем пур, хăйсем вырăнтан та тапранасшăн мар.

Ахмар. Пустуй сăмах! Ак, куратăр-и, Энтип те чăтаймасăр манпа пĕрле инçе çула тухса килчĕ... Эсир? Халăх нушине лайăхрах туяс пулать... Ав ĕнер унăн юлашки тыррине çаклатса кайрĕç...

Чишка. Ай, хăтланаççĕ!

Ахмар. Ыран чиркĕве пухăннă халăх умĕнче Энтип кун çинчен сăмах тухса калать, эпир ăна тыррине каялла туртса илме пулăшăпăр. (*Куçĕсене хĕссе.*) Çапла-и?

Чишка, Лариван, Петток (*пĕр харăс*). Çапла, пулмасăр ара! Пĕрле тумалла ку ĕçе.

Ахмар. Хамăрăннисене систернĕ-и эсир?

Лариванпа Петток. Систернĕ, систернĕ!

Чишка. Ют ялтисене сенĕксемпе, пуртăсемпе килме хушнă.

Ахмар. Ну, Энтип, чăтасси нумаях юлмарĕ... Мĕнле шухăшлатăр ыранхи сăмах пирки?

Ульяна тĕпсакай алăкне кăштах уçса пăхрĕ.

Петток. Чим, кам та пулин итлемест-и пире? Пӳртре темĕнле сасă илтĕннĕ пек туйăнчĕ.

Лариван. Ак япала! Никам та çук терĕн-çке...

Энтип. Ан шикленĕр... (*Хырăмне пăчăртаса.*) Ман кĕрлеттере пуçларĕ кунта... Чăтма çук! Эккей, мĕн тăвать çынна йĕкел çакăри... Тухмалли сирĕн инçе-и? (*Пĕшкĕнет.*)

Ахмар. Малтан эс çавна кала, мĕнле шухăшлатăн?

Энтип. Чăтма çук касать...

Чишка (*Ахмара куçран пăхса*). Тен, ăна пăлтăра куршук лартса парас?

Энтип. Маншăн çавах. Анчах ман...

Ахмар (*аллипе сулса*). Тухса кĕтĕр-çке ĕнтĕ. Атту трук...

Кулаççĕ.

Чишка. Тухсан, тӳрех унта, кукăра... Кĕнĕ чух алăкне çаклатма ан ман.

Энтип хырăмне тытса, пĕшкĕнсе тухса каять. Çĕлĕкĕ выртса юлать.

Ахмар. Итлĕр... Çапла, вăл пĕр-ик сăмах тухса каласанах Лариван пăшалне чиркӳ çинелле персе ярать, эсĕ Петток: „Караул! Антихристсем пăшал персе, халăха çăвар хуптарасшăн. Тĕрĕс сăмах каласран хăраççĕ“ тесе кăшкăратăн. Вара тапранса каять. Ан тив, айăпĕ пирĕнте мар!

Чишка. Лайăх шухăшласа тупнă.

Ахмар. Кӳреннĕ çынсен чĕрине вут хыптарма пĕлмелле... Ку кирек мĕнле пушартан та хăрушăрах! Василь Иванчă çапла вĕрентет.

Чишка. Ăсĕ çитет унăн.

Ахмар. Ак унăн чĕрине вут хыптарса илтерĕпĕр.. Ыран халăха пире кирлĕ сăмах калатăр. Анчах мĕншĕн-ха вăл нумайччен тытăнса тăрать? Тухса пăх-ха, ăнсăртран йĕм тĕпне кăларса яман-и? (*Кулаççĕ. Чишка тухать. Чишкăн пысăк арчине шаккаса.*) Тĕреклĕ пурăнать пулас сирĕн Чишка—хуçа. Тен, тĕпсакайĕнче те тырă лăках... (*Уçса пăхма тăрать.*)

Чишка (*васкаса кĕрет*) Шăрши пур, хăй ниçта та курăнмасть.

Ахмар. Мĕн? Халех тупса килнĕ пултăр! Хăвăртрах.

Лариван (*ура çине тăрса*). Эсĕ мĕн, ăна пире пĕтерме илсе килтĕн-им? (*Çапма тăрать.*)

Ахмар (*Ларивана сирсе ярать*). Хăть çакăнтах пуçа касса татăр, Киркка Энтипĕ сунтăнчăк мар... Хăранипе кăна... Анчах çавах та ăна шыраса тупас пулать. Кăтартăпăр! Чишка! Эсĕ килхушши тавра... (*Петтокпа Ларивана.*) Эсир—чиркӳ еннелле, эпĕ мăн çул çине тухса тăратăп...

Хирĕç сасартăк Энтип кĕрет. Пурте тĕлĕннипе хытса тăраççĕ.

Энтип. Эккей, çанталăкĕ пит хăрушă ӳлет... Çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ тейĕн!

Ахмар. Каларăм вĕт сире—тыррине каялла иличчен Энтип киле ахаль таврăнас çук! (*Ларивана çам-*

*кинчен шаккаса.*) Аллу ытла вăрăм, кунта вара çитсех каяймасть...

Урамра шăнкăрав сасси илтĕнет.

Çавах та саланмалла пулĕ... Тем пулсан та: „пĕрне-пĕри курман“, „илтмен“, „пĕлместĕп“.

Ларивана Петток. Çапла пултăр. Саланар. (*Тухаççĕ.*)

Чишка (*Ахмара*). Эсир, тен, ман патăмрах çĕр выртатăр?

Ахмар. Ĕçе сыхланарах туни кирлĕ... Эпир Энтиппе хамăра валли чиркÿ старости патĕнче те вырăн тупăпăр. Ну, Чишка, ырантан пуçласа вулăс пуçлăхĕ хăвăн пулмалла пултăр.

Чишка. Пуласчĕ-ха, тем пекех!

Энтип. Чим, Ахмар, ыран тыррине мана чăнах каялла тавăрса парĕç-ши?

Ахмар. Ку ĕнтĕ пĕтĕмпех хамăртан килет... Каяр.

Каяççĕ. Чишка ăсатма тухать.

Ульяна (*тĕпсакайĕнчен сиксе тухса*). Акă мĕн шухăшлаççĕ вĕсем! Лешсем хăш ял çыннисем пулчĕç-ши? (*Хăвăрт тĕттĕм çенĕке чупса тухса çухалать.*)

Пĕр вăхăт пÿртре никам та çук.

Чишка (*кĕрет. Итлесе тăрать*). Мĕн, ура сасси илтĕннĕ пек пулчĕ... (*Тĕпсакай алăкĕ уçăлса выртнине асăрхать.*) Ак, тата! Хупмасăрах хăварнă... Ульяна, эсĕ-и? (*Турăшсем умне пырса, чĕркуçленсе пĕр аллипе сăхсăхрĕ, теприпе сĕтел айĕнчен пăшал туртса кăларчĕ.*)

Кантăка шаккаççĕ.

Кам унта?

Сасă. Эпĕ, хуньăм... Уç-ха!

Чишка (*пăшалне арча хыçне хучĕ те тухса çенĕк алăкне уçрĕ*). Мĕн пулчĕ, кĕрÿ?

Петток. Лариван халех вутне тĕртесшĕн...

Чишка. Эсĕ, мĕн, хăраса ÿкрĕн-им?

Петток. Хăраса ÿкнĕшĕн мар, хуньăм... Вăхăтсăр ĕçе туни пире пурне те пĕтерсе хурĕ.

Чишка. Кала ӑна, автансем авӑтмасӑр, ан хӑтлантӑр.

Петток. Юрать, ырӑ каҫ пултӑр, хуньӑм!

Чишка. Кӑштах тӑхта-ха, кӗрӳ... (*Йӗри-тавра пӑхкалать.*)

Петток. Мӗн-ши тата?

Чишка. Ахмара ӑсатса янӑ хыҫҫӑн тӗпсакай алӑкӗ уҫӑлса выртнине асӑрхарӑм...

Петток. Ах хӑямат! Тӑлӑхӗ итлесе ларман-ши унта?

Чишка. Хам та шухӑша кайрӑм-ха... (*Тӑрсан-тӑрсан.*) Эсӗ уҫса пӑхмарӑн пулӗ те?..

Петток. Мӗне кирлӗ, хуньӑм?

Чишка. Тӗлӗнмелле... (*Тӗпсакай алӑкне уҫса.*) Кунтах итлесе ларнӑ пулсан, хӑш вӑхӑтра тухса шӑвӑнма ӗлкӗрчӗ-ха вӑл?

Петток. Нумай вӑхӑт кирлӗ-и?

Чишка (*тӗпсакайне пӗшкӗнсе пӑхать*). Те-те-те-те... Ҫавӑ михӗ мар-и? Кӗрӳ, хунарне ҫут-ха!

Петток (*хунар ҫутса, Чишкӑпа тӗпсакайнелле тишкерсе пӑхаҫҫӗ*). Михӗ, хуньӑм! Михӗ!

Чишка. Вӑт эсремет! Улӑм айне куҫарма хушнӑччӗ-ҫке... Каялла тӗпсакайне йӑвантарнӑ та хупӑнса вӑрттӑн итлесе ларнӑ-мӗн...

Петток. Волисполком кантурне чупмарӗ пулӗ-ҫке?..

Чишка. Шанма ҫук... Сыхланас пулать! Кай, ҫенӗке тухса тӑр. Тул ҫутӑличчен ӑна пуҫтарас пулать—унсӑрӑн вӑл пире тӗп тӑвӗ...

Петток. Ларивана чӗнсе килес мар-и? Вӑл хӑюллӑрах...

Чишка. Чуп хӑвӑртрах!Васкас пулать. Ҫывӑрма вӑл таврӑнатех... Ан манӑр, килсе ҫитсенех шӑппӑн пӑлтӑра кӗрсе тӑратӑр...

Каяҫҫӗ. Кӑшт тӑхтасан, Чишка каялла таврӑнчӗ. Алӑка ҫаклатса, кӗрӗкне хывать, кӗлтума тытӑнать. Анчах, алӑка шакканине илтсен, шикленнӗ пек пулчӗ.

Кам унта?

Ульяна. Эпӗ... Ульяна.

Чишка. Ҫаклат алӑкне.

Ульяна илтмӗш пулать. Сӑхманне хывса тӗпелелле утать.

Ҫаклат тенӗ сана!

Ульяна. Камран хӑратӑр?

Чишка. Курмастăн-и, çĕрĕ мĕнле тискер? (*Пÿрт алăкне çаклатса.*) Хушнă ĕçе турăн-и?

Ульяна. Мĕн тумаллине турăм...

Чишка. Турăн пулсан, çыварма вырт!

Ульяна. Ман кăштах ларас килет...

Чишка. Мĕн, санăн куçусем паян ытлах та ялкăшаççĕ? Чишка хуçуна сутса килмерĕн пуль-çке?

Ульяна. Юратнă хуçана кам суттăр-ха?..

Чишка. Юратни апла... (*Сасартăк арча хыçĕнчен пăшал туртса кăларать.*) Кала, кам патĕнче пултăн?

Ульяна (*стена çумне пăчăрăнса*). Пер! Эпĕ санран пĕртте хăрамастăп, путсĕр Чишка!

Чишка. Пурăнасах килет пулсан, калăн... Юлашки хут ыйтатăп: кама кайса систертĕн?

Алăка шаккаççĕ.

Кам унта?

Арçын сасси. Уçăр!

Чишка (*пăшалĕпе Ульяна çине тĕллесе тăрать, хăй хăяккăн алăк патнелле пăхать*). Пĕлмен çынна çĕрле алăк уçма пултараймастăп.

Арçын сасси. Халех уçăр!

Ульяна. Тасал ман умран, ирсĕр!

Пĕтĕм вăйпа сĕтеле Чишка çине йăвантарать. Чишка ураран ÿкет. Ульяна алăк патнелле чупса кайма тăчĕ, анчах ĕлкĕреймерĕ: Чишка, ура çине тăрса, çула пÿлчĕ, çавах та Ульяна Чишка аллинчи пăшала ярса тытрĕ.

Чишка. Эсĕ мĕн, мана вĕлерсе, пурлăха çаратма шут тытрăн-и? Хурах, çаратаççĕ!

Ульяна (*Чишкăпа кĕрешсе*). Вăрăран ку сăмаха илтетĕп те.

Пăшала туртса илес тесе, Чишкăна хырăмĕнчен тапса ячĕ, унтан хăвăрт алăк уçма ĕлкĕрчĕ.

Чекист (*кĕрсе тăрать. Наганĕпе Чишка çине тĕллесе*). Руки вверх!

Чишка. Хурах, вĕлереççĕ!

Чекист. Ан çухăр ухмахла, ут хăвăртрах! Ульяна Васильевна, эсир кунта нумай тытăнса ан тăрăр...

Пăшала хăй аллине илсе, чекист Чишкăна пÿртрен илсе тухать. Ульяна, сăхман тăхăнса, кăштах чарăнса тăчĕ. Сасартăк тĕттĕм çенĕкре çынсем кĕмсĕртетни тата пĕри йынăшса яни илтĕнчĕ. Ульяна, кайма пуçтарăннăскер, шалт тĕлĕнсе алăк патне ыткăнчĕ, анчах алăкне тул енчен питĕрсе лартма ĕлкĕрнĕ...

Чишка сасси (*пăлтăртан*). Пуçĕнчен... пуçĕнчен!..

Лариван сасси. Ак сана, антихрист!

Лач! çапни илтĕнет.

Ульяна. Ах!..

Чăлана чупса кĕрсе çухалать, унтан кантăк чăнкăртатса ванни илтĕнет. Пўрте Чишкăпа Лариван чупса кĕреççĕ. Лариван аллинче пуртă, Чишка аллинче—пăшал.

Чишка. А-а-а, халь ĕнтĕ вĕçерĕнеймĕн!

Лариван. Ăçта вăл? Ăçта?

Чишка. Ăçта кайтăр вăл, капкăна çакланнă йытă ами! Кунтах...

Хашкаса шыраççĕ.

Лариван (*чăлана чупса кĕрет*). Эй, Чишка! Кантăка ватса тухса тарнă вăл...

Чишка. Карау у-у-л! Çаратрĕç! Хăвала, хăвăртрах, хăвала... Йĕрне ан çухат! Тытасах пулать. Вăрă, вăрă тăватпăр ăна!

Лариван чупса тухса каять.

Петток (*йывăррăн сывласа кĕрет. Пуçне алăк еннелле тайса*). Ăçта чикмелле ку виллине?

Чишка. Нўхрепри юр айне алтса чикес... Кайран чан çапас!

Çутă сўнет. Тĕттĕм. Нумай вăхăт чан çапни илтĕнет.

Лариван сасси (*катаран*). Чишка Павăлне çаратнă!

Ют сасă. Вăррине тытнă-и?

Лариван сасси. Тытнă. Тăлăххи!

Ют сасă. Пуçне касса татмалла!

Петток сасси. Акма пухнă тырра паян ют патшалăха яраççĕ. Вулăс пуçлăхĕ тыррине илсе кайма хăй килнĕ... Тухăр кĕлетсем патне!

Ют сасăсем. Хăвăртрах кĕлетсем патне!

— Тытса çыхăр антихриста!

Майĕпен кун çути çапать. Пирĕн ума шăтăк-çурăклă, хăрăмпа хупланнă хурал пўрчĕ тухса тăрать. Чўречине урлă-пирлĕ хăмапа çапса лартнă. Çурăксем хушшинчен çил-тăман ўлесе вĕрет. Кайри алăк юрпа хупланса ларнă.

Йынăшнă сасă. Тишкерсе пăхсан, эпир Ульянана куратпăр. Ăна çĕмрĕк кăмака çумне вĕренпе çыхса лартнă. Пичĕ-куçĕ кăн-кăвак. Мăйĕнчен „Вăрă" тесе çырнă хăма татăкки, хулпуççи урлă хĕрарăм кĕпи, атă-пушмак, мăйă çыххи тата тĕрлĕ япаласем çакса янă.

Ульяна. Шы-ы-в... Шы-ы-ы-в... (*Пуçне усать.*)

Катара каллех хаяр сасăсем илтĕнеççĕ.

Лариван сасси. А-а лекрĕн-и, антихрист!

Чишка сасси. Хурал пўртне хупас... Вăрăпа ун хушшинче уйрăмлăх çук...

Пинарин сасси. Халăх! Ан итлĕр вĕсене, улталаççĕ сире.

Лариван сасси. Хуп çăварна! Тырра турттарса кайма килнĕ вĕт эс...

Хĕрарăм сасси. Иртенпех ампартан ампара чупса çўрерĕ... Ахальтен килмен вăл!

Чишка сасси. Хăвăр вулăсра çаратни çитмерĕ, халь тата кунта çаратма килтĕн-и?

Пинарин. Суя!

Ульяна (*пуçне çĕклесе*). Чим, ăçта илтнĕ эп ку хăюллă сасса?..

Чишка сасси. Курăпăр, кам суять... Ав ĕнер сирĕн енчи Киркка Энтипĕ куççульне юхтарса килчĕ. Юлашки миххине армантан тыттарса янă эс... Упакассинче халь пĕтĕм халăх пăлханнă...

Халăх хушшинчен. Ăçта вăл халь Киркка Энтипĕ? Хăй тухса калатăр!

Чишка. Хăвалаca янă ăна вĕсем е вĕлернĕ... Шырама хăйсен ялĕнчен килнĕ.

Ик-виç сасă. Коммунистсем власть пулса ларнăран выçлăх килсе çитрĕ. Вĕлерес!

Халăх хушшинчен. Халăхпа суд тумасăр тĕкĕнес мар... Хурал пўртне хупас...

Çăра уçнă сасă. Хурал пўртне вĕренпе явăнтарса çыхнă Пинарина тытса ывăтаççĕ. Тул енчен алăкне каллех питĕрсе илеççĕ. Пинарин йынăшса ячĕ.

Лариван сасси. Вăрлăх кĕлечĕсем патне чупăр! Халь никам та чараймĕ...

Майĕпен сасăсем çухалаççĕ.

Ульяна. Шыв... Шы-ы-в...

Пинарин (*пуçне тăратса итлет*). Кам ку?

Ульяна. Курмастăн-им? Вăрă...

Пинарин (*çаврăнса пăхасшăн*). Ăçта илтнĕ эп ку сасса?.. Кам эс?

Ульяна. Сивĕ мана...

Пинарин (*хускалса, хăй тĕллĕн*). Çук, çук, пулма пултараймасть... Кам эсĕ? Каласамччĕ хавăртрах!

Ульяна. Çаврăнса пăх ман çине...

Пинарин алăк патĕнчен çаврăна-çаврăна Ульяна еннелле тăсăлса выртрĕ.

Куçран лайăхрах пăх... Куçсем ман çавнашкалах пулĕ-çке...

Пинарин. Мĕн ку? Тĕлĕкре мар пулĕ-çке... Икĕ хура шăрçа пек куçсем... Ульяна? Эсĕ и? (*Ура çине тăма тăрать, кайса ӳкет.*)

Ульяна. Миккита...

Пинарин йĕрет.

Арçын макăрать... Сивĕ мана...

Пинарин. Миçе çул! Çакнашкал кĕтсе илтĕн пулать... Сана мĕншĕн? Эй, çынсем!

Ульяна. Ан чĕн... Çынсемсĕр пире лайăхрах... Ăшăт мана... Сивĕ...

Пинарин ура çине тăрать, анчах хăй каллех кая-кая ӳкет. Çаврăна-çаврăна Ульяна ури вĕçне пырса выртать.

Юнашар... Тăр ура çине... Эс вăйлă... Сана куçран пăхас килет...

Пинарин, кăмака çумне тайăлса, аран-аран ури çине тăрать пĕтĕм пĕвĕпе Ульяна çумне пăчăртанать, икĕ тута пĕр сăмахсăр пĕрлешеççĕ.

Татах... Нумайччен... Миккита, чунăм... Халь ĕнтĕ ăшă... Вĕри... (*Аташма пуçлать.*) Çунатпăр, Миккита! Сӳнтер кăмакине... Хăвăртрах! Чишка мана вута пăрахасшăн... Çулăм... Ах, ăшă-çке...

Пинарин. Ульяна... Ульяна! Илтетĕн-и эс? (*Ульянана çыхнă вĕренне шăлĕсемпе çыртса татасшăн, кайса ӳкет.*)

Эй, çынсем! Хăтарсамăр!

Ульяна. Ан хĕнĕр! Эп вăрă мар... Çынна вĕлерчĕç...

Пинарин. Кама? Мĕнле çынна? Çук, çук,

аташатăн эс, Ульяна... Эх, пĕр паллакан çын та çук! Пирĕн енчисем пасара килнĕ пулсан...

Катаран çынсем хаяррăн кĕрлесе килни илтĕнет.

Ахмар сасси. Ак Киркка Энтипĕ сире хăй каласа парĕ...

Халăх хушшинчен. Кала. Мĕн тунă сана вулăс пуçлăхĕ Пинарин?

Ахмар сасси. Ну! Каласа пар ĕнтĕ халăха, мĕнле вăл авăртма янă юлашки тырра сăтăрса кайрĕ...

Энтип сасси. Ну, кайрĕç...

Ахмар. Илтетĕр-и?

Пăшал пенĕ сасă.

Петток сасси. Караул! Антихристсем пăшал персе халăха çăвар хуптарасшăн .. Энтипе каллех калаттарасшăн мар... Тĕрĕслĕхрен хăраççĕ!

Ют сасă. Тытăр вĕсене! Кантур енчен печĕç...

Халăх шавласа аякка кайса çухалать. Пĕр вăхăт шăп. Хурал пӳрчĕ умĕнче вăрттăн пăшăлтатни илтĕнет: „Алран ан вĕçерт ăна... „Ĕçне вăлах тăвать.. Хăвăртрах!“ Алăк уçни илтĕнет. Ахмар, Чишка Павăлĕ, Лариван кĕреççĕ. Лариван аллинче пуртă.

Ахмар. Ха-ха-ха-ха-ха! Ну, халь сире авлантарас тетпĕр, вулăс пуçлăхĕ! Хĕрĕ çумрах... Тахçанах сирĕн туйра пулма шухăшланăччĕ...

Кулаççĕ.

Пинарин. Шел! Кая юлтăн, туй пуçлăхĕ! Пирĕн туй сирĕнсĕрех хăватлă пулса иртрĕ...

Чишка. Шӳт тума юрамасть-мĕн, вăрă упăшки...

Лариван (*пуртине çĕклесе*). Çитет!

Ахмар (*Ларивана чарса*). Алăсене варалас мар, ухмах! Кама çаратнă, çавсемех вăрăсене тĕп тăвĕç... Йăли çавнашкал.

Пинарин. Çук, халăха улталаймăр!

Ульяна йынăшать.

Ахмар. Вилĕсемпе калаçмаççĕ...

Хăйсем хушшинче тем пăшăлтатаççĕ. Ахмар алăк еннелле пуçне сулать. Лариван Энтипе илсе кĕрет.

Ак, сана çаратаканни куç умĕнчех... Вăрăсен пĕр шăпа... Халăх хушнипе...

Э н т и п (*чылайччен Пинаринпа Ульяна ҫине куҫа-йӗн пӑхса тӑрать*). Парӑр пуртине... Хамах шӑпине тултарӑп.

А х м а р. Ну вӑт, ҫапла кирлӗ те! Вӑрӑсене тӗп тунӑшӑн ҫылӑх мар, хӳтӗлени—ҫылӑх. Ӗмӗртен йӑли ҫапла пулнӑ...

Э н т и п. Кайӑр тухса... Пурте кайӑр. Курман-илт-мен—пӗр сӑмах. Эп хамах... Кайӑр!

Соколовпа Митрухха чупса кӗреҫҫӗ.

Л а р и в а н. Мӗн кирлӗ сире?

С о к о л о в (*йӗри-тавра пӑхма хӑтланса*). Кунта тырӑ валеҫеҫҫӗ, терӗҫ те...

А х м а р. Пинарин хӑраххисем... Тытӑр эсреметсене!

Соколовпа Митрухха тухса тараҫҫӗ. Лариван хыҫҫӑн чупса тухать.

Ну, Энтип, аллу ҫӑмӑл пултӑр!

Тухса каяҫҫӗ.

Э н т и п (*пуртӑ тытса вӑраххӑн малалла утать*). Ы-ых, антихристсем! Турӑран каҫару ыйтӑр...

П и н а р и н. Вӗлер, сутӑнчӑк! Анчах Ульянӑна ан тӗкӗннӗ пултӑр...

Э н т и п. Ы-ых! (*Хӑйне вӗлерме тӑнӑ пек, хӑруш-шӑн урӑх саспа ҫухӑрса ярать, пуртипе Ульянана ҫыхнӑ вӗренне касса татать. Ульяна кайса ӳкет*).

П и н а р а н (*йынӑшса*). М-м-м юнлӑ ҫӑхан!

Ч и ш к а (*вӑрттӑн алӑка уҫса пӑхать. Сӑхсӑхса*). Тур каҫартӑрах! Пӗрне пуҫтарчӗ.

А х м а р с а с с и (*тул енчен*). Кайӑр, халӑха пӗлте-рӗр... Хӑвӑр аякра пулӑр... Ку эпир тунӑ ӗҫ мар, халӑх ӗҫӗ... Каяр!

Э н т и п. (*Пинарин патне ҫиллӗн утса пырать. Пуртине ҫӗклесе*). Ыйт каҫару ҫӳлти турӑран, чунна ҫӑлтӑр...

П и н а р и н. Вӗлер, урнӑ кашкӑр хӑраххи!

Э н т и п. (*Пинарин урипе аллине ҫыхнӑ вӗренне пуртипе касса татать, унтан хӑвӑрт хыҫалти алӑк патне чупса пырса пӗр хӑмине ҫапса кӑларать. Ульяна ҫине кӑтартса*). Ил ӑна алла... Турӑ пулӑштӑр... Ҫырмапа...

П и н а р и н. (*Шалт тӗлӗнсе, Ульянана ик аллипе ҫавӑрса тытать*). Энтип, атя пирӗнпе... Хӑвӑртрах!

Энтип чӗнмест.

С а с ӑ с е м (*катара*). Киркка Энтипӗ вӑрӑпа вулӑс пуҫлӑхне пуртӑпа касса пӑрахнӑ...

— Антихриста ҫавӑ кирлӗ те!

П и н а р и н. Хӑвӑртрах, Энтип!

Э н т и п. Турӑ ҫӑлтӑр сире... Миккита, чим... Шинельне пӑрахса хӑварӑр-ха... Улькка тутӑрне те...

Пинарин хӑй ҫӗлӗкне Ульянана тӑхӑнтарать, хӑма шӑтӑкӗпе ӑна ҫӗклесе тухать. Халӑх шавлӑн ҫывхарни илтӗнет.

Э н т и п. (*Хӑйпӑтса кӑларнӑ хӑмана каялла вырнаҫтарса лартать, шинельне кӑмака ҫумӗнче вырттакан вут пуленкисем ҫине сарса хурать, унтах Ульяна тутӑрне те сарса хурать. Пуртине илсе алӑк патнелле утать*). Вӗлерӗр мана! Ҫылӑхлӑ ҫын эп... Вӗлерӗр!

Халӑх шавлӑн хурал пӳрчӗ патне ҫывхарать. Энтипе хирӗҫ малтанах Соколовпа Митрухха ыткӑнса кӗреҫҫӗ.

Ч А Р Ш А В

# ВИҪҪĔМĔШ ПАЙĔ

## ПĔРРЕМĔШ КАРТИНА

Волком секретарĕн кабинечĕ. Стена ҫумĕнче В. И. Ленин портречĕ. Сылтăм енче сарлака чӳрече. Чӳрече умĕнче сад ешерет. Пинарин чаршав уҫăлнă вăхăтра сĕтел хушшинчен тухса, чӳрече патне пырса тăрать. Шарашкин сĕтеле шаккаса, кăшкăрса калаҫать.

Шарашкин (*пĕр пирус хыҫҫăн тепĕрне туртса*). Ăнлан, Пинарин юлташ! Ку... настоящий искривлени! Угроза! Кунтан ытла, мировой масштабĕпе илсен, явно нехорошим концом пахнет, темелле!

Пинарин. Пĕр сăмахпа каласан, сирĕн шутпа, пӳрт тăррине улăхса: „Караул!" кăшкăрмалли кăна юлчĕ... Ҫапла-и?

Шарашкин. Ку сахал! Сан вырăнта пулсан, ҫӳҫе тăпăлтарнă пулăттăм! Разве ку не политическая слепота? Ахмар... кулак, можно сказать, хăвăн личнăй тăшман пулнăскер, халь сан куҫ умĕнчех ҫĕнĕрен чĕрĕлсе тухрĕ! Ку ҫитмест, тата ирĕклĕн торговать тума тытăнчĕ! Ăҫта санăн куҫусем?

Пинарин. Шарашкин юлташ! Эсир хăвăра ҫивĕч куҫлă тесе каласшăн. Анчах та пĕлмесĕр сӳпĕлтетме юрататăр-ҫке...

Шарашкин. Мĕн каласшăн эсир?

Пинарин. Пĕлместĕр-им, Ахмар кулак Пушнарта пулса иртнĕ пăлхав хыҫҫăн виҫҫĕмĕш ҫул тарса ҫӳрет?

Шарашкин. Разве?

Пинарин. Ку пĕрре. Ахмар пирки тата ҫакна калас пулать: ăна тарма пулăшаканĕсем те пулнă пулас...

Ш а р а ш к и н. Вăт куратăр-и куштансене сирĕн кунта мĕнле хӳтĕлеççĕ? А эсĕ вĕсене ачашлама хатĕр.

П и н а р и н. Сăмаха пĕлмесĕрех калас мар, Шарашкин юлташ... Тепĕр енчен, эсир кулаксемсĕр пуçне ялта никама та курмастăр пулас-ха...

Ш а р а ш к и н (*кулса*). А-а! Сисетĕп, эс каллех Киркка Энтипне илсе политика тăвасшăн...

П и н а р и н. Киркка Энтипĕ пĕччен мар. Ун пек хуçалăхсем пирĕн вулăсра виçĕ пин. Вĕсенчен çурри ытла кооперацине кĕчĕ. Шухăшласа пăхнă-и эсир, мĕне пĕлтерет ку тĕслĕх?

Ш а р а ш к и н (*ахăлтатса кулать*). Ко-о-перация! Кулăшла политик мĕн эс! Влаçа кооперативпа улăштарасшăн мар-и тата?

П и н а р и н. Власть хăй тĕллĕн—пушă сăмах кăна. Влаçăн çирĕп те тĕрĕс политика пулма кирлĕ. Хальхи вăхăтра Киркка Энтипĕ пек вак-тĕвек хуçалăхсене кооперацие хутăштарасси пирĕн тĕп задача пулса тăрать.

Ш а р а ш к и н. Так... Коопераци урлă Киркка Энтипĕсенчен виçĕ пин кулаксем туса хурар-и? Ку капла пултăр, тейĕпĕр. А Соколов пек çара çерçисене ăçта чиксе пĕтерĕн?

П и н а р и н. Çук, пĕтĕмпех урăхла, Шарашкин юлташ. Соколовпа Киркка Энтипĕ пĕр çулпа пыраççĕ... Вĕсен çулĕ çинче уйрăмах Ахмар тăрать. Эп çапла шухăшлатăп, иккĕн пĕр çулпа пынă чух, вĕсене хирĕç пыраканĕн аяккалла пăрăнмаллах пулать.

Ш а р а ш к и н. Пăрăнмасан?

П и н а р и н. Сиреççĕ!

Ш а р а ш к и н (*кулать*). Вот ку фи-ло-со-фи! Соколовпа Киркка Энтипĕ пĕр çулпа социализм патне пыраççĕ апла... Интересно! Питĕ интересно! Анчах эсĕ малтан Киркка Энтипĕнчен ыйтса пăхнă-и: Соколовпа пĕр çулпа пыма кăмăлĕ пур-ши унăн? Допустим, пур, тейĕпĕр... Но имей ввиду, вĕсене çул пама мар, скоро хăйсене таптаса хурĕç!

П и н а р и н. Камсем?

Ш а р а ш к и н. Шалтан — эсир ачашласа ӳстернĕ кулаксем, тул енчен—лешсем.

П и н а р и н. Хăравçă!

Ш а р а ш к и н. Харавçă? Смотри, пуçна çухатмалла ан пултăр!

Пинарин. Ултă çул каярах çухатманнине, халь ĕнтĕ çухатмăпăр! Анчах та эсир, Шарашкин юлташ, кулаксене хирĕç вăхăтсăр наступлени пуçласа ярса, çĕнĕрен пăлхав пуçласа ярасшăн мар-и?

Шарашкин. Демагоги-я!

Пинарин. Апла пулсан, сире мĕнле ăнланмалла-ха?

Шарашкин. Эп, собственно, апла каласшăн марччĕ... Эп Ленин юлташ вилнĕренпе парти руководствийĕ хăшпĕр йăнăшсем туни çинчен çеç каласшăнччĕ...

Пинарин. Шарашкин! Парти руководстви шанчăклă та çирĕп алăра. Ăна элеклеме сире никам та ирĕк памĕ!

Шарашкин. Ав эс епле ăнланатăн иккен хамăр хушăри интинăй калаçăва?! Шухăшламанччĕ кунашкал кĕтсе илессине, Пинарин юлташ...

Пинарин. Ак мĕн, Шарашкин юлташ: сире пирĕн вулăса ĕçлеме ячĕç пулсан, эсир пĕр иккĕленмесĕр парти хушнине туса пырăр, кукăр-макăр шухăшлассине пăрахăр.

Шарашкин. Эсир мана вĕрентесшĕн мар-и тата?

Пинарин. Волком парти секретарĕн вĕрентес те пулать... Мĕн тăвас-ха, виçĕ çул каярах...

Шарашкин. Пулса иртнине аса илмĕпĕр, Пинарин юлташ. (*Аллине сулса.*) Прочем, санпа нечего калаçма—санăн малтан ликпункт пĕтерес пулать...

Пуçне пĕксе, çĕмĕрен пек, алăк патнелле вĕçтерет. Ăна хирĕç, хăмăт çĕклесе, Энтип кĕрет. Ăнсăртран Шарашкин пуçĕ, хăмăт ăшне кĕрсе, çакланса ларать. Энтип, тарăхнипе пулас, хăмăтне Шарашкин мăйĕ çинех тăхăнтартса лартать.

Шарашкин. Безобрази, волкомпартине хăмăт йăтса килеççĕ!

Энтип. Извиняюсь, начальник юлташ...

Пинарин пĕтĕм чунтан кулать. Шарашкин, хăмăтран вĕçерĕнсе, алăка шăн! хупса тухса каять.

Энтип. Чим, ку Шарашкин пулмарĕ-и? Эккей, чутах пуçа салататчĕ.

Пинарин. Çавă.

Энтип. Мĕн тума килнĕ ара вăл?

Пинарин. Волисполкома ĕçлеме янă ăна халь.

Энтип. Пирĕн вулăсах-и вара?

Пинарин. Ҫапла, пирӗн вулӑсах... Эсир мӗн, чӑнах та, хӑмӑт йӑтса ҫӳретӗр, Энтип?

Энтип. Тума пӗлмеҫҫӗ, Миккита. Тӑваканӗсем те, сутаканӗсем те лашана хӗрхенмеҫҫӗ пулас. Хӑйсем ҫине тӑхӑнтартса пӑхасчӗ!

Пинарин (*хӑмӑта хӑй аллине илсе, кантӑк патне пырса тӑрать*). Чӳлӗкӗ лайӑххах, тейӗпӗр... Клешчи те, пӑявӗ те пымалла пек. Кӗҫҫи вӑт...

Энтип. Кӗҫҫи ҫав, Миккита, кӗҫҫи! Ытла кая ҫӗлесе хунӑ—лаша кӑкӑрне шӑтарать вӗт капла!

Пинарин. Хӑш лавккара туянтӑр эсир кӑна?

Энтип. Илессине чентралнинчех илтӗм-ха...

Пинарин (*телефонпа шӑнкӑртаттарать*). Станци! Коопераципе калаҫасчӗ... Итлӗр-ха, ыран коопераци правленийӗн председательне тата тӗп лавккара ӗҫлекенсене волкома килме калӑр. (*Трубкине ҫакса.*) Эсир, Энтип, хӑмӑтне кунта хӑварма пултаратӑр...

Энтип. Ҫук, ҫук, мӗн илнине хӑварма пултараймастӑп... Илни вӑл тем пекех-ха! Виҫӗ ҫул каярах хӑмӑт мар, такан тупма та хӗнччӗ. Ленин пирӗн нушана чӗрипех туйрӗ... Халь ӗнтӗ ҫитси те пур, махорки те пур, сахӑрӗ те пур, таканӗ те пур... Мӗн кирлӗ—пурте пур! Ӗнер хамӑрӑн промкооперацинче патшалӑха шпалсемпе крешсем хатӗрлесе панӑшӑн темӗн тӗрлӗ таварсем те пачӗҫ! Арӑм хӗпӗртенипе ачасене йӗр-йӗр ҫитсӑранах кӗпесем ҫӗлес терӗ.

Пинарин. Кооперативра тавар пулни вӑл аван, анчах вӗсене сутма пӗлни кирлӗ, Энтип. Ку хӑмӑта...

Энтип. Ҫук, ҫук, Миккита, ӑна эпӗ хамах юсатӑп.

Сасартӑк Кокшаев кӗрет.

Пинарин. Ак сирӗн ачусене вӗрентекенӗ килчӗ, Энтип... Тархасшӑн, Георгий Михайлович!

Кокшаев. Ырӑ кун пултӑр, Никита Петрович!

Энтип (*хӑмӑтне илсе, алӑк патнелле утма тӑрать*). Эпӗ каям-ха, Миккита... Ман васкамалла...

Кокшаев. У-у! Кама куратӑп! Энтип Кирилч! Кӗтменччӗ сирӗнпе парти волкомӗнче тӗл пуласса...

Пинарин. Энтип Кириллович, парти волкомне кӗрсе, паян питех те кирлӗ ыйту лартрӗ: коопераци урлӑ ҫакӑн пек юрӑхсӑр хӑмӑтсем сутни—пирӗн халӑх хуҫалӑхне сиен туни пулать, тет вӑл...

Кокшаев. Куншăн ăна чыс, анчах вăл парти волкомĕнче çакна каласа патăр: хăйĕн ачисене вĕренме чарса тăни кама сиен туни пулать?

Пинарин. Ларăр, ларăр, Энтип... Мĕнле-ха апла?

Энтип турткалансарах тăрать.

Кокшаев. Ачисем хĕлĕпех шкула ашшĕнчен вăрттăн çӳререс. Çуркунне суха тума хăвалать, кĕр çитсен – авăн çапма. Икĕ хутчен хăйне чĕнтертĕм...

Пинарин. Вĕренессе мĕнле вĕренеççĕ вĕсем?

Кокшаев. Иккĕшĕ те маттур! Нумай пулмасть комсомола кĕчĕç. Сантăрĕнчен лайăх механик пулма пултарать.

Пинарин. Маттур! Мĕншĕн-ха вĕсене вĕренме чарас, Энтип?

Энтип. Пурте писарьсем пулсан, суха тăваканĕ кам пулĕ?

Кокшаев. Вăт, вăт çакă хĕсет те пире! Писарьсем мар, вĕреннĕ те ăста çынсем кирлĕ пире.

Энтип. Çапла та-ха вăл... Пурнăç ăнса пынă чух ĕçлени те чăрмантармасть! Ак халь тырри те лайăх пула пуçларĕ, налогĕ те шутлах... Вăхăтра акатăп, вăхăтра пуçтаратăп, памаллине патшалăха паратăп, ытти – хамăн. Сутас килет – сутатăп, илес килет – илетĕп... Хăвăн ирĕк. Ĕçлес пулать!

Кокшаев. Вĕренес те пулать!

Энтип. Эсир хăтарăр-ха мана... Эп хам ăспа хам шухăшласа пăхам... Прощайте! (*Хăмăтне çĕклесе тухса каять.*)

Пинарин. Тăхтăр-ха, Энтип. (*Коридора хыççăн тухса.*) Сире Ульяна Васильевна курасшăнччĕ, пирĕн хваттере кĕрсе тухăр-ха... (*Таврăнать.*) Мĕнле сирĕн шутпа, Георгий Михайлович?

Кокшаев. Шухăшлас тет пулсан — шухăшлатăр. Шухăшлани кирлĕ. Анчах та унăн хăйĕн тĕлĕнмелле „наука“!

Пинарин. Эх, Георгий Михайлович, çав „наукăна“ эпир пур чухнех пĕлсе çитейместпĕр çав...

Инçетре-инçетре купăспа илемлĕ кĕвĕ калани илтĕнет.

Кокшаев. Эп тупăшма пĕлместĕп, Никита Петрович. Эп сирĕн пата пачах урăх кăмăлпа килтĕм. Паян эпĕ аллă çул тултаратăп...

Пинарин. Саламлатăп, Георгий Михайлович! Чĕререн саламлатăп. Манăн хамăн та паян савăнăç—ывăл виç çул тултарчĕ. Тен, пĕрле ирттерĕпĕр?

Ульяна (*кĕрет Шур шупăр тăхăннă. Çиелтен тĕрленĕ саппун çакса янă*). Миккита, ĕç пĕтни пĕр сехет ытла, эс халь те кабинетран тухма пĕлместĕнçке... (*Кокшаева асăрхаса.*) Салам, Георгий Михайлович! Ырă кăмăлпа сире ывăлăм менельникне чĕнетпĕр.

Кокшаев. Тавтапуç, Ульяна Васильевна. Манăн хамăн та паян менельник.

Ульяна. Вăт купит аван! Пĕрле ирттерĕпĕр. (*Пинаринпа Кокшаева хулĕсенчен тытса.*) Каяр, каяр. Хреснатте кĕтет.

Кулаççĕ.

Ывăлĕ те, ашшĕне кĕтсе, кантăк умĕнче тапăртатсах тăрать.

Кокшаев. Кам вара Мишăн хреснашшĕ?

Ульяна. Кам пултăр, сирĕн шутпа? Энтип!

Кокшаев. Энтип?

Пинарин. Мĕн калăн, ман ывăлăмăн вăл чăн-чăн законлă хреснашшĕ ĕнтĕ. Анчах хăй йĕркине картине кĕртмесĕр ним тусан та килĕшесшĕн мар. Эпир пурте православнăйсем, тет. Святуй шывĕ ăшне чиксе кăлармаллах, тет. Вара тин хреснашшĕ пулатăп, тет.

Кулаççĕ.

Каяр, Георгий Михайлович. Ак кунта хускатнă сăмаха малалла тăсма майĕ те пур, тен, унăн „тĕлĕнмелле наукине“ тарăнрах тавçăрса илĕпĕр.

Кулса тухса каяççĕ.

Чаршав

## ИККĔМĔШ КАРТИНА

Пĕрремĕш пайри декораци. Киркка Энтипĕн пӳрчĕ. Сулахай кĕтесре кĕнеке этажерки. Сĕтел çинче хаçатсемпе журналсем выртаççĕ.

Володя (*амăшне çип сӳтме пулăшса*). Тепĕр çултан, анне, эп института каятăп...

Анюк. Апла эсĕ те пире пăрахса хăварма шут тытрăн?

Володя. Çук, анне, Сантăр килтен тухса кайрĕ

пулсан та, вăл сирĕншĕн те, маншăн та ялах юлĕ... Эп каятăп.

Анюк. Кам тытса чарĕ ĕнтĕ сире—пурин те халь вĕренес шухăш! Çав Улюк та...

Володя. Улюк мар, анне, Ульяна Васильевна, теççĕ ăна. Çĕрĕçне çĕнĕлле тума вĕренет вăл халь.

Анюк. Кĕнеке тăрăх апла пултăр-ха... Эп ăна, хам пĕлнĕ пек, Улюк тесех чĕнем. Пĕчĕкренпех тарçăра нушаланса пурăнчĕ... Ĕнер ун çине пăхса савăнтăм та, хурлантăм та.

Çенĕкре ура сасси илтĕнет.

Володя. Атте пулас...

Энтип (*кĕрет. Алсине пĕр çĕре ывăтать, картусне—тепĕр çĕре, саппунне сак айне пăрахать. Унтан Володя çине сиввĕн пăхса илет. Анюка хыттăн хушать.*) Таçта çавăнта катăк çăпала выртатчĕ? Илсе тух-ха!

Анюк. Мĕн тума кирлĕ пулчĕ-ши вăл сана?

Энтип. Илсе тух, тенĕ!

Анюк, ĕçне пăрахса, чăлантан лайăх йывăç çăпала илсе тухать.

Катăккине, тенĕ! Катăккине!

Анюк катăк çăпала тупса тухать.

Халь ĕнтĕ çăкăрпа тăвар пар!

Анюк пĕр сăмахсăр пуçламан çăкăр тата тăвар курки илсе тухса сĕтел çине пырса хурать. Энтип пысăк чĕлĕ çăкăр касать, ун çине катăк çăпалапа пĕр ывăç тăвар илсе хурать, унтан Володя умне пырса тăрать.

На, ил! Тен, выçса вилĕн!

Анюк. Ăçта хăвалатăн эс ăна, Энтип?

Энтип. Хăйĕнчен ыйтса пĕл ăçта хăваланине... На, тыт, тетĕп! Эпĕ те хам пурнăçа катăк çăпаларăн тапратнăччĕ.

Володя. Тавтапуç, атте. Колхозра эпĕ эс панă çăпаласăр та пурăнăп... Çиме çăкăрĕ те пулĕ.

Энтип. Илтетĕн-и мĕн калаçать вăл?

Анюк. Ара, килтен хăвалатăнах пулсан, ăçта кайса кĕрĕ ĕнтĕ вăл?

Энтип. Мĕн эс пĕлмен пек лĕпĕртететĕн! Аслине эп хăваларăм-и, е эс хăваларăн? Пурпĕр кайса чикрĕ пуç-

не... Юрать, Сантӑрӗ, Сокол хыҫҫӑн кайса, тӑнне ҫухатрӗ, тесе калӑпӑр... Кӑна халь кам хушрӗ ҫыхланма?

Володя. Никам хушнипе те мар, хам ирӗкпе, атте.

Энтип. Хӑв ирӗкӳпе, тетӗн? Апла пулсан, мӗнле пӗлен, ҫапла пурӑн! Аҫунтан ӳлӗм пӗр шӑрпӑк та ыйтнӑ ан пултӑр. Тухса кай, куҫ ан куртӑр! (*Ҫӑкӑра сӗтел ҫине каялла пырса хурать.*)

Володя. Каятӑп! Анчах килтен тухса кайиччен атте сана пӗр-ик сӑмах каласшӑн... Мана сан пӗр шӑрпӑку та кирлӗ мар. Маншӑн ҫул уҫӑ. Эп пуринчен ытларах сан ҫинчен шухӑшлатӑп.

Энтип. Суятӑн! Унта, ячейкӑра, эсир ман ҫинчен мӗн шухӑшланине лайӑх пӗлететӗп. Сире ман лаша кирлӗ! Ман ӗне! Ман чӑх-чӗпсем! Калайкассинче, ав, коммуна туса юхӑнса кайрӗҫ, халь эсир, кӑпшанкӑсем, кунта коммуна тума тытӑнтӑр пулас...

Володя. Кам элеклесе кӑтартрӗ сана кун пирки?

Энтип. Элеклесе?! Ав, халь ҫеҫ районтан Шарашкин персе ҫитрӗ, ятарласах сӑмах хушрӗ... Ну, тет, значӑт, тет, иккӗшӗ те санран дезертировать турӗҫ-и, тет... Хӑй кулать тата... Што ж, тет, топерича, тет, лашаран пуҫласа юлашки чӑх-чӗп таранччченех леҫсе парасси кӑна юлчӗ, тет. Ҫапла: лашаран пуҫласа юлашки чӑх-чӗп таранччченех!—терӗ. Ку мӗн—ача вӑййи терӗн-и эс? (*Сӗтеле шаккаса.*) Ҫук, луччӗ эсир, пурте тухса кайса, ӗмӗрлӗхех куҫран ҫухалӑр, анчах килтен пӗр япала та памастӑп! Илтрӗн-и?

Володя. Ӑнлан, атте! Колхоза сан ӗнӳ те, чӗппӳ те кирлӗ мар. Лашуна, колхоза кӗрсен, хӑвах ҫавӑтса пырӑн.

Энтип. Вӑт-вӑт! Эс ман лашана ҫавӑтса каяссине кӗтетӗн те... (*Лач сурса.*) Эх, эсир те аҫун пурлӑхне пӗтерме ҫуралнӑ-мӗн!

Володя Ҫук, атте, эп урӑхларах шухӑшланӑччӗ: института вӗренме кайиччен, хам атте-аннепе колхоза кӗрсе, ҫӗнӗ пурнӑҫ тапратса ярас тенӗччӗ... Ҫулталӑк ытла кӗтрӗм сана. Пичче тракторист пулма ӗлкӗрчӗ. Кӳршӗсем те колхоз мӗнне ӑнланчӗҫ... Эсӗ пур, арлан пек, кукӑр-макӑр шӑтӑк алтса, пытанса юласшӑн...

Энтип. Ҫитет! Тӳр ҫул тупрӑн пулсан, тухса ут ман килтен! (*Алӑка уҫса ҫул кӑтартать.*)

Володя амӑшне чуптуса илет те хӑварт тухса каять.

Анюк. Ара, эс вĕсен ашшĕ пулатăн-и? Мĕн хăтланатăн, Энтип. Мĕн хăтланатăн?.. Ăҫта сан чĕрӳ? Ҫуратиччен пĕрмай: „Ăҫта сан ачусем? Хăҫан ҫуратан та хăҫан ҫуратан... Ҫуратман хĕрарăм—хĕрарăм-и вăл", теттĕнччĕ... Виҫĕ ҫул хушши сада туха-туха кĕлтурăм... Чунтан-чĕререн телей ыйтрăм... Турă ман куҫҫуле курчĕ... Ҫуратрăм... Пĕрре кăна мар, ҫичĕ ҫул хушшинче тăваттă ҫуратрăм! Асли вăрҫăра пуҫне хучĕ, тепри чече шатрипе вилчĕ... Иккĕшĕ юмахри паттăрсем пек ҫитĕнсе тăчĕҫ! Ăс енчен те ӳкĕнмелле пулмарĕҫ. Халь эс вĕсене ҫуралнă килтен хăваласа кăлартăн! Мĕн ҫитмест-ши сана, Энтип? Мĕн ҫитмест?

Анюк йĕрет. Энтип, чылай вăхăт тарăн шухăша кайса ларнă хыҫҫăн, Анюка Володя пиншакне тирпейлĕн илсе парать.

Эх, Улатимĕр, Улатимĕр...

Вăраххăн Володя пиншакне ҫĕклесе тухса каять. Энтип пуҫне усса тенкел ҫине кайса ларать. Матви кĕрет.

Матви. Ман килес! Мĕн эс, Энтип, пĕччен пуҫна усса ларатăн?

Энтип (*Матви ҫине пăхмасăр, аллине парса*). Тем, ĕнсене пăрҫа ҫыртрĕ пулас... Антраса кайрăм...

Матви. Пулать, пулать пурнăҫра ун пекки те... Сăмахран, ĕнер...

Сасартăк урамра оркестр „Ҫăпата" юрă кĕввине калани илтĕнет.

Энтип (*пуҫне ҫĕклесе*). Мĕнле митинг ара унта?

Матви. Митинг мар, по-хо-роны!

Энтип. Кама пытараҫҫĕ?

Матви. Кантăкран пăх, хăвах курăн...

Энтип. Чим, сухапуҫне мĕншĕн, тупăк ҫĕкленĕ пек, ҫĕклесе урам тăрăх хăпараҫҫĕ? Малта пыраканĕ Шарашкин мар-и? Вăлах пулас... Мĕн пулнă вара?

Матви. Пытараҫҫĕ.

Энтип. Кама пытараҫҫĕ?

Матви. Тьфу! Кама та кама. Кам вилет, ҫавна пытараҫҫĕ пуль...

Энтип. Эс, Матви, мана ҫакна кала: кам вилнĕ?

Матви. Тупăк вырăнне сухапуҫ ҫĕклесе пынине хăвах куртăн. Значăт, вилекенĕ сухапуҫ!

Энтип. Сухапуҫ?!

Матви. Кам пултăр тата?

Энтип. Ăçта пытараççĕ ăна?

Матви. Ăçта пытараççĕ? Вилсен пĕлĕт çине пытармаççĕ пулĕ-çке...

Энтип. Чим, Шарашкин чăнах та шăтăк алтма пуçларĕ...

Матви. Çапла, çĕр айне пытараççĕ... Тата сан пӳрт умнех.

Урамран сасăсем кĕрлени, уйрăммăнах Шарашкин сăмах калани янăравлăн илтĕнет.

Шарашкин сасси: То-вар-и-щи! Юлташ-сем! Паян эпир, сухапуçне торжественно пытарса, капитализм юлашкине ĕмĕрлĕхех тĕп тăватпăр. Анчах та ăна çĕре алтса чикиччен эпĕ сире со всей ответственностью çакна асăрхаттарса хăварасшăн: кам та кам паянтан малалла уя сухапуç турта кăларать, çавă пирĕн обществăшăн определенно чуждый элемент пулса тăнине кăтартать. Çавăнпа та, юл-таш-сем...

Энтип (*сурса*). Ухмахсем!

Кантăкне çиллĕн шан! хупать Тĕкĕрĕ чанкăр-р ванса каять. Урамран „Çăпатан" хурлăхлă кĕвви илтĕнет. Энтип кантăкне утиялпа хупласа хурать.

Матви. Кăна Шарашкин шухăшласа кăларнă, тет. Музăкине те Шупашкартан ятарласах илтерсе килнĕ, тет.

Энтип. Тĕлĕнмелле! Мĕншĕн-ха вăл ман çурт умнех килсе пытармалла турĕ?

Матви. Мĕнле калас сана, Энтип, Шарашкин вăл çынни, мĕнле калаççĕ-ха çав, „сулахай сулăнчăк" теççĕ-и-ха, çавăн йышшискер. Халăха пăтратма юратать. Ну, ĕнер ăна хытă лектерчĕç вара. Ай, пачĕç!

Энтип. Мĕншĕн?

Матви. Шухăшламасăр калаçать. „Хресченсем хальхи вăхăтра колхоза кĕме мар, колхозран каялла тухаççĕ", тет. „Колхозсене хăвăрт туса пыни çынсене çилентерет кăна", тет. „Кулаксене тĕкĕнме кирлĕ мар..." тет. Тем те каларĕ. Тата темиçе хутчен, тĕслĕх туса, сан ята асăнчĕ... Унтан вара ăна çапрĕç. Вăйлă çапрĕç!

Энтип. Кам пулса ĕçлет вăл халь Шарашкин тени?

Матви. Çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет теççĕ-и...

Энтип (*çамкине кăтартса*). Ăсĕ пур-и е кунта

унăн пачах пушă? Сухапуç вырăнне çĕр айĕнчен трактор тени шăтса тухас çук-çке!

Матви. Ку вăт тепĕр ыйту, Энтип. Чĕлĕм туртса ярар-ха малтан... Тĕрĕссипе каласан, тракторĕ, сухапуç вырăнне шăтса тухнă пекех, пирĕн ума тухса та тăчĕ!

Энтип. Мĕн, эс ларнă çĕртех тĕлĕк курмастăн пуль-çке?

Матви. Чĕлĕмне туртса яр-ха малтан...

Туртаççĕ.

Тĕлĕк мар, Энтип, хам куçпах куртăм.

Энтип. Хăçан?

Матви. Ĕнер, Сĕнтĕрте, пуху хыççăн... Йĕри-тавра халăх кăткă пек явăçать... Пурте хыпаласа пăхасшăн. Эпĕ те, хĕсĕнсе кĕрсе, алла тăсатап... Пăхатăп—трактор çинче санăн асли лара парать!

Энтип. Сантăр?!

Матви. Сантăр çав! Сантăр! Унтан трактор çине леш... астăватăн-и хăв патăнта вилĕмрен çăлăннă вырăса?

Энтип. Смолин?

Матви. Çавă, Смолин Никита Петровичпа пĕрле хăпарать... Сăмах тухса калать...

Энтип. Мĕн тума килнĕ вăл?

Матви. Ăна пирĕн района колхоз тума янă.

Энтип (*чĕлĕмне тепĕр хут тивертсе*). Смолин... Ăна ахальтенех кунта яман пуль çав... Мĕнле вăл, хăратмаллах калаçать-и?

Матви. Колхоза кĕмен хуçалăхсене вăл кăпшанкăсемпе танлаштарчĕ. „Тырă сахал тăватăр", тет. „Индустрине"... Эккей, хамăр пĕлнĕ пек каласан, заводсем тени пулать-ха вăл... „Заводсене çитĕнме чарса тăратăр, тет. Кашни хуçалăх, кăпшанкă пек, хăй шăтăкĕнче пурăнсан, нимĕн те пулмĕ", тет.

Энтип. Юрать, вăл апла каланă пултăр... Эпĕ, сан вырăнта пулнă пулсан, ăна çапла каланă пулăттăм: Патшалăха тырă кирлĕ пулсан, эпир колхозсăр та туса пама пултаратпăр. Анчах писарьсем, çумăр хыççăнхи кăмпасем пек хунаса пырсан, эпир мар, колхоз та тăрантарса çитереймĕ. Ĕлĕк пур, Сĕнтĕрте пĕр писарь ларатчĕ, хальунта икçĕртен те иртрĕ пуль... Пурте çыраççĕ... Иртнĕ шăматкун налог пирки Шупашкарта пĕр курупка пек тăваткал çурта кĕрсе пăхрăм... Ах,

тур! Мӗн чухлӗ унта тата писарьсем! Вӗҫӗ-хӗрри куранмасть вӗт... Пурте ҫыраҫҫӗ... Пуҫӗсене ҫӗклесе те пăхмаҫҫӗ... Ҫыраҫҫӗ... Ай, ҫыраҫҫӗ! Тем ҫыраҫҫӗ. (*Сурать.*)

Эрхип (*чупса кӗрет*). Ах, Матви, сана шыраса хăшкăлтăм... Ялӗпе чупрăм. Эс кунта-мӗн... Кӗрсеммчӗ эс ман хута, Матви! Пӗтереҫҫӗ вӗт! Пӗлтӗрсенче „подкулачник" те „подкулачник", тесе калатчӗҫ.. Паян кулак шутнех кӗртрӗҫ пулас—кил-ҫурта ҫырма пычӗҫ...

Ҫӳречене шаккаҫҫӗ. Инҫетре трактор кӗрленӗ сасă илтӗнет.

Сасă (*урамран*) Энтип! Сире уя тухма чӗнеҫҫӗ.

Энтип. Мӗн тума?

Сасă. Доклад тума ман вăхăт ҫук!

Матви. Колхоза ҫӗнӗрен кӗнӗ май ҫӗр касса параҫҫӗ тенине илтнӗччӗ... Ав тракторӗ те персе ҫитрӗ пулас! Эп чуптарам-ха, Энтип. Соколов кӗтет пуль.

Эрхип. Ах, Энтип, хăть эс те пулсан...

Энтип (*ăшаланса*). Ан турткала-ха! Хамăн та пуҫ ҫаврăнать. (*Тухса каять.*)

Аптранă Эрхип пӗччен тăрса юлать. Часах пӳрте пӗр систермесӗр палламан ҫын кӗрсе тăрать. Вăрăм сухаллă. Ҫӗтӗк сăхман тăхăнса янă. Ҫăпатапа.

Палламан ҫын. Ăҫта Энтип?

Эрхип (*шиклӗн*). Кам эс?

Ахмар. Халь мана кам палласа илтӗр... Эрхип тусăм та маннă иккен...

Эрхип. Ахмар? Ăҫтан эс?

Ахмар. Тс-с-с! Мӗн эс сӗнксе тăратăн кунта? Е татах ҫаратма шут тытрăн?

Эрхип. Ах, ан шарласамччӗ, Ахмар... Ахаль те пӗтерчӗҫ...

Ахмар. Пӗтерчӗҫ пулсан, халех уя тухса, ҫил-тăвăл кăларас пулать! Мӗн, чӗтретӗн-и? Эх, ҫемҫеккей! Пăру хӳри! Ҫава картине илсе кайса чикессе кӗтетӗн-и? Самани каллех пирӗн еннелле ҫаврăна пуҫларӗ... Эп ахальтен килнӗ тетӗн-им? (*Йӗри-тавра асăрханса пăхса ҫаврăнать.*) Итле, чӗррӗнех парăнас пулмасть, Эрхип. Каяр!

Эрхип чарăнсарах тăрать.

Асту, хушнине тумасан, санăн вăрă-хурахла ӗҫӳсене пӗтӗм ял умӗнче кăтартса парăп. Ун чух санăн ик хут тирне сӗвӗҫ...

ЧАРШАВ

## ВИҪҪЁМЁШ КАРТИНА

Уй. Сылтӑм енче аякра Упакасси ялӗ курӑнать. Ял вӗҫӗнчен пуҫласа уй варрине ҫитиех кукӑр-макӑр тарӑн ҫырмасем тӑсӑлса выртаҫҫӗ. Мал енче, унта-кунта, мишавай юписем курӑнаҫҫӗ. Сулахаялла вӑрман хӗрри курӑнать.

Хӗвеллӗ кун. Тӳпере тӑри юрлани илтӗнет. Ял енчен колхоз председателӗ Соколов тата Мишавай, Ульяна, Матвипе Митрухха колхозниксем калаҫса килеҫҫе. Ульяна ҫӗнӗлле тумланнӑ, косынкӑпа. Аллинче рейкӑпа вешка. Матви штатив ҫӗкленӗ, Митрухха—икӗ пӗчӗк ещӗк.

Мишавай (*вӑрӑм, хыткан ҫын. Хура куҫлӑхпа. Вӑрӑм сӑмсаллӑ. Шӳт туса калаҫма юратаканскер. Пӗлӗтелле пӑхса*). Эй, трил, трил! Уҫтук качча каяс пулсан, Кирук авланас пулсан, ҫӳлелле вӗҫ!

Ульяна. Кирилл Романч, мӗн эсир, ҫӗнӗрен авланма шухӑшламастӑр пуль-ҫке?

Мишавай. Ҫамрӑк чухнехине аса илтӗм, Ульяна Васильевна. Уҫтука качча иличчен, час-часах уя тухса, пӗрмай ҫапла ыйтаттӑмччӗ...

Соколов. Вырӑна ҫитрӗмӗр, Кирилл Романч.

Мишавай. Ҫитрӗмӗр пулсан, тӑри ҫинчен калаҫасси пӗтрӗ. Ҫапла пуль, Матвей Ильич?

Матви. Ҫапла ӗнтӗ, ӗҫе ҫитнӗ-тӗк, ӗҫе тӑвасах пулать.

Мишавай. Тӗрӗс! Сӑмаха пӗлсе калаҫакан ҫын эсир... Ульяна Васильевна, парӑр-ха карттӑна.

Ульяна планшетран карттӑ кӑларса парать. Пӑхаҫҫӗ.

Так, так... Пиллӗкмӗш квадрат... Пирӗн сире ҫӗнӗрен аллӑ пилӗк гектар касса пама тивет.

Соколов. Аллӑ пилӗк те ҫитмӗл пилӗк сотых...

Мишавай. Тата кам кӗчӗ?

Соколов. Киркка Энтипӗн ывӑлӗ, Володя.

Мишавай. Пӗччен пурӑнаканскер-и?

Соколов. Ҫук, ашшӗнчен уйрӑлса.

Мишавай. Значӑт, раскол! Скандаллӑ ӗҫ ку!

Соколов. Ма? Пуху ӑна ӗнер хапӑл тусах йышӑнчӗ.

Мишавай. Юрать, апла пулсан, аллӑ пиллӗк те ҫитмӗл пилӗк сотых пултӑр... Ульяна Васильевна, хӑвӑртрах теодолита вырнаҫтарӑр-ха.

Ульяна ещӗкрен теодолит кӑларса штатив ҫумне ҫирӗплетет. Ял енчен пӗр-ик хутчен трактор кӗрлени илтӗнсе каять.

Çапла, тейěпěр... Апла эсир паян халăха тракторпа сухаласа кăтартасшăн?

Соколов. Смолинпа Никита Петрович ăна çавăнпа ярса пачěç те пире.

Мишавай (*теодолит çумěнчи астроном трубине тасатса*). Чим, манăн та пěр идея пур! Колхозăн çěнě чиккине тракторпа касса парсан, мěнле пек, сирěн шутпа, председатель юлташ?

Соколов. Сěнěвě аван... Анчах халăх ялěпех тухса килсен, чăрмантармě-ши сире?

Мишавай. Ăçта курнă эсир халăх чăрмантарнине? Халăхпа ěçлеме савăнăçлăрах пулě.

Соколов. Апла пулсан, Дмитрий Панкратович, Сантăра кайса кала-ха, тракторěпе кунта килтěр.

Митрухха. Тракторпа суха тума пуçларăмăр. Вăт пурнăç кайрě!

Мишавай. Ульяна Васильевна, ориентирсене кăтартма хатěрленěр.

Ульяна. Халех!

Вешкăпа рейкăна тата пěчěк ялавсене илсе сулахаялла тухса кайрě. Соколовпа Матви пирус чěртрěç.

Мишавай (*астроном трубипе пăхса*). Индюкěсене хăйсене чěнтерне-и, Соколов юлташ? Вěсемсěр касса пама пултараймастăп.

Соколов. Мěн терěр эсир, Кирилл Романч? Тем, сирěн çěнě сăмахăра ăнлансах илеймерěм...

Мишавай. „Индюксене", терěм. Паян ку сăмаха хам та пирвайхи хут Шарашкинтан илтрěм.

Соколов. А-а! Халь ěнтě ăнлантăм. Пурне те чěнтерме хушнăччě-ха.

Матви. Каларěç, каларěç... Хам хăлхапах илтрěм. Ав, килеççě те!

Ял вěçěнчен Эрхиппе Энтип, Сăпани тата пěр ушкăн çын килни курăнать.

Ульяна сасси (*аякран*). Çитет-и?

Мишавай (*теодолит винтисене пăркаласа*). Сулахаярах! Тата сулахаярах! Так, так... Стоп! (*Карттă çине ÿкерет, унтан татах пăхма пěшкěнет.*) Халь ěнтě сылтăм еннелле икçěр метр куçăр... (*Ик пÿрнине кăтартса.*) Икçěр! Икçěр, тетěп! (*Энтип еннелле пăхса*). Здрасте, граждане!

Энтип тата унпа пӗрле тӑракансем чӗнмерӗҫ. Мишавай каллех теодолитпа ӗҫлеме тытӑнчӗ.

Ульяна сасси. Ҫитет-и, Кирилл Романч? Тепӗр аллӑ метртан ҫырмана каясси кӑна юлать!

Мишавай. Тӗрӗсрех каласан, аллӑ мар, аллӑ пилӗк метр... Пилӗк метр каялла! Так, так... Стоп, Ульяна Васильевна! Стоп! Лартӑр ялавне! (*Карттӑ ҫине ӳкерсе.*) Илтрӗр-и, Соколов юлташ? Ҫырмана каясси пиллӗкмӗш квадратра мӗн пурӗ те аллӑ пилӗк метр кӑна юлчӗ, темелле.

Энтип (*Мишавай умне пырса тӑрать*). Мӗн эс, ку сӑмаха пат татсах каларӑн-и, е...

Мишавай (*куҫлӑхне ҫӗклесе*). А-а! Эсир килнӗҫке... Здрасте, здрасте!

Энтип. Эс мана ҫакна кала: мӗнле ҫырмана тӗксе яма килтӗн кунта?

Сӑпани. Янахран тыттарас пулать ӑна! Пирӗнтен кулма килнӗ вӑл...

Эрхип. Кулма кӑна-и? Пӗтерме килнӗ!

Мишавай (*ик утӑм каялла чакать*). Эп сире нимӗн те каламарӑм-ҫке... Эп сире халь кӑна каласшӑн: колхоза кӗменнисем валли пиллӗкмӗш квадратра акмалли ҫӗр ҫырма хӗррине кӑна тӑрса юлчӗ... Улттӑмӗш квадратра тӳперех юлать. Ӗненместӗр пулсан, метрпа виҫсе кӑтартма пултаратӑп. Соколов юлташ, рулеткӑна хатӗрлӗр-ха!

Соколовпа Матви ещӗкрен пысӑк ҫаврака хурҫӑ лента туртса кӑлараҫҫӗ те сӳтме тытӑнаҫҫӗ.

Энтип. Чим, эс чӑнах ҫырмана илсе каясшӑн-и мана?

Мишавай. Каҫарӑр, гражданин, эп сире пирвайхи хут куратӑп. Нихҫан та узурпатор пулман, пулма та шухӑшламастӑп.

Энтип. Пӑрах сӑмаха кукӑр-макӑр вылятса калаҫма! Эс тӳррипе кала: ӑҫта ҫӗр паратӑн мана?

Сӑпани. „Мана“ та „мана...“ Эс, Энтип, пирӗншӗн те калаҫ!

Эрхип. Мӗн калаҫса тӑмалли пур унпа, мӑйне тытса пӑрмалла!

Соколов. Хуллентерех, Эрхип!

Мишавай. Ма каплах хупӑрласа илтӗр эсир мана? Чи малтан эпӗ колхоза касса паратӑп, кайран...

Энтип. Итле! Эп ҫырма хӗррине каймастӑп.

Энтиппе килнӗ хӗрарӑмсем. Каймастпӑр!

Мишавай. Юлташ, эсир йӑнӑшатӑр пулас... Эпӗ сирӗн ҫырмусемшӗн (*кача пӳрнине кӑтартса*) ҫакӑн чухлӗ те айӑплӑ мар. Ку таврара эпӗ мӗн пурӗ те пӗр хутчен кӑна пулнӑ. Паянхипе—иккӗмӗш хут... Ҫырмасем сире килӗшсех каймаҫҫӗ пулсан, вӗсене чарас пулать. Эсир кунти ҫынах пуль-ҫке? Ҫапла, сирӗн чармалла та!

Эрхип. Колхоз чартӑр!

Энтип. Эп ку вырӑнтан ниҫта та тапранма шухӑшламастӑп.

Мишавай. Мӗн пулса тухать-ха капла, сирӗн шутпа? Колхоз, е тепӗр майлӑ каласан, халӑх ҫырмана кайтӑр... А эпӗ пӗччен, тӳпере ларса юлса, тӑри пек юрӑ юрлам... Ҫапла-и?

Энтип. Эп хама хам ирӗк!

Соколов. Камран ирӗк эс, Энтип? Халӑхран-и? Ҫӗрӗ, сан шутпа, камӑн?

Энтип. Эс малтан тырӑ туса пӑх, ун чух калаҫӑпӑр санпа.

Соколов. Тыррине ӑна тӑватпӑрах, Энтип!

Ульяна таврӑнать. Трактор кӗрленӗ сасӑ ҫывхарнӑҫемӗн ҫывхарать.

Мишавай. Ульяна Васильевна, халь ӗнтӗ эсир, трактор ҫине ларса, ҫӗнӗрен палӑртнӑ лини тӑрӑх шарлаттарса тухӑр! Эп кусем валли ҫӗр виҫме каятӑп.

Ульяна. Юрать! *(Каять.)*

Трактор кӗрлесе килни тата хыҫалта халӑх савӑнӑҫлӑн шавлани илтӗнет. Вӑрман енчен вӑрттӑн Ахмар чупса тухать, уйрӑм йывӑҫ хыҫне пытанса, сӑнаса тӑрать.

Энтип (*Мишавай ҫулне пӳлсе*). Чим, Мишавай юлташ. Улатӑр еннелле те колхозсем пулмалла пек-и?

Мишавай. Мӗн эсир, ҫӗнӗ ҫӗре куҫса каяс теместӗр пуль те? Ҫапла, Улатӑр енче те колхозсем тума тытӑнчӗҫ.

Энтип. Чулхула еннелле?

Мишавай. У-у, унта пирӗнтен те малтарах тытӑнчӗҫ! Соколов юлташ, рулетка хатӗр-и? Ну, халь ӗнтӗ сире касса парас тетӗп. Кайрӑмӑр.

Сӑпани (*Соколов ҫулне пӳлсе*). Пырна лармалла пултӑрах сана, Петток!

Эрхип. Татса пăрахас лентине!
Мишавай. Мĕне пĕлтерет ку?
Соколов. Ан тивнĕ пултăр!
Матви. Пăрăнăр çул çинчен!

Эрхип каялла чакать. Мишавай, Соколов, Матви тухса утаççĕ. Катаран трактор кĕрлесе иртсе каять. Ун хыççăн—Антоша, Ульяна, Митрухха, Наçтук, Володя тата ыттисем те. Пĕрисем картузĕсене çӳлелле ывăтаççĕ, теприсем: „Путиловец! Путиловец!" тесе кăшкăраççĕ. Энтип, куç-пуçне чарса пăрахса, трактор иртсе каяс çул çинче тăрать.

Сцена мал енчен Смолинпа Пинарин утса тухаççĕ. Аллисенче плащ. Халăх тракторпа пĕрле иртсе пынине курсан, иккĕшĕ те картузĕсене хывса кăмăллăн пăхса тăраççĕ.

Смолин. Ак ĕнтĕ, Никита Петрович, Ленин ĕмĕтленни Упакассине те çитрĕ.

Пинарин. Çĕнĕ пурнăç пуçланать, Андрей Иванович.

Смолин. Чим, Энтип Кирилч мар-и ку? Мĕн вăл, трактортан хăраса ӳкнĕ пек, каялла чакать.

Пинарин. Çук, хăранипе мар, тĕлĕннипе пулас...

Сасăсем. Энтип! Пăрăн çул çинчен! Таптаса кайĕ...

Смолин. Энтип Кириллович!

Энтипе алăран вашаватлă тытрĕ, ыталаса аякка илсе тăратрĕ, Ахмар, чылайччен йывăç хыçĕнчен вăрттăн сăнаса тăнă хыççăн, кăкăр умĕнчи кĕсъерен кĕпçе пăшал туртса кăларчĕ, Пинарин çине тĕллесе персе ячĕ, çавăнтах вăрмана кĕрсе çухалчĕ. Пинарин урăран кайса ӳкет.

Смолин. Кам печĕ?!

Хускалнă халăх трактор патĕнчен каялла чупса тухрĕ. Смолин, хăйĕн çиелти шурă кĕпине çурса, Пинарин суранне çыхать.

Митрухха. Вăрман енчен печĕç, вăрман енчен!
Соколов. Вăрмана!

Матви Пинарин пуç айне хăйĕн пиншакне хутлатса хурать.

Смолин. Хуллентерех, хуллентерех...

Соколов, Митрухха, Антоша, Сантăр чупса тухса каяççĕ.

Ульяна (*Мишавайпа пĕрле чупса кĕрет*). Ах, Никита!.. Вĕлерчĕç... (*Пуçĕнчен ыталать.*)

Шарашкин (*хашкаса чупса тухать, Пинарин умне пырса тăрать*). Каларăм вĕт сире тĕкĕнме кирлĕ марччĕ, тесе. Çилентеретпĕр халăха...

Смолин. Матвей Ильич, халех лаша кӳлсе килĕр. Хăвăртрах!

Соколов, Митрухха, Антоша, Сантăр Ахмара тытса кĕреççĕ. Эрхип вăрттăн тухса шăвăнать. Халăх Ахмара часах палласа илеймест-ха.

Наçтук. Кам вăл?

Смолин (*Ахмар умне тăрса, куçран витĕр пăхать*). Кам эс? Мĕнле çын? (*Сухалĕнчен тытса çиллĕн туртать, çыпăçтарнă сухалĕ шарт уйрăлать.*)

Халăх. Ахмар?! Ахмар!

Наçтук. Ы-ых, ылханлă йăх! Çакăнтах çĕр çăттăр сана!

Энтип (*чылайччен чĕнмесĕр тăнă хыççăн Ахмар умне пырса тăчĕ*). Мĕн тума кирлĕ пулчĕ ку сана? (*Пĕтĕм вăйпа Ахмара питĕнчен çупса ярать*).

Шарашкин. Класс тăшманĕпе нумай калаçмаççĕ! Ăна ак çапла...

Кĕсйинчен наган туртса кăларса Ахмара персе пăрахать.

Ч А Р Ш А В.

## ТĂВАТТĂМĔШ КАРТИНА

Энтипĕн килхушшийĕ. Кивĕ чăвашла хапха. Сылтăм енче пӳрт умĕ курăнать. Хапха тепĕр енче кĕлет вĕçĕ палăрать. Унăн çийĕ улмуççи турачĕсем айне пулнă. Килхушши варринче пĕчĕк сĕтел.

Энтип (*кĕлет кĕтессинчен пахчаналла*). Чип, чип, чип-чип... Кша! Ку ют автан ăçтан килсе ерчĕ тата? Кша! Чип, чип-чип...

Урамра урапа иртсе кайни, унтан Матви сасси: „Кайса тăвар лашине!"—тени илтĕнет.

Матви. Мĕн эсĕ, Энтип, сывах-и?

Энтип. Çӳретпĕр-ха... Астусах тăмасан акнă йăрансене чаваласах тăраççĕ, катăршнисем! (*Карта урлă алă тытаççе.*) Ман Володя санпа ларса килмерĕ-и пуль те?

Матви. Килмерĕ. „Вăхăт çук, Мускава каймалла", терĕ. Салам каласа ячĕ—иксĕре те. Тепĕр уйăхран килес пек каларĕ...

Энтип. Асăнчĕ апла?

Матви. Ӳпкелешни палӑрмарӗ. Шанать вӑл... „Ӑнланса ҫитсен, колхоза кӗретех“,—тет.

Машина сасси.

Энтип. „Ӑнланса ҫитсен“, тет апла... Леш, машинпа килекенни, кам пулчӗ ара?

Матви. Смолин пулас.

Энтип. Ывӑнмасть. Таҫта та ҫитме ӗлкӗрет. Кӗрсе ларсам начаслӑха. Володя килет тесе, сӑра та тунӑччӗ... Кӗр-ха.

Матви. Кӗрсе тӑрас мар-ха, каҫхине килсе ларӑп.

Энтип. „Ӑнланса ҫитмен“ тесе шухӑшлать апла?..

Матви. Ӑнланнӑ пулсан, мӗн тытӑнса тӑмалли пур, Энтип. Чӑпӑк Павӑлӗ те заявлени панӑ курӑнать. (*Каять.*)

Энтип (*кӗсйинчен ҫырнӑ хут кӑларса*). Эккей, кӑтартса пӑхас тенӗччӗ... Кӗмерӗ. (*Крыльца картлашки ҫине кайса ларать. Хутне каялла чикет.*) Эх, мӗн ҫитмерӗ-ши леш шуйтанне? Тен, вӑл ҫав кун пӑшал персе хӑтланман пулсан, мана тӳперех касса пама хушатчӗ... Вырӑс пулсан та, хӑйне таҫти чӑваш пулӑшнине манман. „Спасибо, Энтип Кирилч“, тет. „Сире асӑнсах килтӗм“, тет. Калаҫма кӑна пуҫланӑччӗ... Ак халь ыйтса пӑхатӑп та, вӑл мана: „Ну, Энтип Кирилч, мӗнле ана килӗшет сана, ҫавна ил!“ тесе калассине кӑна кӗтнӗччӗ... Таҫтан леш эсремечӗ пац! персе ячӗ те пӗтӗмпех ӗҫе пӑсса пӑрахрӗ. Эх, Микитта, Микитта... Тур пулӑштӑрах ӑна хӑвӑртрах ура ҫине тӑма...

Урамра ҫамрӑксем купӑспа такмак каласа юрлани илтӗнет. Энтип майӗпе ура ҫине тӑчӗ, хапха патнелле пычӗ, хушӑкран пӑхма пуҫларӗ.

Пӗрре... иккӗ... виҫҫӗ... пиллӗк... ултӑ... Ҫиччӗ!... Миҫе хутларӗҫ паян! Турттараҫҫӗ те турттараҫҫӗ... Пӗлтӗрхи тырра турттараҫҫӗ! Юрласах тырӑ тума пуҫларӗҫ... Турри те колхоз майлӑ ӗҫлеме пуҫларӗ-мӗн! (*Каллех кӗлет умне кайса ларать.*)

Сокол таврашӗсен ӗлӗк хӑйсене ҫиме мар, шӑшилӗх те пулман, темелле... Халь лавӗ-лавӗпех турттарма пуҫларӗҫ. (*Кӗсйинчен каллех хутне туртса кӑларать.*) Колхо-з... Мӗн тумалла-ши? Кӗрсен ӗнтӗ лашине те парас пулать... Вӑрлӑхлӑх тыррине те памал-

ла... Урапине те парас пулать... Кӗлетне те уҫса пама хушӗҫ... Тарантаспа ҫӳресси те пулмӗ...

Урампа машина иртсе каять, Энтип, хапха патне пырса, хушӑкран пӑхать.

Ак тата машина! Кунашкал машинсем чупма пуҫласан, тарантасӗ кирлех те пулмӗ. Уйра тракторсемпе ӗҫлеме пуҫласан, лашана та ҫӑмӑл пулӗ. Пӗрре шухӑшласан, халӑхпа пурнӑҫ пулӗ, пӗччен сӳнсе ларасси те пулӗ. Колхо-оз... Кӗмеллех пулать пуль.

Кӗлет патӗнчи сак ҫине кайса ларать.

Юрать, тата лаши тупӑннӑ пек сӑмах илтӗнчӗ... *(Ларсан-ларсан.)* Чим, сӑра ӗҫсе пӑхас мар-и? Арӑма кӗтсе хырӑмӗ те кӗрлетме пуҫларӗ... Чим, мӗнле кун паян? Юнкун мар-и? Мӗн тӑвас? Капла пӗрмай типӗ тытса хытса та кайӑн... Тен, ӗҫсе пӑхнӑшӑн пысӑк ҫылӑхах пулмӗ... *(Сӑхсӑхса.)* Ӗҫес-ха! *(Ӗҫнӗ хушӑра кӗсйинчен каллех ҫырнӑ хут татӑкӗ туртса кӑларать.)* Эккей, малтан кӑтартса пӑхас тенӗччӗ... Кӗмерӗ... Арӑм лашине тупса килсен, тен...

Сасартӑк Энтип килхушшине Шарашкин, ял Совет председателӗ Палеев тата пунетти килсе кӗреҫҫӗ. Шарашкин аллинче хут папки. Палеев чернил кӗленчипе ручка ҫӗкленӗ, пунетти—пӗр ҫыхӑ ҫӑра.

Шарашкин. Алмаскин Энтип Кириллович?

Энтип. Ҫавӑ...

Шарашкин *(килхушши йӗри-тавра пӑхса ҫаврӑнать).* Пуҫлар! Палеев! Эсӗ недвижимӑйне кӑтартса тухатӑн, пунетти—движимӑйне...

Энтип. Мӗне пӗлтерет ку?

Шарашкин. Эсӗ мӗн, тилӗ пек пытанса юлас терӗн-им? Уйра пӑлхава пуҫласа яраканӗ кам пулчӗ, э? Кама кура ҫур яла яхӑн колхоза кӗмесӗр тӑрать, э?

Энтип. Мӗн тӑвасшӑн эсир манпа?

Шарашкин. Раскулачить тӑватпӑр сана паян. Ӑнланмалла пек-и?

Энтип. Чимӗр-ха, кулачить тумалӑхах мӗн пур вара ман?

Шарашкин (*сӗтел хушшине кӗрсе ларать, Палеев чернил кӗленчи лартса парать*). Пуҫлар! Мӗн пурри описать тунӑ чухне курӑнӗ... Тытӑнар!

Палеев. Пӳрчӗ—пӗрре...

Шарашкин (*ҫырса*). Пĕрре, тейĕпĕр. Ампарĕ?

Палеев (*пахча еннелле утса*). Иккĕ.

Шарашкин. Иккĕ?!

Энтип. Хĕрхенсемĕрччĕ... Хам алăпа тунă вĕт.

Шарашкин. Дальше!

Палеев. Шурă лаҫ пĕрре!

Шарашкин. Охо! Шурă лаҫ та пур-и? Настоящий кулак-мĕн!

Палеев (*татах та катаран*). Кунта тата хура мунча пур! Мĕн тумалла унпа?

Шарашкин. Описать!

Палеев. Тен, тĕкĕнес мар?

Шарашкин. Мунчаран пӳрт тума пултарать вăл... С корнем выкорчевывать тăвас пулать! Тата мĕн пур унта недвижимăйсенчен?

Урамра юланут тăпăртатса килни илтĕнет.

Палеев (*ҫуртсем хыҫĕнчен тухса*). Урăх курăнмасть.

Шарашкин. Халĕ движимăйсенчен тытăнар...

Анюк (*килхушшине кĕнĕ-кĕменех, савăнăҫлăн*). Тупăнчĕ, Энтип, тупăнчĕ!

Энтип (*хирĕҫ чупса пырать*). Хăваласа яр каялла! Хаваласа яр... Хăвăртрах!

Анюк. Мĕн?

Энтип. Лашине каялла хăваласа яр, тетĕп сана!

Анюк. Ухмаха ермен пулĕ-ҫке эс, Энтип?

Энтип. Эх, эсĕ те!..

Хулă илсе, урама чупса тухать, пĕр-ик хутчен лашине чашлаттарса илет, лаши кĕҫенсе сиккипе тапранса кайни илтĕнет.

Шарашкин. Алмаскин! Куншăн эсĕ головой отвечать тăватăн... Эй, Палеев! Пунетти!.. Халех ҫурчĕсене ҫăрапа питĕрсе тухăр, унсăрăн вăл пĕтĕм пурлăха тартма пултарать...

Ҫурчĕсене питĕрсе илеҫҫĕ.

(*Энтипе*). Ĕне пур-и?

Анюк. Мĕн тума кирлĕ пулчĕ сире пирĕн ĕне?

Шарашкин. Сирĕнтен ыйтмаҫҫĕ! Ĕнӳ ăҫта, Алмаскин?

Анюк. Лаши унăн пултăр, ĕни манăн-çке... Мĕн тума кирлĕ вăл сире? Сĕт çиесех килет пулсан, халех кăларса лартма пултаратăп.

Энтип кĕсйинчен çырнă хут татăккине туртса кăларать те Шарашкин умне хурать.

Шарашкин (*каялла тавăрса*). Колхоза кĕрсе, тилĕ пек, çăлăнса юлас терĕн-и-ха? Кая юлтăн, Алмаскин! Палеев, пăх-ха, учет кĕнеки тăрăх миçе ĕне унăн?

Палеев. Иккĕ.

Шарашкин. Чăх-чĕп?

Палеев. Кăна кăтартман вара.

Энтип. А-а-а! Сире ман чăх-чĕп те кирлĕ-и? На, тытăр! тытăр!.. Тен, совет пуйсах кайĕ-и?

Вăрăм патак илсе çуртсем хыçне çиллĕн кĕрсе каять. Часах унтан чăхсем çуйхашни тата карта урлă вĕçсе каçни илтĕнет, часах Смолинпа Соколов килсе çитеççĕ.

Смолин. Мĕн пулнă кунта? Пĕтĕм урамĕпе чăхчĕп çуйхашса вĕçет....

Анюк. Вĕçмесĕр ара, çăхансем пек сăхма хăтланса тăраççĕ те... (*Смолина.*) Ах, эсир курман-илтмен çын мар, хута кĕрсемĕрччĕ. (*Йĕрет.*)

Смолин (*алă парса*). Питех те хавас сире курма, Анюк инке. (*Шарашкина.*) Мĕн тăватăр эсир кунта?

Шарашкин (*Энтип кил-çурчĕн опиçне кăтартса*). Раскулачить тăватпăр, Смолин юлташ. (*Энтип çине шĕвĕр пўрнипе тĕллесе.*) Сирĕн умăрта явно социально опаснăй элемент!

Смолин (*хута чар-р çурса пăрахса*). Тен, эсир хăвăр, чăнах та, çавнашкал элемент, Шар-аш-кин! (*Килхушши алăкне яр уçса пăрахса.*) Халех тасалнă пултăр кунтан!

Шарашкин. Ах, эсир кулаксемпе подкулачниксене хўтĕлеме килнĕ-и? Куншăн парти умĕнче ответ тытатăр!

Смолин. Кам мĕнле ответ тытмалли çинчен эпир сирĕнпе тепĕр çĕрте калаçăпăр.

Шарашкин çиллĕн килхушши алăкĕ патнелле утать, ăна хирĕç чекист кĕрет.

Чекист (*алăка хупса*). Хăшĕ пулать кунта Шарашкин?

Шарашкин. Эпӗ. В чем дело?

Чекист. Российӑн Федерациллӗ Совет республикӗ ячӗпе сире арестленӗ шутлатӑп, гражданин Шарашкин.

Шарашкин. Протестую! Кӗсъере манӑн парти билечӗ пур. Арестлеме сирӗн нимӗнле правӑ та ҫук!

Чекист. Руки вверх! (*Шарашкин кӗсйинчен хӗрлӗ питлӗ пӗчӗкҫӗ билет туртса кӑларать*). Ку вӑл саншӑн парти билечӗ мар—ширма кӑна. (*Смолин патне пырса*). Пушнарти куштансен пӑлхавне пуҫарса яраканӗ вӑл пулнӑ... (*Шӑппӑн.*) Пинарин чӑтаймарӗ.. Ун чухнех Шарашкин ӑна вӗлерме Ахмара ӗскӗртнӗ-мӗн...

Смолин. Халь ӗнтӗ пурте паллӑ.

Шарашкин. Провокаци-я!

Чекист. Хуллентерех, Шарашкин, хуллентерех... Ҫумра пӑшал пур-и?

Чӗнмест. Чекист Шарашкинӑн атти ашӗнчен револьвер туртса кӑларать.

Ахмара персе пӑрахса ҫӑлӑнас терӗн-им? Кашкӑр кашкӑртан хӑранӑ... Тепре персе ярасран хӑраса, вӑл вилнӗ пек пулса выртнӑ...

Шарашкин. Подлец!

Чекист. Утӑр!

Илсе тухса каять.

Смолин (*чылай вӑхӑт пӗр сӑмахсӑр пуҫне усса тӑнӑ хыҫҫӑн. Палеева*). Эсир кам пулатӑр?

Палеев. Ял Совет председателӗ. Палеев.

Смолин. Эсир тата?

Пунетти. Пунетти.

Смолин. Энтип Кирилччӑна халех ҫурчӗсене уҫса парӑр.

Соколов. Мӗн хытса тӑратӑр? Уҫӑр тенӗ сире.

Энтип. Турри куратех-мӗн.

ЧАРШАВ

# ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ

Сылтăм енчи колхоз вити умĕ тата вите ҫине хăпарса анмалли чикмек курăнать. Унтах пысăк чугун лапташки ҫакăнса тăрать. Карташ тулашĕнче тулă уйĕ тинĕс пек сарăлса выртать. Витерен кунтарах ик кустăрмаллă урапа ларать, ун ҫинче шыв пички. Вăхăт каҫхи хĕвел ҫути сӳнес умĕн. Аякра комбайн кĕрлени тата хирте ĕҫлекенсен юрри илтĕнет.

Вите хыҫĕнчен Энтиппе Анюк юнашар утса калаҫса тухаҫҫĕ. Анюк аллинче шурă тутăр ҫыххи.

Анюк (*ҫыххине салтса пăхать*). Ҫак хуран куклине те ҫисе ямарăн пулать... Сар ҫупах ăшаланăччĕ.

Энтип. Ытла тутлă пĕҫеретĕн те... Пĕр кукăль ҫисех тăрантăм.

Анюк. Ҫывăрма кĕҫĕр киле пымастăн апла?

Энтип. Ҫук, ҫук. Анюк пике, тем каласан та пымастăп.

Анюк. Лашасем патĕнчен тухма пĕлместĕн ҫав... Кунĕн-ҫĕрĕн...

Энтип. Ăҫтан ыйхă килтĕр-ха! Паян манăн Сивка тихашка туса памалла... Пĕлетĕн-и, вара манăн утлă ҫар шучĕ миҫене ҫитет?

Анюк. Миҫене-ши?

Энтип. Ҫĕр ҫитмĕле, Анюк!

Анюк. Пуйса кайрăн апла. Ĕлĕк пĕр лаша тытаттăнччĕ...

Энтип. Мĕн калăн, Смолин пуйтарчĕ. Сирĕн, тет, колхозра лаша хуҫи пулмалла тă, тет. Чăн та, лаша хуҫи туса хучĕҫ. Мĕнле пек, капла юратăн-ши эс мана, Анюк?

Анюк. Кай, малтан тихашкине йĕркеллĕ кĕтсе ил. Атту туман тиха пилĕкне хуҫатăн... (*Каять.*)

Энтип. Вăл пулатех-ха! (*Кĕсйинчен сехет кăларса пăхать.*) Тоня! Тоня-а!

Витерен çамрăк та хитре тирпейлĕ хĕр чупса тухать.

Мĕнле? Палармасть-и?

Тоня. Питĕ канлĕ тăрать. Кăштах пуçне усрĕ, ачашшăн пăха-пăха илет...

Энтип. Хăмласа парас умĕн кирек хăçан та çавнашкал пулакан. Юрать, эпĕ хамах сыхлăп, эсĕ типĕ улăм хатĕрле.

Энтип витене кĕрсе каять.

Тоня (*вите хыçнелле кайма тăчĕ, анчах машина кĕрлесе килнине илтсе, çатан карта çине улăхса тăчĕ*). Сантăр мар-ши?

Часах Соколовпа Смолин кĕреççĕ.

Соколов. Андрей Иванович, ăна хăйне кунта чĕнтерес-и?

Тоня. Энтип Кирилч ерçмест!

Смолин. О-о, помощникĕ кунта-çке... Здравствуйте, Антонина Ивановна!

Тоня. Тоня тесен те юрать...

Смолин. Апла вăл пире паян йышăнма пултараймасть... Тен, Соколов юлташ, каялла çаврăнса кайма тивет?

Тоня. У-у, эсир, Андрей Иванович, чăвашла самаях ăнланма пуçларăр-мĕн!

Смолин. Никита Петрович вырăнĕнче ĕçлетĕп те, пĕлесех пулать ĕнтĕ... Мĕнле, йышăнĕ-ши вăл пире?

Тоня. Андрей Иванович, каçарăр, эпĕ сире унашкал каласшăн марччĕ. Йышăнасса вăл сире хапăл тусах йышăнать-ха, анчах халь кунта тухма пултараймасть.

Соколов. Мĕн пулнă?

Тоня. Сивкка хăмлать! Энтип Кирилч хăйĕн ывăлĕсене те унашкал кĕтсе илмен пуль—хўри вĕçĕнчен уйрăлма та пĕлмест.

Кулаççĕ.

Смолин. Колхоза татах та тепĕр ăйăр çитĕнтерсе парасшăн ĕнтĕ... Ну, мĕнле шухăшлатăн, председатель юлташ, райком секретарьне кĕсре хăмланине пĕлни

çылăхах пулмĕ, е? Кĕрсе пăхар! Тен, Энтип Кирилч, пире те тихасем пăхма вĕрентсе ярĕ?

Соколов. Пĕлни вăл чăрмантармасть.

Смолинпа Соколов витене кĕрсе каяççĕ. Тоня вĕсен хыççăн утма тăчĕ, анчах Сантăр сассине илтсен, тăрса юлчĕ. Сантăрпа Антоша килсе çитрĕç, иккĕшĕ те тусанланса пĕтнĕ комбинезонсемпе.

Сантăр. Тоня-а!

Тоня. Мĕн, Сантăр?

Сантăр (*çанăсене тавăрса пичке çумне пырать*). Кил кунта, пуç çине шыв ярса тăр.

Тоня. Шыв ярса тăма кăна пулсан, Антоша та пултарĕ.

Антоша. Эх, Тоня, эс шывпа сирпĕтни Сантăршăн лăпкă та ăшă шывра чӳхеннĕ пекех пулĕ...

Сантăр. Ну, килсем ĕнтĕ, Тоня....

Тоня. Андрей Иванович килчĕ, ман унта пулмалла.

Антоша. Андрей Иванович... Андрей Иванович... Вăл пирĕн патра та пулчĕ, пĕтĕм районĕпех çӳрет. Ăна эс нихçан та хăваласа çитеймĕн.

Сантăр. Эх! Эрнере пĕр хут курсан та калаçма вăхăт çук сан... Ак халь каллех уя таврăнмалла—кĕçĕр çĕрĕпех вырас терĕмĕр.

Тоня. Юрĕ-çке... Уншăнах çиленес мар, Сантăр.

Пичкерен пĕр витре шыв ăсать.

Антоша. Ну вăт, тахçанах çапла кирлĕччĕ те!

Сантăр. Ай, шывĕ мĕн тери илемлĕ!

Антоша. Шывĕ мар, хĕрĕ илемлĕ тесшĕнччĕ пуль эс, Сантăр?

Тоня. Кун пек калаçатăр пулсан, эп халех пăрахса каятăп!

Сантăр. Эс мĕн, Тоня, эпир чăнах кунта шыв курма килнĕ тесшĕн-и?

Антоша. Калаçăр, калаçăр... Эп нимĕн те илтместĕп...

Сантăр (*питне çуса*). Кала, хăçан сăмах паратăн, Тоня? Кĕттерсе вăтăртан ирттерсе ятăн ĕнтĕ эс мана...

Тоня. Пĕрмаях ан хĕрет-ха ман пите...

Антоша. Ан хĕрелтĕр тесен, вăрлас пулать Тоньăна, Сантăр.

Сантăр. Чăнах, кунашкалах турткаланса тăратăн

пулсан, трактор çине лартатăп та пĕтĕм халăх умĕнче кĕрлеттерсе киле илсе кĕрсе каятăп.

Тоня. Шывĕ пĕтрĕ! Пĕтрĕ... Пĕтрĕ...

Сантăр. Çук, тепĕр алтăр тупăнатех унта!

Антоша. Сăмаха вылятса ирттерсе ярас мар, Тоня. Эпир пĕлме килнĕ: хăçан Сантăр чĕрине лăплантаратăн? Шўт тумасăр калатăп: Сантăрăн комбайнĕ тыр вырми пулчĕ...

Тоня. Чарăнăр калаçма! Хăвăртрах тыррине вырса пĕтерĕр.

Сантăр (*ытарайми юратса Тоньăна тытса çĕклет*). Эх, Тоня! Кĕр çиттĕр кăна...

Витерен Энтип, Смолин, Соколов тухаççĕ.

Энтип. Тоня! Кай, Сивкăна типĕ улăмпа лайăхрах шăлса типĕт.

Тоня, Сантăр аллинчен вĕçерĕнсе, витене чупса кĕрсе каять. Сантăрпа Антоша йăпшăнса тухса вĕçтерчĕç. Смолин чунтан кулать.

Соколов. Вăт мĕнле вĕсем тырă выраççĕ!

Смолин. Унсăрăн тыр вырасси пулмасть ĕнтĕ, Соколов юлташ. (*Энтипе алă парса.*) Ну, Энтип Кирилч, майĕпеле кайма хатĕрленĕр.

Энтип. Шухăшлаттаратăр эсир мана, Андрей Иванович... Кайсан-каймасан та, кăна çитĕнтересчĕ-ха.

Смолин. Хитре йăйăр пулмалла пек: малти урисем çўллĕ!

Соколов. Лаша пуласси тихаран паллă.

Энтип. Кăна лайăх çитĕнтерсен, „Жемчугне" Ворошиловне хăйнех парнелесчĕ-ха.

Смолин. Шухăшĕ аван!

Энтип. Тен, сире, Андрей Иванович, колхозăн чи лайăх рысакĕпех ăсатас?

Смолин. Тавтапуç кăмăл тунăшăн. Кĕçĕр эпĕ сирĕн колхозрах пуласшăн-ха. Каймаллах пулсан, хамăн та машини кунтах. Сывă пулăр!

Энтип. Ыр каç пултăр!

Соколовпа Смолин уялла утрĕç.

Энтип (*тем каласшăн пулчĕ, карта урлă*). Чим, Петр Сергеевич!..

Соколов каялла таврăнать.

Энтип. Тырри тупăнмарĕ пуль те?

Соколов. Ан та кала! Шухăшласа ăнран кайрăм. Смолин умĕнче намăс.

Энтип. Эпĕ ăна пĕлмест пуль тесе.

Соколов. Тахăшĕ ăна кунта килес умĕн каласа кăтартнă... Çавăнпа та-и, тен, юлма шут тытрĕ. Кĕтет пулĕ, каям-ха.

Каять. Энтип витене кĕрсе çухалать. Çуллахи пĕлĕтлĕ çĕр çыв-харса çитет. Йĕри-тавра никам та курăнмасть. Колхоз вити карта-шĕнче пĕр çутнă хунар кăна сулкаланса тăни палăрать. Катара-катара комбайнпа тыр вырни илтĕнет, хушăран унăн прожекторĕ кассăн-кассăн тулă уйне çутатса илет.

Вите хыçĕнчен çын мĕлки курăнчĕ; малтанах вăл хăвăрт пĕр еннелле сулăнчĕ, унтан—тепĕр еннелле. Ку Эрхип пулчĕ-мĕн. Вăл, вите алăкĕ патне пырса, ут таврашне ывăтрĕ, унтан часах аяккалла кайса çухалчĕ.

Энтип сасси (*витерен*). Тоня! Тоня-а! Чумакĕпе кам ĕçленĕ паян?

Тоня сасси (*вите хыçĕнчен*). Ăна халь çеç Эрхип Миронч тăварса хăварчĕ пулас...

Энтип сасси. Халех чĕнсе кил ăна.

Тоня (*витерен хунарпа çутатса тухать*). Эрхип! Сире Энтип Кирилч чĕнет...

Эрхип, каялла таврăнса, витене кĕрсе каять.

Энтип сасси (*витерен*). Мĕне пĕлтерет ку?

Эрхип сасси. Нимех те мар-çке... Кăштах йĕнер-чĕк кăна тивнĕ пулас...

Энтип сасси. „Кăштах...“ Юн сăрхăниччен хăвна тивертесчĕ! Курмастăн-им?

Витерен тухаççĕ. Энтип аллинче çутнă хунар.

Çурçĕр çитичченех ăçта ярăнса çӳрерĕн вара?

Эрхип. Эй, курман-илтмен çын пек калаçатăн! Района уполномоченнăя леçме кайрăм-çке. Çула май кĕрӳ патне кĕрсе тухас терĕм...

Энтип. Кайса кала Соколова—ӳлĕмрен сана лаша памастăп.

Эрхип. Ай-уй! Эс председатель пекех калаçатăн-çке, Энтип.

Энтип. Лашасемшĕн эп председатель пулатăп та. (*Вите çумĕнчи плаката хунарпа çутатса.*) Вула! Лашапа çӳрес килет пулсан, ăна юратас пулать.

Тоня (*вите хыҫӗнчен*). Энтип Кирилч, хӑвӑртрах килӗр-ха кунта!

Эрхип. Кӑштах тӑхта-ха, Энтип. Ман санпа калаҫмалли пурччӗ...

Энтип аллипе сулчӗ те часах вите картине кӗрсе ҫухалчӗ. Эрхип те кайма тӑчӗ, анчах темшӗн шикленсе вите кукрине хӗсӗнчӗ, вӑрттӑн итлеме пуҫларӗ.

Тоня сасси. Куратӑр-и, Энтип Кирилч? Тарантас рессорне ватса килнӗ, хӳминче тулӑ пӗрчисем лӑках...

Эрхип (*шиклӗн, хӑй тӗллӗн*). Ниуштӑ миххи шӑтнӑ?!.

Энтип сасси. Чим, ӗнер вӑл комбайн патӗнчен тулӑ турттарнӑ ҫӗрте пулнӑ-и?

Тоня сасси. Пулнӑ, анчах вӑл никамран малтан таврӑнчӗ-ҫке... (*Пауза.*) Ниуштӑ Эрхип Миронч?

Энтип сасси. Кукӑри-макӑри унӑн пӗтмен пулас-ха... Района кайса килнӗ май, пытарса хунӑ тырра, тен, тепӗр ҫӗре куҫарнӑ пуль вӑл?.. Ахальтен тарантас пӗр-ик ҫын ларнӑшӑнах ванас ҫук. Лаши те шур кӑпӑка ӳкнӗ.

Эрхип. Пӗтерет ку мана...

Тоня сасси. Кайса Соколова систерес мар-и?

Энтип сасси. Ҫывӑракан ҫынна хускатас мар: ахаль те вӑл канӑҫлӑхне ҫухатнӑ. Ирпе систерӗпӗр.

Эрхип, шӑппӑн карта урлӑ каҫса, ҫӗр тӗттӗмӗнче курӑнми пулчӗ. Энтиппе Тоня, хунарӗсемпе ҫутатса, вите умне тухаҫҫӗ.

Энтип. Пулать-мӗн ҫын! Хӑйӗн тӑван килйышне ҫаратать...

Тоня. Хӑйӗннех тӗкӗнес ҫук-ха вӑл.

Энтип. Колхоз пирӗншӗн кам пултӑр тата? Пӗр килйыш пӗр шухӑшлӑ, килӗштерсе, тӗрӗс ӗҫлесе пымасан, колхоз пулсах ҫитес ҫук вӑл, хӗрӗм.

Катара автансем авӑтни илтӗнет.

Тоня. Энтип Кирилч, тул ҫутӑласси нумаях юлмарӗ, выртса канар пуль.

Энтип. Чумакне иода маҫӗпе сӗрмеллеччӗ.

Тоня. Сӗртӗм-ха.

Энтип. Апла пулсан, пӳрте кӗрсе выРт. Эпӗ кӑштах чӗлӗм туртам-ха.

Тоня. Паян манăн çулнă утă çинче çывăрас кăмăлăм пур. Çемçе... Тата шăрши мĕн тери!

Энтип (*чĕлĕмне тивертсе*). Мĕн каласси пур! Эпĕ хам та çамрăк чухне утă ăшне кĕрсе выртма юрататтăмччĕ.

Тоня (*пусма тăрăх вите çине улăхать*). Эсир, Энтип Кирилч, ывăнма та пĕлместĕр... Çамрăк чухне мĕнле пулнă пуль!

Энтип (*чĕлĕмне тивертсе*). Кирлĕ пулсан, халь те махă памастпăр-ха. (*Уялла пăхса.*) Çавах та хальхи çамрăксемпе тупăшаймăн! Ав, Сантăрпа Антоша кĕçĕр мĕн чухлĕ тырă вырчĕç пуль... Кĕрлеттереççĕ те кĕрлеттереççĕ. Вăт пурнăç çитрĕ! Ĕлĕк ĕçе тарăхса тăваттăмăрччĕ, халь юрласа кăна ĕçле... Машинне те вара Андрей Иванович Смолинах илсе килчĕ... Туслашсах кайрăмăр вĕт! Миккита пекех халăхшăн тăрăшакан çын... Эх, Миккита, Миккита, сыхланаймарăн, пуçна çирĕç... (*Вите çинелле пăхса.*) Çывăрса кайрĕ пулас ман хĕр... Лайăх кин пулмалла пек те-ха...

Чĕлĕмне мăкăрлантарса вите алăк патнелле утрĕ, анчах çавăнтах такăнса кайрĕ.

Эккей, ут таврашне те çаплипех пăрахса хăварнă-мĕн... Тилхепи те кунтах тăсăлса выртать... (*Сапаланса выртакан ут таврашĕсене пĕр çĕре пуçтарса, витене кĕртсе хурать.*)

Лаша кĕçенни илтĕнет.

Шăварма вăхăчĕ çитсе те килет пуль... (*Кĕсйинчен сехетне кăларса, итлесе пăхать.*) Ак тата! Сехечĕ ман çÿреми пулнă-мĕн... Пÿртри тĕрĕс çÿрекенччĕ, кайса тĕрĕслес-ха.

Каять. Çутнă хунарĕ вите алăкĕ умĕнчех ларса юлать, пĕр вăхăт, автансем авăтнисĕр пуçне, нимĕнле сас-чĕв те илтĕнмест.

Эрхип (*карта урлă йăпшăнса каçать, вите алăкĕ умне пырса, çутнă хунара ярса тытать.*) Вутне хăй тĕртнĕ, тейĕç.. Куншăн ачашламĕç... Ун чух кам ĕнентĕр-ха ăна!

Пусмапа хăвăрт вите çине улăхса, алăкне тул енчен çаклатать, унтан йăпăрт анса, витене чупса кĕрсе çухалать. Вăхăт нумаях та иртмерĕ, Энтип икĕ витре шыв çĕклесе килни курăнчĕ. Витене кĕрес умĕн вăл, витресене çĕре лартса, алăка уçма тăчĕ, анчах

сасартăк ăна хирĕç Эрхип сиксе тухрĕ. Вĕсем иккĕшĕ те хире-хирĕç хыттăн çапăнаççĕ. Энтип кайса ӳкет; Эрхип, хăйне паллаттарас мар тесе, Энтип пит-куçне хăйĕн картузĕпе хупларĕ, çавăнтах темĕнле хытă япалапа пуçĕнчен çапса, тăнран ячĕ. Энтип пĕр сассăр тăсăлса ӳкрĕ. Çак вăхăтра пĕренесем хушшипе витере кăштах вут çулăмĕ палăрчĕ. Эрхип хыпаланса Энтипе уринчен ярса тытрĕ, сĕтĕрсе витене илсе кĕрсе пăрахрĕ, унтан хăвăрт каялла чупса тухса, вите алăкне тĕкĕлесе лартма хăтланчĕ, анчах васканипе ĕçĕ пулсах çитеймерĕ пулас, пĕкĕнсе карта çумĕпе тухса шăвăнчĕ. Вите алăкĕ умĕнче картузĕ выртса юлать.

Энтип (*витере пĕр хутчен вăйсăррăн йынăшни илтĕнет*). То-о-ня...

Сасартăк карта çумĕпе Эрхип хыпаланса каялла чупса кĕрет, вăл пĕшкĕнсе картузне шырать пулас; тупса, карта урлă сикме тăчĕ, анчах çак вăхăтра вите алăкне яр уçса пăрахса, тайкаланса Энтип тухса тăрать, аллинчи тилхепинеункă туса, юлашки вăйĕпе Эрхип çине ывăтать, Эрхип явăнса ларать.

Энтип (*пĕтĕм вăйĕпе тилхепине туртса*). То-о-ня!.. То-ня... Халăх!

Эрхип (*пăвăнса ларнă вĕренрен вĕçерĕнме хăтланса*). М-м-м... Мĕн... хăтланатăн, Энтип... Ют çын мар-çке... Пулăшма килнĕ çынна...

Тоня, сасартăк вăранса, алăка хыттăн силлеме пуçлать, тул енчен питĕрсе лартнине туйса, пĕр хăмине тапса сирпĕтет, çавăнтах хĕсĕнсе тухса, Эрхип пуçĕ çине сикет.

Энтип. Тытса чар çакна...

Тоня. Вилсен те вĕçертместĕп!

Энтип, шертешнике ярса тытса, чугун лаптакне танлаттарса илет те, шыв витрине йăтса, витене кĕрсе каять. Тоня, Эрхипĕн майĕ тавра явăнтарнă тилхепине татах та темиçе хут çавăрса, ал-урисене çыхать.

Тоня. Вырăнтан тапраннă пултăр—сенĕкпе чиксе пăрахатăп!

Чанне пĕр-ик хутчен çапса илет те витене чупса кĕрсе каять.

Энтип сасси. Ну-ну!.. Ну!.. Марат!.. Бирюк! Жемчуг!.. Орел... Ну-ну!.. Хыçалти алăксене уçнă... Тихине, тихине çĕклесе тух!..

Тоня сасси. Сивка!.. Ну!.. Энтип Кирилч, пиншакна вут хыпса илчĕ!.. Асту!

Витере лашасем кĕçенни тата тăпăртатни илтĕнет. Вут çулăмĕ пĕрре çухалнă пек, тепре çĕнĕрен ялкăшса илет.

Ялтан пӗрин хыҫҫӑн тепри Митрухха, Матви, Наҫтук, Сӑпани чупса килеҫҫӗ. Хӑшӗ-пӗрисем витресемпе шыв ҫӗкленӗ. Митруххапа Матви огнетушитель йӑтнӑ. Витене кӗрсе каяс умӗн Матви такӑнса каять.

Матви. Кам ку? (*Ҫыхса пӑрахнӑ Эрхипе месерле ҫавӑрса пӑхать.*) Эсӗ-и? Кунашкалнех кӗтменччӗ... Наҫтук, ан тарт ӑна!

Витене чупса кӗрсе каять. Эрхип каллех ӳппӗн ҫаврӑнса выртать.

Наҫтук. Ых, Ахмар хӑраххи! Иксӗрӗн те пӗр шухӑш пулнӑ-мӗн...

Витери сасӑсем. Кайӑр, кайӑр унтан!

— Энтипе ҫӑлӑр! Энтипе...

— Пиншакне хывса пӑрахӑр!

— Улӑмне сӳнтерӗр!

Соколовпа Смолин чупса ҫитеҫҫӗ. Смолин, чарӑнса тӑмасӑр, витене кӗрсе каять.

Соколов (*Наҫтука асӑрхаса*). Кам ӗҫӗ ку?

Наҫтук. Курмастӑн-им?

Соколов (*ҫыхса пӑрахнӑ Эрхипе месерле ҫавӑрса*). Хура ҫӗлен!

Часах витерен халӑхпа пӗрле Смолин Энтипе ҫӗклесе тухать. Энтипӗн кӗпипе шӑлаварӗ вырӑнӗ-вырӑнӗпе ҫунса шӑтнӑ, хӑй вӑйран кайнӑ. Сантӑрпа Антоша чупса ҫитеҫҫӗ.

Смолин. Халех кунта машина илсе килӗр!

ЧАРШАВ

# ЭПИЛОГ

Ялăн пĕр вĕçĕнчен пуçласа тепĕр вĕçне çитичченех пуртă сасси илтĕнет. Уй хапхи витĕр Наçтукпа Сăпани тухаççĕ.

Сăпани. Ах тур, пирĕн Энтип вилсе каймарĕ пуль-çке? Паян иртенпех лаша вити патĕнче хăма çапнă сасă янăрать...

Наçтук. Ан пуплеччĕ кирлĕ мара... Сывалма пуçланă терĕç-çке.

Сăпани. Вилсен хăйне лаша вити картишнех пытарма хушнă, тет.

Наçтук. Ан тĕлĕнтерех!

Тухса каяççĕ. Матвипе Митрухха уй хапхинчен тухаççĕ.

Матви. Чăтса тăраймарĕ. Больницăран — тӳрех лаша витине...

Митрухха. Чĕрĕ-и е виллине турттарса килнĕ-и?

Матви. Илтместĕн-им? Каяр, Андрей Иванович Смолин та ăсатма килнĕ курăнать.

Соколов, Смолин, Ульяна, Кокшаев уй хапхинчен тухаççĕ.

Смолин. Сирĕн енчен пурте хатĕр-и, Соколов юлташ?

Соколов. Мухтавлă ăсатасшăн та-ха!

Ульяна. Чаплă ăсатас пулать, Петр Васильевич. Ĕмĕр асăнмалăх пултăр.

Кокшаев. Тĕрĕс, Ульяна Васильевна, çынна хисеплени кирлĕ.

Сантăрпа Володя амăшĕпе пĕрле иртсе пыраççĕ. Анюк шупăр аркипе куççульне шăлса типĕтет.

Володя. Ан кӳрен, анне. Ак, курăпăр-çке...

Чаршав уçăлать.
Лаша вити урлă кĕрхи хĕвел ăшшăн пăхать. Энтип тăрмашсах çĕмĕрнĕ вите алăкне çĕнĕ хăмасем çапса юсать. Хитре шурă кĕпе çийĕн вараланасран саппун çакса янă.
Наçтукпа Сăпани килсе тухаççĕ.

Сăпани. Ай турах, Энтип сывалса таврăннă-çке?! Кам, тетĕп, иртенпех шаккать, тетĕп.

Энтип. Ватма ăс кирлĕ мар... Тоня, илсе кил-ха тепĕр хăмине.

Наçтук (*алă парса*). Тем пекех апла, сывлăху юсанчĕ пулсан.

Энтип. Вилме шухăшламастăп-ха, Наçтук. Вутра çуннă хыççăн санăн хулăн тирӳ тата ытларах çирĕпленчĕ, терĕ тухтăр.

Наçтукпа Сăпани. Вутра та çунмарăн та, пурăнатăнах ĕнтĕ!

Тоня савалană хăмасем çĕклесе кĕрет. Наçтукпа Сăпани Энтипс ĕçре пулăшаççĕ.

Энтип (*пысăк пăта çапса*). Çирĕпрех пултăр-ха, ӳлĕмрен хăйпăтмалла ан пултăр...

Тоня. „Жемчугне" паçăрах кӳлсе тăратрăм. Ăçта каясшăн эсир, Энтип Кириллович?

Энтип. Шăнкăравĕсене çакрăн-и?

Тоня. Шăнкăравĕсене те çакмаллаччĕ-и?

Наçтукпа Сăпани. Эй, пĕлмен пек, ыйтса тăратăн тата! Кайса çак хăвăртрах; тен, Сантăрпа çырăнма лартса ярать...

Тоня. Ан кулăр-ха... (*Вăтанса чупса тухса каять.*)

Наçтукпа Сăпани. Мĕн кулмалли пур унта, кĕр çитрĕ вĕт!

Анюк (*ывăлĕсемпе килсе çитет*). Кил тĕлне манса кайрăн пулать? Эх, Энтип...

Сантăрпа Володя. Сывалса килнĕ ятпа, атте!

Энтип (*пуртине хурса арăмĕпе ачисене ыталать*). Ну, юрĕ-çке, Анюк... Таврăнтăм... Çитет...

Анюк (*Энтип çине пăхса шалт тĕлĕнет*). Ара, санăн пĕтĕмпех вĕр-çĕнĕ-çке, Энтип? Кĕпи те... Шăлаварĕ те... Атти те!..

Энтип (*карта çинчен илсе*). Ак тата пиншакĕ те...

Анюк, Сăпани, Настук. Чăнах-çке!

Энтип. Шлепкине те парасшăнччĕ—илмерĕм.

Сантăрпа Володя. Ну-ка, тăхăнса кăтарт, атте! *(Саппунне салтса илеççĕ.)*

Энтип (*пиншакне тăхăнса*). Ку вăл парне, Анюк! Андрей Иванович Смолин пачĕ. Районтавком çапла йышăннă, тет. Ĕнер, больницăран тухсан, Смолин кабинетне çавăтсах илсе кĕрсе кайрĕç...

Анюк. Ара, эс больницăран ĕнерех тухнă-çке апла. Ăçта çӳрерĕн ку таранччен?

Энтип. У-у-у, пĕтĕмпех каласа пĕтерейместĕн, арăм...

Анюк. Капла сана пуçлăха лартмаççĕ пуль-çке, Энтип?

Энтип. Унтан та хăрушăрах...

Настук, Сăпани. Ак тата! Ан пытарса тăр, Энтип, кала хăвăртрах, ăçта яраççĕ сана капла?

Энтип. Ямаççĕ—чĕнеççĕ!

Анюк, Настук, Сăпани. Ăçта? Шупашкара-и?

Энтип. Шупашкара кăна-и!

Анюк. Ан хăратса тăр! Ăçта илсе каяççĕ сана, Энтип?

Энтип. Мускава, Анюк!

Анюк, Настук, Сăпани. Мускава?! Ай-уй! Ан тĕлĕнтер!

Володя, Сантăр. Чăнах-и, атте?

Смолин (*Соколов, Ульяна, Кокшаев, Матви, Митрухха килсе çитеççĕ. Пурне те алă парса*). Чăнах, чăнах! Энтип паян Мускава каять. Колхозниксен пĕтĕм Союзри аслă пухăвне. Съезда каять.

Анюк. Мĕнле апла, киле кĕрсе тухмасăрах... Ĕмĕрлĕхех-и, Улька? (*Йĕрет.*)

Ульяна (*Анюка ыталаса*). Ан хурлан, Анюк инке. Тепĕр пĕр-ик эрнерен таврăнатех вăл.

Соколов. Ун чух пĕтĕм колхозĕпех кĕтсе илĕпĕр ăна. Ку савăнăç, Анюк!

Смолин. Ну, Энтип Кириллович, васкас пулать. Пуху пуçланичченултă кун маларах çитме хушнă. Станцине леçме машинне хамăнне паратăп.

Энтип. Чăрманма кирлĕ мар, Андрей Иванч. Манăн хамăнах пур... Тоня! „Жемчугне" урама илсе тух...

Тоня сасси (*вите хыçĕнчен*). Халех, Энтип Кириллович.

Шăнкăрав сасси илтĕнет.

Кокшаев (*шалт хытса*). Энтип Кириллович, тĕлĕнтеретĕр мана! Мускава çитичченех хăвăн лашупа каясшăн-им эсир? Миçе çухрăм кунтан?

Соколов. Пилĕкçĕр ытлашшипех ĕнтĕ.

Энтип. Каçарăр, Георгий Михайлович, Мускава эпĕ хамăн „Жемчугпах" пырса кĕресшĕн. Лайăх чуптарсан, поездран каях юлас çук, сирĕнне, тен, хăваласа иртсе те кайĕ.

Кулаççĕ.

Тепĕр тесен, „Жемчуг" çинче уçă сывлăшра ларса пырса, хамăн куçпа тĕнчене курас килет...
(*Смолинпа Соколова.*) Тата астăватăр-и, „Жемчуг" майли çуралнă кун мĕнле сăмах патăмăр? Халăх та кăна пухура ырланăччĕ... Сăмаха усăсăр вылятни аван мар...

Ульяна. Тĕрĕс, Энтип Кириллович.

Смолин. Ку сăмаха эпĕ хам та асрах тытатăп.

Соколов. Ворошиловĕ съездра пулатех ĕнтĕ.

Матви, Митрухха, Наçтук, Сăпани. Энтип, эсĕ ăна хăйне килкартине кĕртсех пар.

Володя. Çапах та, атте, эсĕ малтан ыйтса пĕл, мĕнле тусан аванрах пулĕ-ши? Ман шутпа, съезда пухăннă делегатсем умĕнче парнелесен, тем пекехчĕ...

Матви. Ку ĕнтĕ пирĕн пĕтĕм халăх шухăшĕ. Анчахăйăрне парнеленĕ чух мĕн калăн-ши, Энтип? Тен, Андрей Иванович, ăна çырса паратăр? Как-никак, такăнса ӳкесрен шанчăклăрах пулĕ...

Энтип. Хам пĕлнĕ пек каланăшăнах айăпламаççĕ пуль те, Андрей Иванович?

Смолин, Ульяна, Кокшаев чунтан кулаççĕ.

Смолин. Чĕре мĕнле хушать, çавнашкал кала. Халăхран пĕр пытармасăр. Чунтан. Куншăн сана никам та айăпламĕ. Мĕнле, Матвей Ильич, шанăпăр-и ăна?

Матви, Митрухха. Çавах та халăх шухăшне уççăнтарах каласа пани авантарах пулнă пулĕччĕ, Энтип. Ху мĕнле шухăшлатăн?

Энтип (*пĕр-ик утăм малалла утса, тарăн шухăша каять*). Чăнах та, мĕн калăп-ши эп сире, хисеплĕ пуçлăхсем, пирĕн хаклă та шанчăклă тусăм, Климент Ефремович! Ак сире пирĕн ялйышран чунтан-чĕререн юратса халалланă колхоз парни, пирĕн

ытарайми „Жемчуг". Турă тĕс... Кăçал кĕркунне шăп икĕ çул та икĕ уйăх тултарчĕ... Йăхĕ ĕнтĕ чăн-чăн хамăр йăхах! Мускава хăех чупса çитрĕ... Чĕрчун тени хăйне хисепленине юрататъ... Пирĕн „Жемчуга" та юратса пăхма пĕлни кирлĕ... Ак кӳлмелли çăмăл урапине те сирех парнелесшĕн... „Жемчуга" çăмăлтарах пултăр тесен, урапи кустăрмисене лайăхрах сĕрес пулать... Тен, вăхăт пулсан, „Жемчугпа" пирĕн пата та пырса куратăр... Хăвăр пыраймасан та, помощниксем пырса курĕç... Мĕнле пурăнатпăр, мĕн çитмест, унта хăвăр куçпах курăр... Пĕр пытармасăр каласан, çитменлĕхĕсем нумай-ха...

Анюк. Эх, хирĕçесси, сан халь те пĕтмест-çке! Кăлтăкне шырасах тăратăн. Мĕн çитменнине сансăрах курĕç... Пурнăçĕ аптрамасть-ха, пырать пĕр майлă. Аслă ывăлна тракторпа комбайн çине лартрĕç. Кĕçĕннине тухтăра вĕрентсе кăларчĕç. Тĕттĕм çуртна элекрицă кĕртсе çутатрĕç... Тата мĕн çитмест сана? Пĕрмай чакалатăн... Унта намăс курса пĕтĕн тата.

Ульяна. Ан пӳл-ха, Анюк аппа, вăл ытлашши нимех те каламарĕ-çке.

Смолин. Райĕçтăвком председателĕ ырлать, тейĕпĕр... Эсир мĕнле шухăшлатăр, Георгий Михайлович?

Кокшаев. Ытлашши хурламаллиех çук пек... Çавах та, тĕсĕпе йăхĕ çинчен калама кирлĕ-ши? Тем, ку сăмахсем килĕшмен пек туйăнаççĕ...

Энтип. Мĕнле „килĕшмен пек"? Эккей, пĕлмен пек калаçатăр. Мĕнле вăл пурнăç йăхсăр пултăр-ха? Санăн ратнӳ çук-и вара? Пурнăçра тĕсне пĕлни те кирлĕ... Çапла çав, Георгий Михайлович! Вăт-вăт!

Смолин. Çапла-тăк, çулу телейлĕ пултăр, Энтип!

Энтип. Чăнах, манăн васкамалла.

Соколов, Ульяна. Чипер кайса килмелле пултăр.

Митрухха, Сăпани, Наçтук. Тĕп хулана пирĕнтен салам калама ан ман, Энтип.

Володя. Ну, атте, ларса калаçаймарăмăр... Манăн ĕçсем лайăх пыраççĕ, атте.

Энтип. Маттур, ывăлăм. Ан ятла...

Володя. Э-э, эпĕ ăна тахçанах маннă, атте... (*Ыталаса чуптăвать.*)

Энтип. Тоня! Мĕнле унта?

Тоня (*чупса кĕрет. Калама çук чипер тумлан-*

*нă. Кăкăр тулли тенкĕ, тем тĕрлĕ лентăсем çакнă, пурçăн тутăр çыхнă*). Эпир хатĕр. Энтип Кирилч!

Сантăр (*Тоньăна алăран тытса ашшĕ умне пырса тăрать*). Атте! Эпир кĕр çитессе кăна кĕтнĕччĕ...

Энтип. Юрĕ, юрĕ... Курăпăр. Мĕн калĕç унта, Мускавра...

Майĕпен тухса каять. Ун хыççăн Смолин, Ульяна, Соколов, Володя тухаççĕ. Халăх карта çумне пырса тăрать. Часах шăнкăрав сасси янраса каять. Çак тин-тин-тин-тин-тин илемлĕ сасă инçете кайса çухаличченех халăх кăмăллăн алă сулать.

В Ĕ Ç Ĕ

*Шупашкар—Мускав, 1958*

РЖАНОВ ВАСИЛИЙ ТИМОФЕЕВИЧ

*Из дремучего леса*

**Оформление Л. Осинского**

На чувашском языке

Чувашгосиздат — 1958

Редактор **Г. А. Пласкин.** Технич. редактор **Р. И. Белова.**
Худож. редактор **М. А. Ильин.** Корректор **Р. И. Белова.**

НТ 03193. Сдано в набор 25|VII-1958 г. Подписано к печати 12-IX-1958 г.
Формат 84×108 1/32. Объем 4,71 печ. лис. и 3,14 уч.-изд. лис. Тираж 2 000 экз.
Изд. № 84а. Заказ 1882. Цена 95 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.

*г. Чебоксары, Володарского, 5.*

Цена 95 коп.